49-27

# ДИКТАНТ СБОРНИКĔ

## ПУÇЛАМĔШ ШКУЛ УЧИТЕЛĔСЕМ ВАЛЛИ ПОСОБИ

★

ЧĂВАШ АССР
ГОСУДАРСТВО ИЗДАТЕЛЬСТВИ
Шупашкар — 1949

# ДИКТАНТ СБОРНИКĔ

## ПУÇЛАМĔШ ШКУЛ
## УЧИТЕЛĔСЕМ ВАЛЛИ
## ПОСОБИ

*С. А. Угандеев пухса хатĕрленĕ*

ОБЯЗАТЕЛЬНЫЙ ЭКЗЕМПЛЯР
ДОСТАВЛЕН
Чувашской Книжной Палате
1 апреля 1949 г.
№ 60

ЧĂВАШ АССР ГОСУДАРСТВО ИЗДАТЕЛЬСТВИ
Шупашкар — 1949

# УЧИТЕЛЬСЕНЕ

Ачасене тӗрӗс ҫырма вӗрентме учителӗн ҫителӗклӗ материал пулмалла. Кирлӗ материала учитель „Диктант сборникӗнчен“ суйласа илет те класра тӗрлӗрен хӑнӑхтарусем тӑвать. Ҫавӑн пек хӑнӑхтарусемпе вӗренекенсем тӗрӗс ҫырма вӗренеҫҫӗ тата ку тӗлӗшпе вӗреннине ҫирӗплетеҫҫӗ. Ҫапла ӗнтӗ, „Диктант сборникӗ“ чӑваш чӗлхи учебникӗсем ҫумне хушса панӑ материал пулса тӑрать.

Сборнике ҫакӑн йышши диктантсем кӗреҫҫӗ:

1. **Асӑрхаттаруллӑ диктант.** Асӑрхаттаруллӑ диктант шкулта кирлӗрен те кирлӗ диктант, ҫавӑнпа та асӑрхаттаруллӑ диктант ирттермелли материала „Сборнике“ ытти тӗслӗ диктантсенчен нумайрах кӗртнӗ. Асӑрхаттаруллӑ диктант ҫапла иртет. Вӗренекенсем йӑнӑш ан тӑвччӑр тесе, ҫырма йывӑр сӑмахсене ҫыртарас умӗн учитель вӗсене вӗренекенсемпе пӗрле пӑхса тухать. Йывӑр сӑмахсене кӗҫӗн классенче пӗр тӗслӗ, аслӑ классенче тепӗр тӗслӗ пӑхса тухаҫҫӗ. Кӗҫӗн классенче ачасен грамматика пӗлӗвӗсем пысӑках мар, ҫавӑнпа та сӑмахсене мӗнле ҫырассине вӗренекенсене час-часах учитель хӑй кӑтартса парать, сӑмахсене сыпӑксем тата сасӑсем ҫине те пайлаттарать. Аслӑ классенче ҫырнӑ чухне йӑнӑш тӑвассинчен сыхлантарасси грамматика пӗлӗвӗсемпе ҫыхӑнса тӑрать.

2. **Пӑхса ҫырмалли (зрительнӑй) диктант.** Пӑхса ҫырмалли диктант материалне учитель доска ҫине ҫырать, кирлӗ сӑмахсене тата саспаллисене ыттисенчен тӗрлӗ майсемпе уйӑммӑн кӑтартать (айӗнчен туртать, урӑх тӗслӗ пурпа е ыттисенчен шултӑрарах ҫырать).

Хӑш чухне пӑхса ҫырмалли диктант текстӗнче сӑмаха кирлӗ формӑрах ҫырса паман. Вӗренекенсем ыйтусем ҫине ответленӗ май тин сӑмахсене кирлӗ формӑра лартса пыраҫҫӗ. Тӗслӗхрен: *Кашкӑр ӑҫта уланӑ?* (ҫывӑхри вӑрман). Вӗренекенсен отвечӗ ҫакӑн пек форма йышӑнать: *Кашкӑр ҫывӑхри вӑрманта уланӑ.*

Доска ҫине ҫырса панӑ текста класӗпе пӑхса тухаҫҫӗ, сӳтсе яваҫҫӗ. Кайран вӗренекенсем ҫырма тытӑнаҫҫӗ. Текста ҫырма пуҫличчен вӗренекенсене сӑмаха мӗнле ҫырнине лайӑх пӑхса илме хушмалла, вара вӗсем, кашни саспалли ҫине пӑхмасӑрах, пӗрер сӑмахӑн е темиҫешер сӑмахӑн ҫырса илме хӑнӑхаҫҫӗ.

Сӑмаха мӗнле саспаллисем кӗнине вӗренекенсене асӑрхаса юлма вӗрентме учитель хутран-ситрен ҫак майпа та усӑ курать: доска ҫинчи сӑмаха хуратиччен ӑна мӗнле ҫырнине вӗренекен-

сене лайăх тинкерсе пăхса юлма хушать. Кайран учитель сăмаха доска çинчен хуратать те, вĕренекенсен сăмаха пăхмасăрах çырмалла пулать.

Каярахпа вĕренекенсене доска çинчи предложение пĕтĕмпех пăхса асăрхаса юлма хăнăхтармалла. Ун чухне учитель доска çинчен уйрăм сăмаха кăна мар, предложение пĕтĕмпех хуратать (малтан ачасемпе предложение пур енчен те пăхса тухаççĕ, ачасем ăна мĕнле çырмаллине çирĕппĕн астуса юлаççĕ).

Вĕренекенсем тĕрĕс çырнине тĕрĕслеме лайăх пултăр тесен, доска çинчи текста хуратмалла мар, хутпа е хаçатпа хупласа хумалла, кайран, çырса пĕтерсен, уçмалла, вĕренекенсем хăйсем çырнине текстпа танлаштарса тĕрĕслеççĕ.

Пăхса çырмалли диктант çырнă чухне вĕренекенсем текста малтан кураççĕ, пăхса тухса, мĕнле çырмаллине ăнланаççĕ. Текста пăхса тухас ĕçе класри ачасем пурте хутшăнаççĕ.

Пăхса çырмалли диктант çыртармалли тĕслĕхсемпе паллашар.

1-мĕш тĕслĕх. Доска çине учитель *„Хĕрлĕ ялав“* сăмахсене çырать. Вĕренекенсене *„Ялав“* сăмаха нумайлă хисепре лартсан мĕнле пулассине ăнлантарать. Сўтсе-явнă хыççăн учитель доска çине *„Хĕрлĕ ялавсем“* тесе çырса хурать, *„сем“* аффикса мĕнле çырнине вĕренекенсене асăрхаттарма айĕнчен туртать. Çак диктантри ытти тĕслĕхсене те класĕпе пăхса тухнă хыççăн тин çырма пуçламалла.

2-мĕш тĕслĕх. Учитель доска çине предложенири икĕ сăмахран пĕрне çырса парать. Тепĕр сăмахне вĕренекенсен хăйсен тупса, килĕштерсе çырмалла. (—?) *çулаççĕ*. Текста пăхса тухнă хыççăн: *„Савапа çулаççĕ“* предложение тата çавăн пек предложенисене вĕренекенсем хăйсен тетрачĕсем çине çыраççĕ.

Хăш чухне вĕренекенсене ыйтусăрах, предложенин пĕр сăмахне çырса парса, тепĕр сăмахне туптарса çыртармалла. Тĕслĕхрен, *çерçи*—? Вĕренекенсем: *„Çерçи—вĕçен кайăк“* тесе çырмалла.

3-мĕш тĕслĕх. Доска çине сăмаха тĕп формăра çырса памалла та, вĕренекенсем ăна кирлĕ формăра лартса улăштараççĕ. *Юрă—юррăн, юрра* т. ыт. те.

Учителĕн итлесе çырмалли диктант кăна çыртармалла мар, вĕренекен ун чух илтĕннĕ пек анчах çырать. Вĕренекенсене пăхса çырмалли диктантсем ытларах çыртарма тăрăшмалла. Вĕренекенсем хăйсем çырнине доска çинчи текстпа танлаштарса пăхчăр та иккĕленсе ан тăччăр. Тĕрĕслев диктанчĕ кирек хăçан та итлесе çырмалли диктант пулса тăрать.

3. Пăхса çырмалли тата итлесе çырмалли диктанта урăх майпа та иртерме пулать. Вĕсенчен суйласа çырмалли диктант тума пулать. Суйласа илсе çырмалли диктантра текстри предложенисене вĕренекенсем пĕтĕмĕшпе çырса илмеççĕ, уйрăм сăмаха е икĕ сăмаха суйласа илсе çыраççĕ. Кашни пăхса çырмалли диктантранах суйласа илсе çырмалли диктант тума пулать.

1-мĕш тĕслĕх. (Çемçе сăмахсене çыраси). Учитель пĕтĕм предложение вулать те, вĕренекенсем çемçе сăмахсене кăна суйласа çыраççĕ. *„Юман вăрманта ўсет“* предложенирен вĕренекенсем—*„ўсет“* сăмаха анчах çыраççĕ.

2-мĕш тĕслĕх. Учитель калать: *„Мĕне сĕлĕ параççĕ?“* — тет. Вĕренекенсем: *„Лашана сĕлĕ параççĕ“* тесе çыраççĕ т. ыт. те. Кĕртсе лартмалли сăмахсене, вĕренекенсем йăнăш ан туччăр тесе, учитель доска çине çырать.

Суйласа çырмалли диктант вĕренекенсене пĕр-пĕр орфографи правилине ытларах асăрхаттарать. Кунсăр пуçне, кĕскетсе çыртарни пĕр-пĕр орфографи правилипе вĕренекенсене материал ытларах çыртарма май парать. Çапла вара вăхăта ытларах перекетлеме пулать. Суйласа çырмалли диктант сăмахсем пĕр-пĕринпе çыхăнса тăнине пĕлме пулăшать, ку вĕренекенсене питĕ кирлĕ.

Суйласа çырмалли диктанта та малтан сӳтсе-явмалла, пăхса тухмалла.

**4. Творчески диктант.** Пĕр-пĕр орфографи правилине çирĕплетме çав правилăпа темиçе сăмах памалла. Çав сăмахсене вĕренекенсен хăйсен предложенийĕсене кĕртсе çырмалла. Тĕслĕхне класĕпе пăхса тухаççĕ, доска çине çырса хураççĕ, юлашкинчен вĕренекенсем ăна тетрадьсем çине çыраççĕ. Сăмахсене группăсем тата темăсем тăрăх параççĕ. Творчески диктанта мĕнле ирттермеллине кĕскен çак примерпа кăтартса паратпăр.

1-мĕш тĕслĕх. Учитель „Сборникри“ сăмахсене ушкăнăн-ушкăнăн пăхса тухать те (кашни темăпа уйрăм) пĕр-пĕр класс валли юрăхлисене суйласа илет. Тĕслĕхрен, вăл çак сăмахсем çинче чарăнать: *юсаççĕ, тасатаççĕ, хатĕрлеççĕ, каяççĕ, тытăнаççĕ, сухалаççĕ, сӳрелеççĕ, акаççĕ, лартаççĕ, кăпăшлатаççĕ, шăвараççĕ, çумлаççĕ.* Учитель сăмахсене доска çине çырса хурать. Çак сăмахсемпе вĕренекенсене хăйсене предложенисем тутарать. Кашни сăмахĕпе пĕр предложени тăваççĕ. Предложенисене тутарнă чухне сăмахсен йĕркине улăштарма пулать. Предложенисене кура сăмахсен формине те улăштарма тивет. Вĕренекенсем хăйсем шухăшланă предложенисене калама тытăнаççĕ. Тĕслĕхрен, çакăн пек предложенисем пулма пултараççĕ: *Колхозниксем машинăсене юсаççĕ. Вĕсем çуртырри вăрлăхĕсене тасатаççĕ.*

Предложенисене пăхса тухнă хыççăн класс чи лайăх предложенисене суйласа илет.

Класс предложенисене улăштарма, урăх сăмахсем хушма тата предложенисене кĕскетме те пултарать.

Творчески диктант ирттернĕ чух учитель ку ĕçе класа пĕтĕмĕшпех явăçтарма тăрăшать.

III тата IV-мĕш классенче вĕренекенсем хăйсем предложенисем шухăшласа тупса çырма пултараççĕ, анчах та предложенийĕсем пăхса тухакан ыйтупа çыхăнса тăма кирлине учитель çавăнтах хăй тĕрĕслесе асăрхаттарса пырать.

Творчески диктанта вĕренекенсене тĕрĕс çырма вĕрентессипе, калаçу тата çыру чĕлхине аталантарассипе çыхăнтармалла.

**5. Ирĕклĕ диктант.** Сборнике ирĕклĕ диктант çырмалли материала III-мĕш тата IV-мĕш классен диктанчĕсен вĕçне кĕртнĕ. Ирĕклĕ диктантсене вĕренӳ çулĕ вĕçĕнче кăна ирттермелле мар.

Ирĕклĕ диктанта çак йĕркепе ирттермелле: 1) Учитель малтан статьян текстне пĕтĕмĕшпе вулать. Вĕренекенсем статьяна мĕн чухлĕ ăнланса илнине пĕлме статьяна вуласа тухнă хыççăн учитель ыйтусем парать. 2) Унтан учитель статьяна пайăн-пайăн (предложенин-предложенин кăна мар) вулать.

Учитель вуласа панă пайĕн содержанине вĕренекенсем ăнланса юлма тăрăшмалла, сăмахсене, предложенисене кĕнекери пекех çырмасан та юрать. Уйрăммăн илсе вуланă пайĕн содержанине хăшĕ пĕр предложенипе, хăшĕ икĕ предложенипе е ытларахпа çырса параççĕ. Ачасем текста кĕнеке çинчи пекех çырса ан паччăр тесе, учитель статьян пайне пĕрер хут анчах вулать. Ун çинчен учитель вĕренекенсене малтанах пĕлтерет. Пайăн-пайăн вуламаллине „Сборникре" абзацсемпе кăтартса панă. Ку абзацсен пысăкăшне учитель урăхлатма та пултарать.

3) Диктанта çыртарса пĕтерсессĕн, учитель ĕçсене пуçтарать те килте тĕрĕслет. 4) Тĕрĕсленĕ хыççăн учитель хăшпĕр ĕçсене содержани, орфографи, пунктуаци тата стилистика енчен класра пăхса тухать.

Ирĕклĕ диктант текстĕнче тĕрĕс çырас тĕлĕшпе халиччен паллашман сăмахсем тĕл пулма пултараççĕ; ун пек сăмахсене учитель доска çине çырса парать. Орфографи йăнăшĕсене тăвасран вĕренекенсене яланах сыхлантармалла.

6. **Тĕрĕслев диктанчĕ.** Тĕрĕслев диктантне тăтăшах ирттермелле мар, ăна пĕр-пĕр орфографи уйрăмне вĕренсе пĕтернĕ хыççăн çеç ирттермелле. Диктантсен пысăкăшĕ классем тăрăх çакăн шайлă пулать: I-мĕш класра—18—20 сăмах, II-мĕш класра—40—45 сăмах, III-мĕш класра—60—65 сăмах, IV-мĕш класра—85—90 сăмах таран.

Диктант тексчĕ çыхăнуллă пулсан, текста çыртарма пуçличчен учитель ăна пĕтĕмĕшпе вуласа парать те унăн содержанийĕ тăрăх пĕр ик-виçĕ ыйту парать, вĕренекенсем мĕн çинчен çырассине ăнланса илнине пĕлет. Унтан текста предложенин-предложенин вулать, предложенийĕсем ытла пысăк пулсан, вĕсене пайласа вуламалла, анчах та малтан предложение пĕтĕмĕшпе вуласа тухмалла. Вĕренекенсене предложение пĕр хут е икĕ хут вуланă хыççăнах пĕтĕмпе астуса юлма хăнăхтармалла: текста темиçе хут вулани вĕренекенсен тинкерĕвне сапалать. Диктанта çырса пĕтернĕ хыççăн вĕренекенсене ăна çĕнĕрен пăхса тухма вăхăт памалла.

Пысăкрах текстсем тăрăх асăрхаттаруллă диктант çыртарнă чухне икĕ диктант тусан та юрать.

**„Словарь" çинчен.** Диктантсен тексчĕсенчен пуçне сборникре хутран-ситрен „Словарь" тĕл пулать. „Словаре" пĕр-пĕр правилăпа тĕрĕс çырма вĕрентмелли сăмахсем кĕреççĕ. „Словарьпе" тĕрлĕ майпа усă курма пулать:

1) Учитель „Словарьтен" творчески диктант ирттерме сăмахсем суйласа илет. 2) „Словарь" тăрăх стена çине çакмалли орфографи таблицисем тума пулать. 3) „Словарьти" материала илсе, асăрхаттаруллă диктант çыртарма пулать.

Кăтартнă диктантсем валли материал çыхăнуллă текстпа та,

уйрӑм предложенисемпе те панӑ. Пӗр-пӗр орфографи правилине лайӑхрах тинкерттерме уйрӑм предложенисем пани те вырӑнлӑ. Вӗреннӗ правилӑпа тӗрӗс ҫырма хӑнӑхтарма уйрӑм предложенисене кирлӗ материала уйрӑм предложенисенче тупма ҫӑмӑлтарах, ҫыхӑнуллӑ текстра тӗрӗс ҫыртармалли правило валли тӗслӗхсем хӑшпӗр чухне пулмаҫҫӗ те.

Уйрӑм предложенисемсӗр пуҫне, „Сборникре" статьян-статьян панӑ текст та сахал мар.

Юлашкинчен диктант материалӗн пысӑкӑшӗ ҫинчен, ӑна урокӑн-урокӑн пайласси ҫинчен каламалла.

Диктанта пӗр урокра ирттерме тӑрӑшас пулать. Учителӗн материала пӗр урок хушшинче ҫырмалӑх суйласа илмелле. Диктант тексчӗн пысӑкӑшӗ ачасем мӗн чухлӗ хӑвӑрт ҫырма пултарнинчен килет. Диктант ҫыртарнӑ чухне грамматика е орфографи разборӗ валли вӑхӑт кирлине те шута илмелле. Диктант нихӑш класра та урокӗпех тӑсӑлмасть (I—II-мӗш классенче 20—25 минута, III—IV-мӗш классенче 25—35 минута тӑсӑлать).

Учителӗн „Сборник" тӑрӑх ҫыртарнӑ чух материала йӗркипех илсе пымалла мар, хӑй класӗн вӑйне кура суйласа илмелле.

Ку сборнике кӗрекен материалсенчен чылайӑшне вырӑсла кӗнекерен—проф. П. О. Афанасьевпа И. Н. Шапошников пуҫламӗш шкул учителӗсем валли пухса хатӗрленӗ „Диктант сборникӗнчен" илнӗ. Методикӑлла кӑтартусене те ҫавӑн тӑрӑхах ҫырнӑ.

Ку кӗнекепе мӗнле усӑ курни ҫинчен, вӑл грамматикӑна тата тӗрӗс ҫырма вӗрентнӗ чухне мӗнле пулӑшу пани ҫинчен, ҫавнашкалах кӗнекери ҫитменлӗхсем ҫинчен те Чӑваш АССР Государство Издательствине ҫырса пама ыйтатпӑр.

## § 1. Букварь тапхăрĕнче диктант, çыртармалли материал.

1. *Асăрхаттарни.* Малтанах каланипе çырни хушшинче уйрăм çук сăмахсене илмелле. Пуринчен ытла вăл чи малтанхи текстсенче кирлĕ. Пĕчĕккĕнех ачасене илтĕннĕ пек çырăнман сăмахсене те çырма вĕрентмелле.

Учитель предложениеваскамасăр, калаçнă пек вулать. Илĕпĕр: „Çырла пиçет" предложение. Кунта „Çырла" сăмахра „ç" хыççăн „и" илтĕнет, ăна çаплипех вуламалла та. Каласа çыртарнă чухне йăнăш ан пултăр тесен, учитель предложенири сăмахсене сыпăкăн-сыпăкăн пайлаттарса калаттарать. „Çыр-ла пи-çет". Ачасенчен „Çыр" сыпăкра „Ç" хыççăн мĕнле саспалли çырмалли çинчен ыйтать.

2. *Асăрхаттарни.* Кунта букварь тапхăрĕнче çыртармалли диктант материалне панă. Вăл разрезной азбукăри саспаллисенчен сăмахсем тутарассине пĕлтерет.

1. Çурт, пӳрт. Хĕл, лаша, çуна. Çăнăх, çу, сухан, çарăк, кăшман. Хăва, çăка, хурăн. Яшка, пăтă. Ată, сăхман, кĕрĕк. Шăна, сăпса. Хур, автан, чăхă. Тилĕ, упа. Тинĕс, хир, вăрман. Утă, улăм. Сурăх, сысна. Нина, Шура, Анна.

**Хур.** Хур шурă. Хур шывра ишет.

**Ача.** Ача ир тăрать. Ача шкула каять.

**Улай.** Улай мана алă пачĕ. Улай ăслă.

**Роза.** Роза урай шăлать. Роза ахаль лармасть.

2. Сĕтел, сак, пукан. Тăри, чăхă. Кашкăр, упа, тилĕ. Яшка, пăтă, турăх. Сăхман, кĕрĕк, кĕпе, çĕлĕк, алса. Йытă, кушак.

**Хĕл.** Ак çунашка. Урама тух. Çунашкапа ярăн.

**Çырма.** Ку пирĕн çырма. Ваня пулă тытать. Çупах лекрĕ, унтан шампа лекрĕ.

**Кампур.** Кампур вată. Унăн хăлхи илтмест.

**Хĕл.** Сивĕ хĕл çитрĕ. Вăрман çара. Хир шурă.

## § 2. Пысăк саспалли.

**Ударниксем.** Петĕр пичче ударник. Ман атте те ударник. Вĕсене премиӗ пачĕç.

**Килте.** Атте килте. Анне те килте. Атте хаçат вулать. Анне кĕнеке вулать. Эпĕ уроксем вĕренетĕп.

**Асатте патĕнче.** Асатте утарта пурăнать. Вăл пыл илчĕ. Пире пыл çитерчĕ. Пыл пит тутлă.

**Вăйă.** Эпир вăйă вылярăмăр. Тарас лаша пулчĕ. Эпĕ çын пултăм. Тарас чупать. Эпĕ тилхепе тытатăп.

**Тилĕ.** Чăхсем килте. Тилĕ вăрманта. Вăл ватă. Тилĕ аран утать.

**Хурсем.** Пысăк кӳлĕ. Хурсем шывра. Вĕсем какăлтатаççĕ. Хурсем шурă.

**Çулла.** Çулла шăрăх. Вăрман кашлать. Вĕçен кайăксем юрлаççĕ.

**Хĕлле.** Хĕл çитрĕ. Йывăç çулçисем тăкăннă. Хир шуралчĕ. Çырмари шыв шăнчĕ.

**Пăтă.** Мана анне кĕрпе пачĕ. Мана анне çу та пачĕ. Эпĕ пăтă пĕçертĕм.

**Макар** Макарăн аллисем хура. Макара супăнь пачĕç. Вăл аллине çурĕ. Макарăн алли таса.

**Пирĕн класс.** Пирĕн класс пысăк та çутă. Урай таса. Партăсем те таса. Класра ăшă.

**Тупмалли юмахсем.** 1. Сăмсасăр кăвакал пăр шăтарать. (*Тумла*). 2. Кĕпер урлă лăпсăр-лапсăр упа каçать. (*Утă лавĕ*). 3. Алăсăр-урасăр кĕпе тăхăнать. (*Тӳшек*).

### а) Ятсенчи пысăк саспалли.

В. И. Ленин, И. В. Сталин, В. М. Молотов, М. И. Калинин, Н. М. Шверник.

Ленин тата Сталин. Пирĕн Ленин. Пирĕн Сталин. Мухтав Ленина. Мухтав Сталина.

Шупашкар хули, Улатăр хули, Етĕрне хули, Çĕрпӳ хули, Канаш хули.

Пирĕн Совет Çарĕ. Эпир хамăрăн паттăр Совет Çарне юрататпăр. Совет Çарĕ, сыхă тăр!

**Ярăнма.** Петĕр, Миша, Ванюк, Макçăм, Мĕтри, Кĕркури, Нина, Улькка, Маня—пурте ярăнма тухăр.

**Ясли.** Пирĕн ясли пур. Унта Макар, Карук, Укçине, Маня, Ванюк, Тарье пынă.

**Килте.** Килте Ваня, Çемен пичче, Марье аппа, Тимкка шăллăм.

**Вăйă.** Анна, Ваççа, Петĕр, Кирук вылянă. Аннан пукане, Ваççан тетте, Петĕрĕн пăшал, Кирукăн пӳске.

**Кушакпа шăши.** Иван—кушак, Ваççа—шăши. Кушак шăшие кап! тытрĕ. Маттур та Иван!

### ă) Выльăхсен ячĕсенчи пысăк саспалли.

**Улайпа Хураçка.** Пирĕн Улай пур. Пирĕн Хураçка та пур. Хураçка Улая хăратнă. Хăравçă та иккен Улай.

**Кампурпа Хураçка.** Пирĕн Кампур ватă. Хураçка та ватă. Кампур сăнчăрта. Вăл кил сыхлать.

**Пирĕн таврара.** Ку пирĕн çырма. Вăл Кăкшăм ятлă. Леререх

Çавал шывĕ юхать. Инçех мар Шуркасси, Макаç ялĕсем пур. Лере Çĕрпӳ хули.

**Килте.** Анна аппа килте. Ванюк та килтех. Анна аппа кĕнеке вулать. Ванюк урок вĕренет. Кăмака çинче кушак выртать.

## § 3. Сăмахра *ь* саспалли çырасси.

### Сăмах вĕçĕнче *ь* çырасси.

**Мăкăнь.** Мăкăнь пахчара ӳсет. Мăкăнь чечекĕ кĕрен. Мăкăнь пахчана илем кӳрет.

**Кукăль.** Паян Октябрь уявĕ. Эпир ялавсемпе урама тухрăмăр. Анне кукăль пĕçерчĕ. Эпир каçхине кукăль çирĕмĕр.

**Супăнь.** Анне магазинтан супăнь илчĕ. Вăл супăньпе кĕпе çăвать. Ванюк супăньпе пит çăвать.

### Сăмах варринче *ь* çырасси.

**Коньки.** Ванюк валли ашшĕ коньки илчĕ. Ванюк конькипе ярăнма юрататать.

**Санькка.** Санькка шкула çӳрет. Санькка аван вĕренет. Вăл килте амăшне пулăшать.

**Колхоз.** Пирĕн колхозăн выльăх ферми пур. Фермăра выльăхсене аван пăхаççĕ. Выльăхсене ăшă витесенче усраççĕ. Выльăхсен айне улăм сарса параççĕ.

**Ваттисен сăмахĕсем.** Çын аллинчи кукăль пысăккăн туйăннă.

## § 4. Вырăс чĕлхинчеп кĕнĕ саспаллисене çырасси.

### а) *б* саспалли çырасси.

**Билет.** Манăн çулла Шупашкар хулине каймалла пулчĕ. Вăрнар станцине çитрĕмĕр. Атте кассăран икĕ билет илчĕ. Пирĕн багаж пысăк мар. Поезд çитрĕ. Эпир вагонта.

**Батрак.** Патша вăхăтĕнче батраксем нумай пулнă. Батраксем пуян çынсем патĕнче ĕçленĕ. Батрак ывăниччен ĕçленĕ. Ăна хуçи тăраниччен çитермен.

### ă) *г* саспалли çырасси.

**Пионер.** Ман пичче шкула çӳрет. Вăл тăваттăмĕш класра вĕренет. Вăл пионер. Унăн мăйĕнче хĕрлĕ галстук.

**Гимн.** Гимн—савăнăçлă юрă. Совет Союзĕн Гимнне кашни совет çынни юрлать. Гимна кашни класрах юрлаттараççĕ.

### б) *д* саспалли çырасси.

**Дежурнăй.** Паян класра Мĕтри дежурнăй. Дежурнăй класа ытти ачасенчен ир çитет. Перемена вăхăтĕнче дежурнăй класри йĕркене асăрхать. Класри доскана таса тытать.

**Дыня.** Çуркунне пахчана дыня акрăмăр. Дыньăна эпир шăвартăмăр, çумларăмăр. Кĕркунне шултăра та тутлă дыньăсем пулчĕç.

в) *ж* саспалли çырасси.

**Журнал.** Класа учитель журнал илсе пырать. Вăл журналти список çине отметкăсем лартать. Журнал çинче шкула хăш ача мĕнле çÿрени те паллă.

**Жнейка.** Ĕлĕк тырра çурлапа вырнă. Халĕ кашни колхозрах жнейкăсем пур. Жнейкăпа хăвăрт ĕçлеме пулать.

г) *з* саспалли çырасси.

**Звонок.** Урока ларма звонок параççĕ. Урокран тухма та звонок параççĕ. Кашни урок валли икшер звонок пулать.

**Завод.** Шупашкар хулинче фабрикăсем тата заводсем пур. Заводра рабочисем нумай. Вĕсем ăмăртса ĕçлеççĕ.

д) *ф* саспалли çырасси.

**Ферма.** Колхозра ĕне ферми пур. Фермăри ĕнесем валли утă илсе килчĕç. Ферма колхоза та, государствăна та тупăш парать.

**Форточка.** Эпир форточкăна уçрăмăр. Форточкăран уçă сывлăш кĕчĕ. Форточка патне çерçи пырса ларчĕ.

е) *ц* саспалли çырасси.

**Цирк.** Хулара цирк пур. Циркра темĕн те пĕр кăтартаççĕ. Цирка билетпа кĕртеççĕ. Камит кăтартмалли вырăнĕ циркăн варринче. Куракансем йĕри-тавра лараççĕ.

**Авиаци.** Пирĕн авиаци вăйлă. Авиаци тăшмансене парăнтарма пулăшрĕ. Авиаципе халĕ те нумай усă куратпăр. Авиаци почта çÿретет. Самолётсем çине çынсем ларса çÿреççĕ. Авиаципе тавар турттарас ĕçре те усă кураççĕ.

ж) *щ* саспалли çырасси.

**Ещĕк.** Класра ещĕксем пур. Ещĕксем çинче чечек калчисем ÿсеççĕ. Ещĕкри калчасене шăваратпăр. Ещĕксенчен калчасене пахчана кăларса лартатпăр.

з) *о* саспалли çырасси.

**Октябрьти революци.** Октябрьти революци пулчĕ. Пирĕн çĕршывра власть рабочисемпе хресченсен аллине куçрĕ. Совет влаçĕ çеç рабочисемпе хресченсене лайăх пурăнăç туса пачĕ.

## § 5. Хупă сасăсем тата саспаллисем.

**Пăхса çырмалли диктант.** Йывăç—йывăççем.

Пуç—? Пăрăç—? Хĕç—? Хутаç—? Çÿç—? Куç—? Лаç—? Çĕвĕç—?.

**Пăхса çырмалли диктант.** 1. Çывăх юлташ. Çывăх юлташсем. 2. Хĕрлĕ пилеш. —Хĕрлĕ... Хамăр хурăнташ. —Хамăр... Аста пулăç.—Аста...

**Словарь.** Совет. Хула совечӗ. Завод. Фабрика. Колхоз. Коммунист. Большевик. Комсомолец. Пионер. Октябрёнок. Коммунистсен партийӗ.

1. Советсем—пирӗн вӑй. 2. Ванюш—пионер. 3. Макар пичче—коммунист. 4. Ваҫҫа—комсомолец. 5. Женя—пионер.

Пионер комсомолец пулма хатӗрленет. Комсомолец коммунист пулма хатӗрленет.

**Пирӗн колхоз.** Кунта пирӗн колхоз. Унта пирӗн фабрика. Лере пирӗн завод.

**Тӑватпӑр.** Эпир фабрикӑсем тӑватпӑр. Эпир заводсем тӑватпӑр. Фабрикӑра пир тӗртетпӗр. Заводра машинӑсем тӑватпӑр.

**Аслӑ Октябрь.** Ялавсем вӗлкӗшеҫҫӗ. Ялав ҫинче ҫурлапа мӑлатук. Пионерсем утаҫҫӗ. Колхозниксем утаҫҫӗ. Рабочисем утаҫҫӗ.

***Словарь.*** Паровоз, самолёт, трактор, автомобиль.

1. Паровоз пӑс вӑйӗпе каять. 2. Самолёт вӗҫет. 3. Трактор—вӑй. 4. Трактор—хурҫӑ ут. 5. Пирӗн колхоз автомобиль туяннӑ.

***Словарь.*** Плуг, сӳре, ҫава, ҫурла, пуртӑ.

1. Плугпа сухалаҫҫӗ, сӳрепе сӳрелеҫҫӗ. 2. Ҫавапа ҫулаҫҫӗ. 3. Ҫурлапа выраҫҫӗ. 4 Пуртӑпа касаҫҫӗ. 5. Ҫурлапа мӑлатук—пирӗн герб.

***Словарь.*** Карандаш, ручка, чернил кӗленчи, тетрадь.

***Пӑхса ҫырмалли диктант.*** Самолёт — машина.

1. Ҫава ӗҫ—хатӗрӗ. 2. Карандаш—вӗренмелли япала. 3. Трактор—? 4. Плуг—? 5. Тетрадь—? 6. Автомобиль—? 7. Сӳре—? 8. Пуртӑ—? 9. Ҫурла—?.

***Пӑхса ҫырмалли диктант.*** Перопа ҫыраҫҫӗ.—? касаҫҫӗ—? тимӗре туптаҫҫӗ —? сухалаҫҫӗ.—? сӳрелеҫҫӗ.—? ҫулаҫҫӗ.

***Пӑхса ҫырмалли диктант.*** Сурӑх макӑрать.—? вӗрет—? ҫухӑрать—? кӗҫенет.

Лашан тихи,... пӑрушӗ,... путекӗ,... ҫури...

***Словарь.*** Упа, кашкӑр, мулкач, тилӗ, чӗрӗп.

1. Упа лапсӑркка. 2. Кашкӑр хаяр. 3. Мулкач хӑравҫӑ. 4. Тилӗ чее. 5. Чӗрӗп йӗплӗ. 6. Упа пыл юратать. 7. Лаша сӗлӗ ҫиет. 8 Мулкач купӑста ҫиет. 9. Тилӗ чӑхӑ тытать. 10. Чӗрӗп панулми юратать.

***Словарь.*** Автан, чӑхӑ, кӑвакал, ҫерҫи, шӑпчӑк, курак.

***Пӑхса ҫырмалли диктант.*** Автан авӑтать. Чӑхӑ—? Кӑвакал—? Ҫерҫи—? Шӑпчӑк—? Курак—?.

Кӑраклатать, нартлатать, юрлать, чӗвӗлтетет, кӑтиклет.

***Пӑхса ҫырмалли диктант.*** Тилӗ—тискер кайӑк. Кӑвакарчӑн—вӗҫен кайӑк. Кашкӑр—? Шӑнкӑрч—? Юс—? Ҫерҫи—? Тыркас—? Шӑпчӑк—? Уйӑп—?

## § 6. Пӗтӗмӗшпе аса илмелли ӗҫсем.

**Кӗр.** Хирсенчен тырӑсене пуҫтарчӗҫ. Хир пушанчӗ. Сивӗ ҫил вӗрет. Ҫумӑр ҫӑвать.

**Хӗл.** Шывсем шӑнчӗҫ. Хир шап-шурӑ. Урамсене кӗрт хыврӗ. Петӗр, атя ярӑнма.

**Тилӗ.** Тилӗ питӗ чее. Вӑл чӑхсене тытать. Тилӗ мулкача та тытать. Мулкач йӑкӑлт-йӑкӑлт сикет. Тилӗ ӑна кап! ярса илет.

**Мулкач.** Мулкач ҫулла кӑвак, хӗлле шурӑ пулать. Мулкач хӑравҫӑ.

**Пулла кайни.** Ваҫҫапа Микулай пулла кайнӑ. Акӑ Ҫавал шывӗ. Кӳр, Ваҫҫа, атмуна. Пулли питӗ нумай! Кунта шӑла, ҫӑрттан, уланкӑ.

**Пионер.** Эпир пионерсем. Якур, ҫап параппан! Пионер ыттисемшӗн пример.

**Майӑн пӗрремӗшӗ.** Ҫуркунне ҫитрӗ. Май уявне уявлатпӑр. Хӗвеллӗ те ӑшӑ кун. Таниле ялав ҫӗкленӗ. Валя параппанпа. Музыка калаҫҫӗ. Манмастӑп эп ҫак куна.

**Ҫуркунне.** Акӑ ӑшӑ ҫуркунне. Шӑпчӑксем юрлаҫҫӗ. Чӗрӗпсем чӑштӑртатаҫҫӗ. Хӑва кӑчӑкӑ кӑларать. Ӗнесемпе лашасем ҫерем ҫине тухнӑ.

**Ҫулла.** Ҫулла жнейка сасси илтӗнет. Трактор кӗрлет. Ачасем кӗлте ҫӗклеме пулӑшаҫҫӗ. Хӑшӗ пучах пуҫтараҫҫӗ.

**Ҫапӑҫу.** Кушакпа Улай тӗл пулчӗҫ. Тытӑнчӗҫ ҫапӑҫма. Вӗсене шыв ӑсса килекен аппа курчӗ. Вӑл йытӑпа кушака шывпа чаш! тутарчӗ. Кушакпа йытӑ иккӗшӗ икӗ енне тарчӗҫ.

**Вӑйӑ.** Елюкпа Виктор вылянӑ. Вӗсем пӳрт тунӑ. Пӳрчӗ пӗчӗккӗ. Унта пукане вырӑнаҫман. Елюкпа Виктор пӳрчӗн тӑррине сирнӗ. Пуканене пӳрте ҫӳлтен кӗртсе лартнӑ.

**Колхоз.** Ку пирӗн колхоз. Акӑ пирӗн уй. Акӑ пирӗн утар. Лере Ҫавал шывӗ.

**Ударниксем.** Кирукпа Верук заводра ӗҫлеҫҫӗ. Вӗсем яланах виҫӗ кунлӑх ӗҫе пӗр кунта туса пӗтереҫҫӗ. Вӗсем ударниксем.

**Анюк.** Анюк хурсем кӗтнӗ. Вӑл хурсене куҫран та вӗҫертмен. Анюк ҫӑхансене, хурчкасене хурсем ҫине тапӑнма паман.

**Тӑвайкки.** Хӗл ҫитрӗ. Ачасем юр купаларӗҫ. Тӑвайкки пулса тӑчӗ. Ачасем ҫунашкасемпе ярӑнаҫҫӗ.

**Ҫулла.** Иванпа Якур шыв хӗррине кайнӑ. Якур атмапа пулӑ сӗрнӗ. Атми шӑтӑк пулнӑ. Ҫӑрттан та, шӑла та тухса тарнӑ.

**Пирӗн ял.** Пирӗн ял Шуркасси. Пирӗн ҫырма Кӑкшӑм. Пирӗн колхоз „Хӗрлӗ Ҫӑлтӑр“ ятлӑ.

## § 1. Аса илмелли ĕçсем.

1. **Вырăс чĕлхинчен кĕнĕ сăмахсем.** Совет, ялсовечĕ, хула совечĕ, колхоз, завод, фабрика, коммунистсен партийĕ, коммунист, большевик, комсомолец, пионер.

**Машинăсем.** Самолёт, паровоз, трактор, автомобиль.

**Хатĕрсем.** Плуг, сӳре, çава, çурла, пуртă.

**Вĕренмелли япаласем.** Карандаш, тетрадь, перо, ручка, чернил кĕленчи.

**Килти выльăхсем.** Лаша, ĕне, сурăх, сысна, йытă, качака.

**Тискер кайăксем.** Тилĕ, кашкăр, упа.

**Вĕçен кайăксем.** Шăпчăк, çерçи, тăри, путене.

***Асăрхаттарни.*** Учитель малалла 2-мĕш пунктра кăтартса панă кашни ушкăнри япала ячĕсене доска çине çырса парать. Кашни ушкăнтан вĕренекенсене суйласа илсе çырма хушать. Тĕслĕхрен, малтан машинăсен ячĕсене, унтан хатĕрсен ячĕсене çырма калать.

2. **Хатĕрсемпе машинăсем.** Автомобиль, сӳре, çава, çурла, трактор, самолёт, пуртă, плуг, паровоз.

**Вĕренмелли япаласемпе вылямаллисем.** Перо, кăлтăрмач, карандаш, ручка, пукане, тетрадь, чернил кĕленчи.

**Килти выльăхсемпе тискер кайăксем.** Упа, кашкăр, ĕне, лаша, сысна, тилĕ, сурăх, качака, юс, йытă, арăслан, кушак.

**Алла вĕренмен вĕçен кайăксемпе килти вĕçен кайăксем.** Уйăп, чăхă, çерçи, кăвакал, улакурак, хур, шăпчăк, кăркка, кăсия, чакак, ăмăрткайăк, куккук.

3. **Кĕркунне.** Кĕркунне çитрĕ. Ăвăс çулçи тăкăнчĕ. Хурăнпа вĕрене çулçисем те тăкăнчĕç. Хырпа чăрăш çеç симĕс лараççĕ. Хĕл те инçе мар.

**Мулкач.** Ачасем мулкач тытнă. Вĕсем ăна купăста çитернĕ. Мулкач хĕлле шурă, çулла кăвак.

**Ирхине.** Кĕтӳç пушине шартлаттарать. Ĕнесем мĕкĕреççĕ, сурăхсем макăраççĕ. Петĕр пулла каять.

**Чĕрĕп.** Эпир вăрманпа пыратпăр. Курăк ăшĕнче темĕн чăштăртатрĕ. Вăл чĕрĕп иккен. Эпĕ ăна çĕлĕкпе хупласа тытрăм та киле илсе таврăнтăм.

**Пирĕн хула.** Пирĕн республикăн тĕп хули — Шупашкар. Вăл Атăл хĕрринче ларать. Атăл тăрăх пароходсем çӳреççĕ.

## § 2. Ыйтуллă тата кăшкăруллă предложенисем.

4. Ăçта кайрăн?—Вăрнара. Эсĕ ăçтисем?—Кушлавăшсем. Эсĕ мĕн ятлă?—Иван Миронович.

**Мулкач.** Петĕрпе Иван çулпа иртсе пынă. Сасартăк курăк ăшĕнчен мулкач сиксе тухать. Иван: „Тыт! тыт!" —тесе кăшкăрать. Петĕрĕ мулкач хыççăн чупать.

**Тупмалли юмахсем.** 1. Кам урасăр, хăй çӳрет? (*сехет*) 2. Мĕн тĕнчере икĕ хут çуралать? (*кайăк-кĕшĕк*). 3. Мĕне тăвар ярса пĕçерсен те каллех тăварпа çимелле? (*чăх çăмарти*). 4. Ăçта хĕлле ăшă, çулла сивĕ? (*нӳхреп*).

5. 1. Кам пуринчен аван ĕçлет?—Иккĕмĕш бригада. 2. Тĕп пултăр юлхавлăх! 3. Çанна тавăрса ĕçлер. 4. Тырпул тухăçне хăпартар.

Сывă пултăр Сталин юлташ! Сывă пултăр коммунистсен партийĕ!

**Пулăра.** Куçмапа иксĕмĕр пĕрре пулă тытма кайрăмăр. Куçма атмапа сĕрет. Атмине туртса кăларать. Пăхатпăр: атми ăшĕнчен шапа ялт сиксе тухрĕ. „Куртăн-и пулла?" —терĕм Куçмана.

**Якур.** Якур тĕттĕм çĕрте çӳреме шикленет. Пĕрре вăл кăмака çумĕпе иртсе пырать. Ăнсăртран турчка çине пусать. Турчка аври пуçран шаплаттарать. Якур кăшкăрса ярать.

6. **Пăхса çырмалли диктант.** Кам вĕрентет? (*учитель*). Кам сухалать? (*колхозник*). Кам тимĕр туптать? (*тимĕрçĕ*). Кам çĕлет? (*çĕвĕç*).

Вутта мĕнпе çураççĕ? (*пуртăпа*). Кĕпене мĕнпе çĕлеççĕ? (*йĕппе*). Яшкана мĕнпе çиеççĕ? (*кашăкпа*).

Пулă ăçта пурăнать? (*шывра*). Пакша ăçта пурăнать? (*хăвăлта*). Тилĕ ăçта пурăнать? (*шăтăкра*).

## § 3. Япаласене, вĕсен ĕçне тата паллисене пĕлтерекен сăмахсем.

а) Япала.

*Асăрхаттарни.* Учитель пăхса çырмалли диктант туса иртterет. Сăмахсене йĕркипех доска çине çырса парать. Вĕренекенсене малтан хирте ӳсекен ӳсентăран ячĕсене, кайран вăрманта ӳсекен йывăç-курăк ячĕсене çырса илме хушать.

Учитель вĕренекенсемпе пĕрле малтан хирте ӳсекен ӳсентăран ячĕсене пăхса тухать. Кайран вăрманта ӳсекен йывăç-курăк ячĕсене пăхса тухаççĕ. Çак йĕркепе пăхса тухнă хыççăн учитель вĕренекенсене пăхса тухнă майпах çыртарса илтерет.

7. **Хирте тата вăрманта.** Хурама, юман, ыраш, ăвăс, тулă, хурăн, пăрçа, çăка, ясмăк, пилеш, урпа, çĕмĕрт, клевер, утмăлтурат, хуратул, хыр, чăрăш, сĕлĕ, йăмра, вĕрене.

8. **Пӳртре тата килкартинче.** Арча, чейник, урапа, вите, сĕтел, амбар, пукан, карта, çуна, кашăк, хăмăт, кăмака, шкап, кровать, сăпка, стакан, йĕвен, тӳшек, сӳре.

**Тискер кайăксемпе вĕçен кайăксем.** Хур, кăвакал, кашкăр, упа, чăхă, шăнкăрч, тилĕ, арăслан, чана, тигр, кăркка, кăвакарчăн, уйăп, çерçи, кăсия, тăмана, путене, ăсан.

**Çынсем** (ĕç тата хурăнташлăх тĕлĕшпе). Лĕтчик, кĕтÿçĕ, плотник, комбайнёр, асанне, монтĕр, агроном, çĕвĕçĕ, хĕр, асатте, тимĕрçĕ, тракторист, анне, йăмăк, аппа, атте, пахчаçă, ывăл, пăхарçă, пичче, шăллăм, шофĕр, сунарçă, мăнакка, кукка, учитель, колхозник, атăçă.

**Вăрçăра тата колхозра.** Снаряд, улмуççи, çĕрулми, пуля, сысна, тулă, пăри, окоп, миномĕт, сĕлĕ, граната, бомба, тупă, пăшал, жнейка, сÿре, плуг, штык, танк, комбайн, çава, пулемĕт, çурла.

**Кам ку? мĕн ку?** Хурăн, асанне, атăçă, слон, ручка, хуратул, хăяр, кангăр, пулăçă, тулă, аппа, сĕлĕ, самолĕт, тракторист, мулкач, упа, çăпала, анне, комбайн, йытă, сурăх, тăвар, лампа, плуг, лаша, пÿрт, йăмăк, пичке, пачкă, пургă, сава.

***Асăрхаттарни.*** Çак виçĕ статья учителе вĕренекенсене япаласен ячĕсен ыйтăвĕсем *кам? мĕн?* анчах мар иккеннине кăтартса пама пулăшĕç.

9. **Йăмăк.** Йăмăк кĕнеке вулать. Йăмăкăн сумка пур. Йăмăка тетрадь патăм. Йăмăкпа шкула кайрăмăр. Йăмăкра ручка пур. Йăмăкран карандаш илтĕм.

**Хурăн.** Пирĕн пахчара хурăн ÿсет. Хурăнăн хуппи шурă. Хурăна атте лартнă. Хурăнпа юнашар мунча пур. Хурăнтан сулхăн ÿкет.

**Шăпчăк.** Мĕн аван юрлать? Мĕнĕн сассине илтетĕн? Мĕне итлеме юрататăн? Мĕнрен лайăх юрлакан кайăк çук? (шăпчăк, шăпчăкăн, шăпчăка, шăпчăкран).

### ă) Япаласен ĕçне пĕлтерекен сăмахсем.

10. Кам мĕн тăвать? Тимĕрçĕ тимĕр туптать. Учитель... Сухаçă... Çĕвĕçĕ... Кĕтÿçĕ... Пулăçă... Сунарçă... Художник... Тухтăр... Колхозник... Маляр... Купăсçă... (сăрлать, купăс калать, авăн çапать, сăн ÿкерет, вĕрентет, сухалать, кĕтÿ кĕтет, çĕлет, пулă тытать, сунара каять, сыватать).

Кам мĕнле çÿрет? Шăнкăрч вĕçет. Çĕлен... Шăла... Шапа... Шăна... Уланкă... Кăвакарчăн... Упа... Тилĕ... Çăрттан... Лĕпĕш... (шăвать, ишет, сикет, вĕçет, утать, чупать).

Кам мĕнле сасă парать? Шăпчăк юрлать. Автан... Лаша... Чăхă... Кăвакал... Йытă... Кашкăр... Çĕлен... Çерçи... Çăхан... Тăри... Шăши... Сысна... Сурăх... Нăрă... Хур... (какăлтатать, сĕрлет, макăрать, çухăрать, чăйлатать, юрлать, караклатать, чĕвĕлтетет, чашкăрать, улать, вĕрет, нартлатать, каклатать, кĕçенет, авăтать).

11. **Япаласен ĕçĕсем.** Шăпчăк юрлать, вĕçет... сĕрлет, вĕçет... чашкăрать, шăвать... йăлтăртатать, çутатать, ăшăтать... шăнкăртатать... юхать... ÿсет, симĕсленет... саралать, хумханать... каранклатать, вĕçет... вĕрет... найкăшать... (йытă, нăрă, çĕлен, ыраш, хĕвел, шыв, вăрман).

12. ***Пăхса çырмалли диктант.*** Çумăр çăвать. Çиçĕм... Аслати... Шыв... Жнейка... Сывлăш... Арман... Лаша... Тулă... Пăрçа... Чăхă... Çерçи... Автан... Кăвакал... Курак... Хур...

Хĕвел... Сехет... Вăрăмтуна... Шăнкăрч... (юрлать, вĕçет, çӳрет, пăхать, какăлтатать, кăраклатать, нартлатать, ĕçлет, авăтать, чĕвĕлтетет, какалать, ӳсет, кĕçенет, аварать, ӳкет, вырать, юхать, çиçет, нăйлатать).

### в) Япала паллисене пĕлтерекен сăмахсем.

13. Мĕнле япала? (тĕсĕ енчен) шурă юр... кĕмĕл... хур... ылттăн... мулкач... кăмрăк... юн... хăмач... сахăр... упа... хурăн... тутăр... ялав... (шурă, сарă, хура, хĕрлĕ, хăмăр).

14. Мĕнле япала? хĕвел... вут.... кĕрĕк.... çырма .. сухан... пыл... тимĕр... пăр... çурт... (çутă, вĕри, ăшă, таран, тутлă, йӳçĕ, йывăр, сивĕ, пысăк).

15. Япаласен хирĕçле пĕлтерĕшĕнчен пĕри паллă, теприне тупмалла. Мĕнле-мĕнле япала? Тĕслĕх: Çĕрулми шултăра, çĕрулми вĕтĕ. Йытă йăваш... Чие шултăра... Карандаш çемçе... Çанталăк сивĕ... Хыр çӳллĕ... Урам тăвăр... Çурт пысăк... Çип çинçе... Кĕмĕл çутă... Лаша вăйлă...

16. **Япала, унăн ĕçĕ тата палли.** Лаша, турă, юртать. Мулкач, шурă, чупать. Шĕшкĕ, лутра, ӳсет. Çиçĕм, çутă, çиçет. Вăрман, хура, кашлать. Самолĕт, пысăк, вĕçет. Хурăн, шурă, ӳсет. Хур, шурă, какăлтатать. Ыраш, вăрăм, хумханать. Сысна, шурă, çухăрать. Пуртă, çивĕчĕ, касать.

***Асăрхаттарни.*** Учитель çак текста доска çине çырать (пĕтĕмĕшпе çырса памасан та юрать). Текста мĕнле çырса илмеллине вĕренекенсемпе пăхса тухмалла. Малтан япалан паллине, унтан япала ятне, юлашкинчен япалан ĕçне кăтартакан сăмахсем йĕркеленсе ларни курăнать. Вĕренекенсем кашни вичĕ сăмахран, кирлĕ йĕркене пăхăнса, предложени тăваççĕ.

Т ĕ с л ĕ х р е н: Турă лаша юртать, т. ыт. те. Япалана, унăн ĕçне тата паллине кăтартакан сăмахсене айĕнчен турттарсан та юрать.

## § 4. Пайăр ятсене пысăк саспаллипе çырасси.

17. **Иванпа Кĕркури.** Иванпа Кĕркури иккĕшĕ те тăхăр çулта. Вĕсем Анаткас ялĕнче пурăнаççĕ. Ку ялти колхоз „Большевик" ятлă. „Большевик" колхозра кашни лашанах ят пана. Вăл ятсем çаксем: Рекорд, Сивка, Ветерок, Пегашка т. ыт. те.

18. **Пирĕн ял.** Эпĕ Старак ялĕнче пурăнатăп. Пирĕн ял патĕнчен Çавал юхса иртет. Пиртен инçе мар Тĕнсĕр ялĕ тата Çĕрпӳ хули пур. Çĕрпӳре ман пичче Борис Петрович Белов вĕренет.

19. **Атăл.** Атăл анлă та вăрăм. Вăл Калинино облаçĕнче пуçланать, Каспи тинĕсне юхса кĕрет. Атăл çинчи паллă хуласем: Калинин, Горький, Шупашкар, Хусан, Ульяновск, Куйбышев, Саратов, Сталинград, Астрахань.

20. **Пирĕн шывсем.** Совет Союзĕнче шывсем питĕ нумай. Вăл шывсем тăрăх пароходсем çӳреççĕ.

Паллăрах шывсем çаксем: Атăл, Дон, Днепр, Урал, Нева, Неман, Енисей, Лена, Обь, Амур т. ыт. те.

Ока, Кама, Сăрă, Сĕве шывĕсем Атăла юхса кĕреççĕ.



ЧУВАШСКАЯ КНИЖНАЯ ПАЛАТА

21. **Пирĕн хуласем.** 1. Мускав — пирĕн тĕп хула. 2. Мускавра пысăк заводсем, фабрикăсем пур. 3. Нева шывĕ хĕрринче Ленинград хули. 4. Вăл Октябрьти революцин вучахĕ. 5. Владимир Ильич Ленин Ульяновск хулинче çуралса ӳснĕ. 6. Отечественнăй вăрçă вăхăтĕнче Сталинград, Ленинград, Мускав, Одесса, Севастополь хулисем патĕнче нимĕçсене хирĕç пирĕн Совет Çарĕ паттăррăн çапăçрĕ.

## § 5. Сăмах тĕпĕ тата аффиксĕсем.

***Сăмах тĕпĕсене туп та айĕнчен йĕр турт.***

22. Пулăçă, тимĕрçĕ, сухаçă, çĕвĕçĕ, кĕтӳçĕ, йĕлтĕрçĕ, пăхăрçă, сăвăçă, халапçă, шăпăрçă, вĕçевçĕ, юманлăх, хурăнлăх, ăвăслăх, пурăнăç, савăнăç, вĕркĕч, хыпкăч, тыткăч, пăркăч.

23. ***Суйласа çырмалли диктант.*** **Тимĕрçĕ лаççинче.** Пирĕн колхозра тимĕрçĕ лаççи пур. Тимĕрçĕ лаççинче Макар мучи ĕçлет. Макар мучи тимĕрçĕре вуникĕ çул ĕçлет. Вăл колхоз валли кирлĕ япаласем туса парать. Урапасене шинăлать, лашасене таканлать, машина пайĕсене юсать, çава туптать, çурла шăллать. Макар мучи вучаха кăмрăк хурать те вĕркĕчпе вĕртет. Тимĕре вăл хыпкăчпа тытать.

24. ***Аффикссем хушса çĕнĕ сăмахсем ту.***

Пура—пуралăх. Çĕмĕрт... Атă... Кĕрĕк... Хăва... Çурт... Пӳрт... Хурăн... Турта... Сенĕк... Шăпăр... Пилеш... Юман... Тус... Тăван...

25. ***Пĕр тĕплĕ сăмахсен тĕпĕсене тупса, сăмахĕсене айĕнчен йĕр туртса паллă тăвăр.***

**Сунарçă.** Сунарçă ирех вăранать. Сунарçăн хулпуççи çинче пăшал, çурăм хыçĕнче сумка. Сунарçă шурă юр çинче йĕлтĕрпе шăвать. Сунарçăпа юнашар йытти йĕрсем шăршлакаласа пырать. Сунарçă кашни тискер кайăкăн йĕрне лайăх пĕлет. Чее тилĕ те сунарçăран хăтăлаймасть.

26. ***Сăмахсенчи ударенине ларт.*** Çуна, урапа, сӳре, çава, курак, çерçи, автан, чакак, тулă, çакăр, çăнăх, сухан, минтер, атă, чăлха, ура, вăрман, пилеш, турат, ыраш, тулă, сĕлĕ, пăрçа, пура, сехет, машина, трактор, паровоз, фабрика.

## § 6. Хытă сăмахсем, çемçе сăмахсем тата хутăш сăмахсем.

***Пăхса çырмалли диктант.***

27. ***Малтан хытă сăмахсене, унтан çемçе сăмахсене çырмалла.*** Лаша, ĕне, çеçпĕл, сурăх, çерçи, упа, тилĕ, кашкăр, кĕтмел, пилеш, ăсан, курăк, чĕкеç, сĕт, аш, чĕкĕнтĕр, кишĕр, ыраш, сĕлĕ, тулă, çăмах, çупах, сӳре, кĕмĕл, ылттăн, тимĕр, шăнкăрч, сехет, талăк, сĕтел.

28. ***Текстри хытă сăмахсене çырса илмелле.***

Шĕшкĕ. Шĕшкĕ вăрманта ӳсет. Шĕшкĕ—лутра йывăç. Шĕшкĕ çинче мăйăрсем ӳсеççĕ. Мăйăра пакша юратать. Пакша хĕлле

валли мăйăр хатĕрлет. Вăл мăйăрсене йывăç хăвăлне хурать. Мăйăра çынсем те татаççĕ. Ăна катса çиеççĕ. Мăйăртан çу та тăваççĕ.

*Суйласа çырмалли диктант.*

29. *Текстри çемçе сăмахсене çырса илмелле.*

**Юман.** Юман вăрманта ÿсет. Вăл çирĕп йывăç. Юман вутти хĕрÿ нумай парать. Юман çинче йĕкелсем ÿсеççĕ. Йĕкеле сысна çиет. Йĕкелпе сысна мăнтăрланать. Юманăн ĕмĕрĕ вăрăм. Юмантан тĕрлĕрен япаласем тăваççĕ. Юмантан урапа, çуна, пичке, катка т. ыт. те тăваççĕ.

30. *Текстри хутăш сăмахсене çырса илмелле.*

**Пукане.** Валя пĕчĕк хĕрача. Унăн пуканесем пур. Вăл пуканесене кашнине ят панă. Вăл пуканесене кĕпесем çĕлесе парать. Валя пуканесемпе выляма юратать. Хăйĕн селĕп чĕлхипе вăл пуканесемпе пĕрмаях темĕн пуплет. Пуканесемпе ыттисен умĕнче мухтанма юратать.

31. *Текста çыртарăр, хытă сăмахсене айĕнчен пĕр йĕрпе, çемçе сăмахсене икĕ йĕрпе туртса палăртма хушăр.*

**Пирĕн тус.** Çуркунне çывхарчĕ. Хĕвел тÿпене çÿллĕрех те çÿллĕрех кармашать. Юр васкасах ирĕлет. Хура курак та ăшă енчен вĕçсе килчĕ. Шăнкăрчсемпе тăрисем килессе кĕтетпĕр. Эпĕ хăма татăкĕсем илтĕм те пăчкăпа татрăм. Вĕсене саваласа якатрăм, пăтасем çапса çыпăçтартăм. Пĕр хăмине пăрапа шăтартăм. Шăнкăрч йăви пулса та тăчĕ. Ăна пÿрт çамки çумне çакрăм. Март вĕçĕнче шăнкăрчсем çитрĕç. Вĕсем çĕнĕ хваттере часах йышăнчĕç.

## § 7. Çемçетекен палла ь сăмах вĕçĕнче тата сăмах варринче çырасси.

32. **Мăкăнь.** Мăкăнь пахчара ÿсет. Мăкăнь чечекĕ хĕрлĕ, кĕрен, шурă пулать. Мăкăнь пахчана илем кÿрет. Мăкăнь вăрринчен çу çапаççĕ. Мăкăне ахаль те çиеççĕ.

33. **Выльăх ферми.** Пирĕн колхозра выльăх ферми пур. Выльăх ферминче ĕнесем, сурăхсем, сыснасем, кашни йышши выльăх уйрăм витере. Выльăхсен витисем таса, çутă, ăшă. Выльăхсене вăхăтра апат параççĕ, шăвараççĕ. Выльăхсен айне улăм сарса параççĕ. Выльăхсен шучĕ çултан çулах ÿссе пырать.

34. **Коньки.** Хĕл çитрĕ. Çавал ларчĕ. Сергее ашшĕ коньки илсе пачĕ. Сергей, шкултан килсен, кулленех конькипе ярăнса уçăлать. Конькипе ярăннă хыççăн Сергей килне таврăнать те уроксем вĕренет.

35. **Хĕлле.** Хĕлле эпир пуçа çĕлĕк, çие пальто, урана çăматă тăхăнатпăр. Пальтопа эпир нимĕнле сивĕрен те хăрамастпăр.

36. 1. Çын аллинчи кукăль пысăккăн курăнать, çын çинчи çĕклем пĕчĕккĕн туйăнать. (*Ваттисен сăмахĕ*). 2. Аллуна тата пит-куçна супăньпе çу. 3. Конькипе ярăнма вĕрен.

37. **Тупмалли юмахсем.** 1. Хура йытти çакăнса тăрать, хĕрлĕ йытти ăна вĕрет. (*Вут, хуран*). 2. Ши! каять, пи! каять, çÿле

каять, ҫӑмарта тӑвать. (*Хӑмла*). 3. Кӑмакара ҫутӑ тенкӗ выртать. (*Ҫатма*). 4. Кӑмакара упа ташлать. (*Мелке*). 5. Пӳрт тӑрринче ҫур ҫӑкӑр ҫакӑнса тӑрать. (*Уйӑх*).

## § 8. Хытӑ сӑмахра *ҫ*, *ч* саспаллисем умӗн *л*, *н* сасӑсем ҫемҫе илтӗнеҫҫӗ пулсан та, вӑл саспаллисем хыҫҫӑн *ь* лартмасӑр ҫырасси.

38. **Ҫулҫӑ.** Ҫуркунне йывӑҫсем ҫулҫӑ кӑлараҫҫӗ. Ҫулла йывӑҫ ҫулҫисем сип-симӗс. Ҫуркунне калча та ӳсме тапратать. Кӗркунне ҫулҫӑсем сарӑхаҫҫӗ. Ҫанталӑк куҫҫуль тӑкать. Ҫулҫӑсем йывӑҫсем ҫинчен салхуллӑн вӗҫсе анаҫҫӗ.

39. **Кӗркунне.** Хӗвел пӗлӗт хыҫне пытанчӗ. Куллен вӗтӗ ҫумӑр пӗрӗхет. Урамсенче ура пусма ҫук пылчӑк. Шӑнтсан тин пылчӑкран хӑтӑлӑпӑр.

40. **Мунча.** Пирӗн колхоз пысӑк мунча лартрӗ. Эпир кашни эрнере мунча кӗретпӗр. Мунчана тазсем, супӑньсем, мучала илсе каятпӑр. Мунча кӗни ӳт-тире тасатать. Мунча сывлӑха сыхлама пулӑшать.

41. **Хӑлчӑк.** Тырӑ сӑвӑрнӑ чухне хӑлчӑк вӗҫет. Пӗрре Кулине инкен куҫне хӑлчӑк кӗнӗ. Хӑлчӑк ӑна пӑхма чӑрмантарать. Кулине инке тухтӑр патне кайрӗ. Тухтӑр хӑлчӑка ун куҫӗнчен кӑларчӗ. Кулине инке чиперех кура пуҫларӗ.

42. **Панча.** Купӑстана малтан панча ҫине акрӑмӑр. Панча ҫинчи купӑста калчине куллен шӑвартӑмӑр. Сивӗ каҫсенче купӑста калчине улӑм матӑсемпе витрӗмӗр. Июнь уйӑхӗн пуҫламӗшӗнче панча ҫинчи купӑстана пахчана куҫарса лартрӑмӑр.

## § 9. *Э*, *ю*, *я*, *е* саспаллисене ҫырасси.

43. **Кӑсия.** Хӗлле Якурсен садне кӑсиясем вӗҫсе килеҫҫӗ. Якур кӑсиясене хӗрхенет. Вӑл кӑсия валли серепе турӗ. Серепене юр ҫине хучӗ. Серепи ҫине кантӑр вӑрри сапрӗ. Кӑсия кантӑр вӑррине ҫиме серепе ҫине пырса ларчӗ. Кӑсиян ури тӑлланчӗ. Серепене лекнӗ кӑсияна Якур пӳрте ячӗ. Кӑсия пӳртре читлӗхре хӗл каҫрӗ. Ҫуркунне Якур кӑсияна ирӗке кӑларса ячӗ.

44. **Ясли.** Ялта та, хулара та пӗчӗк ачасем валли яслисем пур. Яккӑва амӑшӗ яслине илсе каять. Яслире ачасене апат ҫитереҫҫӗ. Яслире вылямаллисем, теттесем пур. Ӗлӗкхи вӑхӑтра ачасем валли яслисем пулман.

45. **Октябрь уявӗ.** Эпир ҫулленех Октябрь уявне уявлатпӑр. Октябрь уявӗнче халӑх митинга пуҫтарӑнать. Хӗрлӗ ялавсем вӗлкӗшеҫҫӗ. Хавас юрӑсем янӑраҫҫӗ. Октябрь уявӗнче шкул ачисем валли утренниксем, спектакльсем пулаҫҫӗ.

46. **Юманпа шӗшкӗ.** Вӑрманта парка юман ӳснӗ. Юман йӗкелӗ шӗшкӗ тӗмӗ айне ӳкнӗ. Юман йӗкелӗ шӑтса тухнӑ та ӳсме тытӑннӑ. Шӗшкӗ ҫамрӑк юмана хупласа тӑнӑ, ӳсме парасшӑн пулман. Шӗшкӗ сулхӑнӗнче юман ӳснӗ те ӳснӗ. Ҫул хыҫҫӑн ҫул иртнӗ. Юман шӗшкерен иртсе кайнӑ. Шӗшкӗ хӑрнӑ. Юман пысӑк йывӑҫ пулнӑ.

47. **Эрешмен.** Çуллахи шăрăх вăхăт. Эрешмен хăйĕн йăвинчен тухнă та армути хушшинче хăйĕн картине карма тытăннă. Çывăхра шăнасем сĕрленĕ. Пĕр шăни эрешмен карти çине пырса лекет. Тем пек тапаçланать, ниепле те тухаймасть. Эрешмен шăна сассине илтет. Шăнана пăвса вĕлерет. Шăна—эрешмен апачĕ.

48. **Эрхиппе Энтип.** Эрхип эрнере ултă кун вĕренет, çиччĕмĕшĕнче канать. Эрхип Энтиппе туслă. Эрхиппе Энтип иккĕшĕ те Элĕк шкулĕнче вĕренеççĕ. Эрхиппе Энтип вĕренӳре юлташĕсене пулăшаççĕ. Эрхиппе Энтип—ĕçчен ачасем. Яланах кĕнекесем вулаççĕ, килте—ашшĕ-амăшĕсене пулăшаççĕ.

49. **Етĕрнере.** Елюк аппа Етĕрне хулинче пурăнать. Елюк аппа Етĕрнене юрататъ. Етĕрне таврашĕнче ем-ешел улăхсем сарăлса выртаççĕ. Епле аван Етĕрне вăрманĕ! Ерçӳ пулсан, тух та уçăл. Етĕрнерен инçех мар, Сăрă хĕрринче, завод ĕçлет.

## § 10. *Ç, ч* саспаллисем хыççăн хытă сăмахсенче *и* илтĕнет пулсан та *ы* çырасси.

50. **Çыру.** Çыру почтăпа килет. Çырăва конверт ăшне хураççĕ. Çыру яма марка кирлĕ. Çырупа инçетри çынпа та çыхăну тытма пулать. Çыру çырма хут, перо, чернил, конверт кирлĕ. Çырăвăн адресне тĕрĕс çырмалла. Çырăва поездпа, самолётпа, лашапа т. ыт. те çӳретеççĕ.

51. **Çырлара.** Пирĕн ял—Шĕнер. Шĕнер çывăхĕнче вăрман пур. Мĕнле кăна çырласем, кăмпасем çук пуль Шĕнер вăрманĕнче! Пĕрре эпĕ ачасемпе çырлана кайрăм. Вăрманта ачасем унталла-кунталла сапаланчĕç. Эпĕ çырла нумай çĕре çитрĕм те пурака пиçсе çитнĕ çĕр çырли татса тултартăм. Йĕри-тавра пăхатăп: çынсем çук. Кăшкăратăп, сасă памаççĕ. Хĕвеле пăхрăм та ăçталла каймаллине чухларăм. Пуракри çырлана çĕклесе килелле уттартăм.

52. **Çырма.** Пирĕн ял çывăхĕнче çырма пур. Çырми Çавал ятлă. Çырмара пулăсем ишеççĕ. Çырмари пулăсене атмасемпе, сĕрекесемпе, вăлтасемпе тытаççĕ. Çавала пĕвеленĕ. Çавал çырми вăйĕпе электричество çутатать, шыв арманĕ авăрать.

53. **Чаплă çынсем.** Пирĕн Совет Союзĕнче чаплă çынсем нумай. Чаплă çынсене орденсем, медальсем параççĕ. Вĕсене вăрçăри паттăрлăхшăн тата ĕçри хастарлăхшăн чысласçĕ. Çавăн пек чаплă çынсене халăх нихăçан та манмасть.

## § 11. Уйăракан *ъ, ь* паллăсене çырасси.

54. **Мăръе.** Кашни кăмакан мăръе пур. Мăръерен тĕтĕм тухать. Мăръери тĕтĕм çӳлелле хăпарать. Мăръене кирпĕчрен тăваççĕ. Мăръери хăрăма час-часах тасатса тăмалла.

**Тупмалли юмах.** Ĕни витере, хӳри тӳпере. (*Мăръе*).

55. **Унтри.** Унтри тирпейлĕ ача. Унăн шалаварĕн икĕ кĕсъе. Унăн пĕр кĕсъинче шурă сăмса тутăрĕ. Пит-куçĕ тарласан, вăл кăсъерен тутăр кăларать те шăлать.

56. **Стена хаçачĕ.** Пирĕн шкулта стена хаçачĕ тухать. Стена хаçачĕ валли статьясем хамăр çыратпăр Статьясене çăмăл чĕлхепе çырмалла. Статьясенче ĕçри çитĕнӳсене тата çитменлĕхсене кăтартса памалла. Статьясем пурăнăçри çитменлĕхсене тӳрлетме пулăшаççĕ.

## § 12. Ялан янăракан хупă сасăсем тата янăраман хупă сасăсем.

***Статьясене çыртармалла, янăраман сасăсен паллисене айĕнчен туртмалла.***

**Кашкăрсем.** Пирĕн ял таврашĕнче кашкăрсем нумай. Кашкăрсем хуçалăха сăтăр тăваççĕ. Кашкăрсем сурăхсене, пăрусене тытаççĕ. Выçă кашкăр çынна та тапăнать. Элекçей—сунарçă. Кăçал вăл тăвата кашкăр тытрĕ.

58. **Çуркунне.** Çуркунне çитет. Ăшă енчен тăрисем, шăнкăрчсем вĕçсе килеççĕ. Вĕсем йăвисем таврашĕнче шараçланаççĕ. Тĕк, мамăк, улăм пĕрчисем çĕклеççĕ.

Тискер кайăксем йăвисенчен тухаççĕ. Вĕсем хĕл каçипе кавсăлса çитеççĕ. Халĕ çине тăрсах вĕсем апат шыраççĕ.

Ачасем килте лармаççĕ. Вĕсем çырма хĕррине каяççĕ, унта вĕсем вăлтапа пулă тытаççĕ.

***Статьясене çыртармалла, янăракан сасăсен паллисене айĕнчен туртмалла.***

59. **Хура çĕлен.** Вăрман патĕнче колхозниксем утă çулаççĕ. Вĕсем лерелле çулса кайрĕç. Эпĕ Хураçкапа çулса пăрахнă курăк çинче чупкалатăп, вылятăп, йăваланатăп. Сасартăк ман алла темĕн сивĕскер сĕртĕнчĕ. Курăк айĕнчен хура çĕлен шуса тухрĕ. Хураçка хăпăл-хапăл çĕлен çине сиксе ларчĕ. Пĕр самантранах вăл хура çĕлене таткаласа пăрахрĕ.

60. **Пăр çинчи йытă.** Паян çырмара пăр каять. Шыв хĕрринче туллиех халăх. Пĕр пăр катăкĕ çинче йытă юхса пырать. Вăл макăрнă пекех йăнăшать. Таниле пичче пăр катăкне багорпа çыран хĕрринелле туртса илчĕ. Йытă çăлăнчĕ.

## § 13. Вăрăммăн илтĕнекен хупă сасăлла сăмахсем.

61. **Пирĕн çемье.** Манăн атте колхоз бригадирĕнче ĕçлет. Аппа ĕне фермин заведующийĕ. Пичче Упири вăтам шкулта вĕренет. Анне колхозра ĕçлет. Пĕчĕк йăмăк Анна ача яслине çӳрет. Эпĕ шкулта вĕренетĕп.

62. **Тăранман йытă.** Йытта шăмă панă. Йытă шăмма хыпна та каçă урлă вĕçтерсе пырать. Вăл шывра хăй мĕлкине курах каять. Мĕлкене вăл тепĕр йытă пулĕ тенĕ. Йытă шыври йыттăн шăммине тĕмсĕлет. Çăварĕнчи шăммине кăларса пăрахать те шыва шампăрт! сикет. Шывра ни йытти, ни шămми пулман.

63. **Пионер.** Пионер паттăр, хастар, хăюллă, йĕркеллĕ. Пионер вĕренӳре тата ĕçре кая юлманни пурне те паллă. Хăй хă-

юллипе, паттăррипе, ĕçченнипе пионер нихăçан та мухтанмасть. Вăл Ленинпа Сталин вĕрентнисене туса пыма яланах хатĕр.

64. Павел Петрович. Павел Петрович—пирĕн агроном. Павел Петровичăн ĕçĕ—ялхуçалăхне лайăхлатасси. Колхозниксем Павел Петровичпа яланах канашласа ĕçлеççĕ. Павел Петрович ударниксенчен пĕри. Павел Петрович колхозниксене лайăх ăнлантарать.

## § 14. *Б, г, д, ж, з, о, ф, ц, щ* саспаллисене çырасси.

65. **Челюскинецсем пăр çинче.** „Челюскин" ледокола пăрсем хĕстерсе шăтарнă. Çыннисем пăр çине тухнă. Ледоколĕ путнă. Пăр çинче çĕр çын пурăннă. Лагерь çине пăрсем шатăртатса пырапыра капланнă. Çынсем вырăнаçнă пăр çурăлсах, катăлсах тăнă. Челюскинецсем шанчăк çухатман. Совет правительстви вĕсене вăхăтра пулăшу панă. Паттăрсене çăлма ледоколсем, пароходсем, самолётсем янă. Хастар совет лётчикĕсем челюскинецсене çăлнă.

66. **Тăван çĕршывшăн.** Ĕç 1942-мĕш çулта хĕлле пулса иртнĕ. Иванов колхозника фашистсем хăйсене ючашар яла ăсатма хушнă. Иванов тăшман отрядне тата 30 автомашинăна тарăн вара кĕртсе ярать. Автомобильсем юр ăшне путаççĕ, гитлеровецсем теçетки-теçеткипе шăнса вилеççĕ. Фашистсем Иванова вĕлернĕ. Иванов Тăван çĕршывшăн пуçне хучĕ. Ĕмĕр-ĕмĕр мухтав Иванов пек геройсене.

67. **Хулара.** Ир-ирех хулара сас-чӳ тапранать. Фабрикăсем, заводсем гудок параççĕ, рабочисене ĕçе йыхăраççĕ. Рабочисем утаççĕ, ĕçе васкаççĕ. Фабрикăсемпе заводсем ĕç пуçласа яраççĕ.

## § 15. Пĕтĕмпе аса илмелли ĕçсем.

68. **Авал тата халĕ.** Авал кунта тĕттĕм кĕтес пулнă. Халĕ кунта фабрикăсемпе заводсем. Авал кунта шурлăх пулнă. Халĕ рельссем хунă, рельссем тăрăх поездсем чупаççĕ.

69. **Юр кĕлетке.** Хĕллехи ăшă кун. Пĕчĕк Петĕр чӳречерен пăхать. Тулта чӳрече патĕнче икĕ ача выляççĕ. Вĕсем юртан пысăк кĕлетке тăваççĕ. Кĕлетки Петĕртен те пысăк. Кĕлеткен куçне кăмрăкран турĕç, аллине шăпăр тыттарчĕç.

70. **Çуркунне.** Хĕвел ачашшăн пăхать. Çĕр ăшăнчĕ. Тӳпере тăри юрлать. Вĕлле хурчĕсем сĕрлеме тытăнчĕç. Садсем ешĕл тумтир тăхăнчĕç. Улмуççисем те чечеке ларчĕç.

71. **Тимуровец.** Ваççан кӳршине фронта илсе кайрĕç. Килне унăн арăмĕ тата тăвата ачи юлчĕç. Ваçça вĕсене мĕн вăй çитнĕ таран пулăшать: шыв ăсса килет, вутă çурса парать. Ваçça пионер.Уншăн Тăван çĕршыв темрен те хаклă.

72. **Кăткăпа кăвакарчăн.** Кăткăн шыв ĕçес килнĕ. Вăл шыв хĕррине аннă. Хум пырса çапать те кăтка путарма тăрать. Кăвакарчăн кăтка турат пăрахса парать. Кăткă турат çине ларать те вилĕмрен хăтăлать. Пĕрре сунарçă кăвакарчăна тана-

тапа тытма тăчĕ. Кăткă сунарçă патне чупса пычĕ те ăна уринчен çыртрĕ. Сунарçă кăшкăрса ячĕ те танатине аллинчен ÿкерчĕ. Кăвакарчăн вĕçсе кайрĕ.

73. **Хура кураксем.** Хура кураксем ăшă енчен вĕçсе килчĕç. Вĕсем вĕçсе килнĕ чух вăйлă çил-тăман тапса тухнă. Кайăксем вăрманта чарăннă. Вĕсем çил-тăман чарăнасса кĕтнĕ. Халĕ хура кураксем хăйсен йăвисене юсанаçрĕç. Ĕнтĕ вĕсем час чĕпĕ кăлараççĕ.

74. **Çулла.** Çур иртрĕ. Çу çитрĕ. Хĕвел хытă пĕçертет.

Вĕçен кайăксем чĕпĕ каларчĕç. Улăхра чечексем курăнаççĕ. Уй-хир саралать. Мирунпа иксĕмĕр пĕрер çыхă чечек татрăмăр. Колхозниксем жнейкăсем майлаштараççĕ. Часах тырă вырма тытăнаççĕ.

75. **Аслатиллĕ çумăр.** Йĕри-тавра хура пĕлĕтсем хупăрларĕç. Çиçĕм ялтăртатать. Аслати кĕмсĕртетет. Çумăр чĕреслетсе çăвать. Шыв юхать. Аннапа Хĕветĕр кантăкран пăхса тăнă. Вĕсем садри ватă юмана тăвăл хуçса кайнине курнă. Акă çумăр иртрĕ. Каллех хĕвел йăлтăртатать.

76. **Пăр кайни.** Пăр тапранчĕ. Пăр катăкĕсем пĕр-пĕрне хăвалаççĕ, ватаççĕ. Кĕпер çинче çынсем тăраççĕ. Вĕсем пăр кайнине кураççĕ. Лере пĕр пăр катăкĕ пароход пекех килет. Пăрсем хушшипе сулă хĕсĕнсе юхать. Ун çинче кушак макăрса пырать. Акă сулă кĕпер тĕлне çитсе пырать. Кушак кĕпер çине ялт! сиксе ÿкрĕ. Пăрсем малаллах шăваççĕ.

77. **Путексем.** Вăрман патĕнче сурăх кĕтĕвĕ. Икĕ путек кĕтÿрен уйрăлса каяççĕ. Вĕсем хир тăрăх выляса, чупкаласа çÿреççĕ. Тĕм хыçĕнче кашкăр пулнă. Вăл путексене тытнă та çисе янă. Айван путексем! Кĕтÿрен уйрăлнипех хăйсен пуçĕсене çирĕç.

78. **Тăрна.** Кĕркунне эпир сад патĕнче тăрна тупрăмăр. Унăн хăрах çуначĕ аманнă пулнă. Хĕлле вăл сывалчĕ, алла вĕренсе çитрĕ. Çуркунне пулчĕ. Пурте шавлать, юрлать, савăнать. Тăрна килкартинче çÿрет. Çÿлте тăрна карти какăлтатса иртнине илтех каять. Тăрна çунаттисене лăпăстаттарчĕ те тăрна карти хыççăн вĕçсе кайрĕ.

# ВИÇÇĔМĔШ КЛАСС

## § 1. Аса илмелли ĕççем.

1. **Шăтăк витре.** Униççе шыв ăсса тавăрăннă. Витри шăтăк пулнă. Шывĕ витререн юхнă. Витре çăмăл пулнă. Униççе хĕпĕртенĕ. Вăл килне тавăрăнать. Витрере шывĕ юлман та.

2. **Кашкăра мĕншĕн хĕнеççĕ?** Кашкăр сурăх тытса çинĕ. Кашкăра çынсем тытнă та хĕнеме пуçланă. Кашкăрĕ калать: „Мана мĕншĕн хĕнетĕр? Эпе сăрă тĕслĕ пулнăшăн юратмастăр-и мĕн?"— тет. „Тĕсшĕн мар, сана сурăх тытнăшăн хĕнеççĕ",—тенĕ кашкăра.

3. **Кĕркунне.** Кĕр çитрĕ. Тăрисемпе шăнкăрчсем тахçанах кăнтăралла вĕççе кайрĕç. Ырăччĕ-çке çулла! Халĕ хĕвел пытанчĕ. Тӳпене пĕлĕтсем хупласа илчĕç. Кунĕн-çĕрĕн çумăр çăвать. Урамра пылчăклă, ниçта ура ярса пусма çук.

4. **Хĕл инçе мар.** Ĕнер эпир Çеменпе вăрмана кайрăмăр. Йывăççем çаралнă. Ура айĕнче çулçăсем чăштăртатаççĕ. Вĕçен кайăксем çук. Вĕсем ĕнтĕ кăнтăра вĕççе кайнă. Ула кураксем, чанасем, çерçисем, кăсиясем кăна юлнă. Колхозниксем тырпулсене хиртен пухса кĕртнĕ.

5. **Хĕл валли.** Кĕр иртрĕ. Хĕл ларасса кĕтетпĕр. Эпĕ йĕлтĕр туянтăм, Илюкăн коньки пур. Эпир пурте çырмари шыв шăнасса кĕтетпĕр.

6. **Çунашкапа.** Акă пирĕн ял. Кунта манăн кил. Çунашкапа вĕçтертĕм чăнкă сăрт çинчен. Çунашка ӳпĕнсе кайрĕ, эпĕ сирпĕнсе юлтăм. Ту айккинчи кĕрт ăшне чикеленсе ӳкрĕм. Пит те, алăсем те юр кăна. Эпĕ макăрас патнех çитрĕм, ачасем ахăлтатсах кулаççĕ.

7. **Савăнăç.** Ачасем пĕчĕк юханшыв патне кĕпĕрленчĕç, çерем катăкĕсем çĕклесе пычĕç те шыва пĕвелерĕç. Çерем катăкĕсем çине хăпарса таптарĕç. Пĕве пулса тăчĕ. Пĕве хĕррипе шывне уçса ячĕç. Ачасем шыв арманĕ (урапа) турĕç. Шыв армана çавăрма тытăнчĕ.

8. **Çырмара.** Эпир çырмана пулă тытма кайрăмăр. Хĕвел тухман-ха. Шурăмпуç килнĕ чух пулă аван лекет. Малтан кăрtăшсем çине-çинех лекрĕç. Тата пĕр çупах, çăрттан тытрăмăр.

9. **Тарас поезда çăлни.** Пĕрре Тарас станцинелле утать. Курать—рельс татăлнă. Мĕн тăвас? Поезд çывăхарать, кăшкăрать. Тарас херлĕ галстукне мăйĕнчен вĕçертсе илчĕ те суллама тытăнчĕ. Машинист поезда чарчĕ.

## § 2. Сăмах составĕ. Ялан тĕл пулакан сăмахсенчен тĕпне тата аффиксĕсене уйăрасси. Пĕр тĕпрен пулнă сăмахсене тупасси.

10. **Арăсланпа тилĕ.** Арăслан ватăлнă. Вăл тискер кайăксене тытма пултарайман. Акă вăл чеелĕхпе пурăнма пăхать: шăтăка кĕрет те чирленĕ пек пулса выртать. Ун патне тискер кайăксем пыма пуçларĕç. Кĕреççĕ те, анчах нихăшĕ те тухса каймаççĕ. Вăл шăтăка кĕнине пĕр тыта-тыта çинĕ.

Тилĕ пырать, шăтăкăн çăварĕ патне тăрать те арăслантан ыйтать: „Мĕнле пурăнатăн?"

Арăслан калать:

— Начар. Мĕншĕн эсĕ ман пата кĕместĕн?—тет.

Тилĕ калать:

— Сан патна кĕнĕ йĕрсем пур, анчах тухнă йĕрсем курăнмаççĕ,—тет.

11. ***Çырса илмелле, сăмах тĕпĕсене аялтан йĕр туртса паллă тумалла.***

1. Кунта çук чуралăх, кунта çук пусмăр. 2. Тăван çĕршыва чунтан юрататăп. 3. Сывлăх чи хакли тĕнчере. 4. Хальхи пурăнăçра эпир ырлăх куратпăр. 5. Пирĕн çĕршывра пурлăх нумай. 6. Пионер тасалăха, тереслĕхе юратать. 7. Пĕчĕкçеççĕ путене сарă тулла юратать. 8. Ĕçрен ан хăра, вăл хăй санран хăратăр. 9. Ялан ăспа çӳресен,—ялти ватă ятламасть.

**Тупмалли юмах.** 1. Çăкалăх витĕр юр çăвать. (*Çăнăх алани*).

**Ваттисен сăмахĕ.** Пĕр кун каяс тесессĕн, çичĕ кунлăх çăкăр ил.

12. ***Çырса илмелле, аффикссене айĕнчен туртмалла.***

**Октябрь уявĕ.** Октябрь уявĕ—чи пысăк уяв. Эпир ăна хавассăн уявлатпăр. Урамсенче хĕрлĕ ялавсем вĕлкĕшеççĕ. Вĕçĕмсĕр халăх утать. Хавас юрăсем янăраççĕ. Музыка кĕрлет.

13. **Ăссăр упăте.** Упăте ватăлса çитет. Упăтен куç-пуç витĕрех курмасть. Вăл çынсем куçлăхпа çӳрени çинчен илтет. Упăте пĕр теçетке куçлăх туянать. Çамки çине те лартса пăхать вăл куçлăха, хӳри çине те çакса пăхать, çуласа та пăхать, шăршласа та пăхать. Çук, куçлăх ниепле те кăтартмасть. Упăте йăлт тарăхса çитрĕ. Куçлăхсене тытрĕ те чул çине печĕ. Куçлăхсем сĕлĕ пĕрчи пек ванса кайрĕç.

14. **Кашкăрпа путек.** Путек çырмана шыв ĕçме анать. Тăварах кашкăр тăрать. Вăл путеке çиме шухăшлать. Путекпе хирĕçме тытăнать:

— Эсĕ мĕншĕн эпĕ ĕçес шыва пăтрататăн?—тет.

— Мĕнле шыв пăтранать-ха, эпĕ санран анатарах тăратăп.

— Санăн аппу пирки мана пĕлтĕр хĕнерĕç.

— Манăн аппа пулман та.

— Мĕн калаçса тăмалли пур, эпĕ выçă, сана çиетĕп.

15. **Кушак çурипе йытă.** Килкартинче кушак çури вылянă. Ун патĕнчен йытă иртсе пырать. Кушак çури сиксе тăчĕ, пĕкĕрĕлчĕ те çăмне шăртлантарчĕ. Йытă иртсе кайрĕ. Кушак çури ун еннелле тем вахăтчен пăхса тăчĕ.

16. ***Пĕр тĕплĕ сăмахсене хушса çырмалла.***

Мухта—мухтав, мухтавлă, мухтан, мухтанчăк. Лар... Кул... Куç... Яр... Сир... Çап... Тĕрек... Тĕп... Ав... ‌ ул... Чăт... Пĕр... Чар... Тав... Çыр... Çӳхе... Шурă... Кăк... Пар...

## § 3. Пĕр тĕпрен пулнă сăмахсене çырасси.

17. 1. Куçпа куратпăр, хăлхапа илтетпĕр. 2. Кĕнеке вулама Илюк куçлăх тăхăнчĕ. 3 Куçна яланах таса тыт. 4. Куçри çӳппе тухтăра кăларттар. 5. Куççăр (суккăр) çынсене те вулама вĕрентеççĕ. 6. Куçлă çĕрĕ пит хаклă. 7. Ĕç тĕтĕм мар, куçа йӳçĕхтермест. 8. Куçран хакли мĕн пур-ши?

## § 4. Хутлă сăмахсем.

18. **Асатте.** Асатте утмăл çулта. Вăл сывлăхлă, ĕçре хастар. Асатте утарта пыл хурчĕсене пăхса пурăнать. Эпир асатте патне час-часах çӳретпĕр. Асатте паян пыл юхтарнă. Вăл пире çĕнĕ пыл çитерчĕ.

19. **Анкарти.** Колхоз анкартийĕ ял тулашĕнче. Колхоз анкартийĕнче тырпул капанĕсем туллиех. Колхоз анкартийĕнче çине витнĕ йĕтемсем пур. Ун пек анкартинче кирек мĕнле çанталăкра та авăн çапаççĕ. Авăна молотилкăпа, тăпачăпа çапаççĕ. Çапнă тырра государствăна пăраççĕ, амбара хураççĕ. Тырра çилармаяĕнче, вутлă арманта тата шыв арманĕнче авăртаççĕ.

20. **Çĕрулми.** Çĕрулмие эпир уя та, пахчана та лартса ӳстеретпĕр. Çĕрулмие вăхăтра çумламалла, вăхăтра купаламалла. Яровизациленĕ çĕрулми иртерех çитĕнет, унăн тухăçĕ ытларах пулать. Çĕрулмин темиçе сорт. Паллă сортсенчен пĕри—„Лорх". Хĕлле эпир çĕрулмие тĕпсакайĕнче, подвалта, нӳхрепре усратпăр.

21. **Улмуççи.** Улмуççи садра ӳсет. Улмуççие сыпаççĕ. Сыпман улмуççин панулмийĕ кăвасак та вĕтĕ пулать. Улмуççи таврашĕнчи тăпрана кăпăшлатмалла. Уяр вăхăтра улмуççие шăвармалла. Улмуççине хурт-кăпшанкăсем сиен кӳреççĕ. Улмуççисем çинче шăпчăксем юрлаççĕ.

***Çак сăмахсенчен хутлă сăмахсем ту.*** Кĕр—кун. Кĕркунне. Çур—кун. Çур—çĕр. Çăра—уççи. Аслă—атте. Ку—çул. Авăн—карти. Улма—йывăç. Аслă—анне. Ку—çĕр. Ура—ай. Сак—ай. Утмăл—турат. Вăрăм—туна. Ула—курак. Хĕр—ача. Кĕрĕ—çип. Хул—пуç. Арăм—утă. Çăм—атă. Çăл—куç.

## § 5. Мăшăр сăмахсем.

23. 1. Ача-пăчасем вылямa юратаççĕ. 2. Хур-кăвакалсем шывра ишеççĕ. 3. Çине тăрса тырă-пулă тухăçне ӳстерер. 4. Купăста-хăяр пахчара çитĕнет. 5. Упа-кашкăр вăрманта пурăнать. 6. Кайăк-кĕшĕксем ялхуçалăхне пысăк усă кӳреççĕ. 7. Çулла хурт-кăпшанкăсем йăшалтатаççĕ. 8. Ĕне-лаша—шултăра выльăх. 9. Çăкăр-тăвар хире-хирĕç (*ваттисен сăмахĕ*). 10. Шывшур çуркунне тапранать. 11. Çырма-çатрасене йывăççем лартар. 12. Укçа-тенкĕ шута юратать.

24. ***Çак сӑмахсенчен кӑтартса панӑ пек мӑшӑр сӑмахсем тутар.***

Кӗпе-йӗм... Чӑх... Пир... Атӑ... Выльӑх... Уй... Хаçат... Пӳрт... Хурт... Йӗпе... Вутӑ... Сӗт... Аш... Сетел... Алӑ... Куç... Утӑ... Путек... Кашӑк... Çул... Хыпар... Сас... Ватти... Ака... Çил... Апат...

25. **Пирӗн çӗршыв.** Пирӗн çӗршыв пысӑк. Пирӗн çӗршыв вӑйлӑ тырӑ-пулӑшӑн кӗрешет. Пирӗн фабрикӑсемпе заводсем ӗç тухӑçлӑхне ӳстерсех пыраççӗ. Колхозсенче, совхозсенче выльӑх-чӗрлӗх йышне ӳстереççӗ. Пирӗн çӗршывра ачасене те пуранма лайӑх: вӗсем пурте шкулсенче вӗренеççӗ.

26. **Пирӗн пахча.** Пахчари ӗçсем çуркунне пуçланаççӗ. Пахчара кишӗр-çарӑк, купӑста-хӑяр, чӗкӗнтӗр-кӑшман çитӗнеççӗ. Кишӗр-çарӑка юр кайсанах акмалла. Купӑста-хӑяра нумай шӑвармалла. Кӑшман-чӗкӗнтӗр таврашне кӑпӑшлатмалла.

## ЯПАЛА ЯЧӖСЕМ.

### § 7. Япала ячӗсем вӗçленни.

а) ***а, е сасӑсемпе пӗтекен япала ячӗсем камӑнлӑх, пару, тӑву падежӗсенче пулни.***

27. 1. Ула куракӑн пӗр сӑвӑ (*ваттисен сӑмахӗ*). 2. Тинӗсӗн вӗçӗ-хӗрри курӑнмасть. 3. Шӗшкӗн мӑйӑр, юманӑн йӗкел. 4. Совет Союзӗ çӗрӗн улттӑмӗш пайне йышӑнса тӑрать. 5. Эрнен тӑваттӑмӗш кунӗ юнкун. 6. Хурӑнӑн вулли шурӑ. 7. Чӗлхен шӑмми çук. 9. Ку кӗнекен хуплашки картинӑллӑ.

28. 1. Тимӗр кӗреçен аврине йывӑçран тунӑ. 2. Çырман юппи çырмаран пӗчӗкçӗ. 3. Ку кӗпен арки кӗске. 4. Пуканен кӗпи хитре. 5. Тӗвен курпунӗ пур. 6. Вутӑн алли вӑрӑм. 7. Ку чӳречен рамкисене сӑрланӑ. 8. Сӑпсан сӑнни вӑрӑм.

29. 1. Лашана утӑ тата сӗлӗ парӑççӗ. 2. Ӗнене утӑ тата чӗкӗнтӗр çитереççӗ. 3. Кӗнекене тирпейлӗ тытмалла. 4. Упана капкӑнпа тата пӑшалпа тытаççӗ. 5. Лашасене шӑварма çырмана анаççӗ. 6. Хулана автобус килчӗ. 7. Тӗнчене хӗвел çутатать. 8. Кӗвентене шыв çӗклеме тӑваççӗ. 9. Пӳрнескене çӗвӗ çӗленӗ чухне тӑхӑнаççӗ.

30. 1. Кӑмакана кирпӗчрен тӑваççӗ. 2. Кӗпене ситцӑран çӗлеççӗ. 3. Ачасем çырлана каяççӗ. 4. Лашана витене хупаççӗ. 5. Ӗнене кӗтӗве яраççӗ. 6. Урпа утмӑл кунта кӗрекене ларать. 7. Хуртсем вӗллене пушӑ тавӑрӑнмаççӗ. 8. Шӑнана эрешмен тытать. 9. Куркана витре патне çакаççӗ.

31. ***Суйласа çырмалли диктант.*** Шыва ӑçта яраççӗ? (витре). Мӗне сӗлӗ параççӗ? (лаша). Купӑстана ӑçта лартаççӗ? (пахча). Мӗне магазинта сутаççӗ? (кӗнеке). Мӗне çиппе çӗлеççӗ? (кӗпе). Ӳт певе çуса тасатма ӑçта каяççӗ? (мунча). Мӗне сӗтшӗн усраççӗ? (ӗне). Мӗне ӗçленӗшӗн параççӗ? (укçа). Мӗне каткара тӑварлаççӗ? (кӑмпа). Мӗне йывӑçран тӑваççӗ? (арча). Мӗне çӑм çиппинчен çыхаççӗ (чӑлха).

б) *у, ӳ сасăсемпе пĕтекен япала ячĕсем камăнлăх, пару, тăву падежĕсенче вĕçленни.*

32 Çыру. Эпĕ пичче патне çыру яма шухăшларăм. Çырăва чернилпа çыртăм. Çырăвăн адресне конверт çине тĕрĕс çыртăм. Çырăва почта ещĕкне ятăм. Çырăва илсен, пичче савăнĕ.

33. Çапăçу. Сталинград патĕнчи хаяр çапăçăва тĕнчипех пĕлеççĕ. Çĕнтерĕве эпир юн тăкса, паттăррăн çапăçса илтĕмĕр. Сталинград патĕнче нимĕçсен çухатăвĕ пысăк пулчĕ.

34. 1. Пĕлтерĕве пурте вулаççĕ. 2. Вĕренӳ пĕлĕвĕн тĕрĕслеве пуçланать. 3. Чĕнĕве пурте хапăл туса йышăнчĕç. 4. Пуçарăвăн лайăх енĕсем часах палăрчĕç. 5. Ĕçри çĕкленĕвĕн уссине кам пĕлмĕ./ 5. Вĕренĕвĕн çурçулĕ вĕçне çитет. 7. Хуплăва ашран тата çăнăхран тăваççĕ.

35. *Кирлĕ падежсене куçарса çырасси.*

Çыру—çырăвăн, çырăва. Пăру... Пелӳ... Вĕренӳ... Чĕнӳ... Кĕтӳ... Çыхăну... Хуплу... Пашалу... Перкелешӳ... Илтĕнӳ... Çĕкленӳ... Пуçару... Хускалу... Тапрану... Хĕвĕшӳ... Кăшкăрашу... Тиркешӳ... Тишкерӳ... Юптару...

36. Мĕне çăнăхран пĕçереççĕ? (Пашалу.) Тупмалли юмахсенче мĕне тĕл пулатпăр? (Юптару). Мĕне стена çумне çакнă? (Пĕлтерӳ). Мĕне ĕçсенчен куратпăр? (Пултару). Сурăхсене ăçта яраççĕ? (Кĕтӳ). Мĕне кĕтĕве яраççĕ? (Пăру). Мĕне марка çыпăçтарса яраççĕ? (Çыру). Мĕнĕн мăйраки ӳсмен? (Пăру). Стахановла мĕнĕн хумĕ сарăлчĕ? (Пуçару).

в) *ă, ĕ сасăсемпе пĕтекен япала ячĕсем камăнлăх, пару, тăву падежĕсенче вĕçленни.*

37. 1. Кашни аллăн пилĕк пӳрне. 2. Ĕç хыççăн тата апат çиес умĕн алла çумалла. 3. Тăллăн йăлмакĕ тата муклашки пур. 4. Тăлла сӳсрен е мучаларан яваççĕ. 5. Тĕррĕн эрешĕ тĕлĕнтерчĕ. 6. Тĕрре йĕппе тĕрлеççĕ. Сĕллĕн шерепи сапаланчăк. 7. Сĕлле колхоз амбарне хутăмăр. 8. Аттăн кунчисем те, пуçĕсем те çап-çутă. 9. Атта кремпа тасатаççĕ.

38. 1. Сăввăн йĕркине астăватăп. 2. Сăвва пăхмасăр калама вĕрентĕм. 3. Чĕлпĕре пĕккĕн ункинчен тиреççĕ. 4. Пĕкке йăмраран е хурамаран аваççĕ. 5. Йыттăн вырăнĕ пӳрт çумĕнчех. 6. Йытта кил сыхлама усраççĕ. 7. Кӳлĕ таврашĕнче хăях ӳсет. 8. Кӳлле карас ярса ĕрчетеççĕ. 9. Пуллăн вăлчи тутлă. 10. Пулăçă ирех пулла кайрĕ. 11. Туллăн пучахĕ шултăра. 12. Тулла пур колхозсенче те акаççĕ. 13. Тыррăн тухăçне хăпартар. 14. Тырра вăхăтра вырса илер.

39. **Тырăсем.** Колхоз уйĕнче тулă, сĕлĕ, пăрçа, ыраш, урпа çитĕнеççĕ. Туллăн пучахĕ алса пӳрнески пек вăрăм. Тулла та, сĕлле те çумкурăкĕсенчен тап-таса çумласа тасатнă. Туллăн пучахĕсене тăккаласа хăварар мар.

40. **Йытă.** Йыттăн хӳри кукăр. Йытта кил сыхлама усраççĕ. Йытă шăмма кышлать. Хăшпĕр йытă тилле, кашкăра тата мулкача тытать. Йыттăн усси пысăк.

41. **Пулă.** Пирĕн шывра уланкă, çăрттан, шăла, çĕкĕ тата ытти пулăсем те пур. Пуллăн апачĕ: вĕтĕ пулăсем, ăмансем, хурткăпшанкăсем тата шыври ытти чĕрчунсем. Пулла вăлтапа, сĕре-

кепе, атмапа, шакăпа тытаççĕ. Шакка хăва хуллинчен çатан кунтă пек, варинкке евĕрлĕ тăваççĕ.

42. **Тилĕ.** Тиллĕн хўри çăмламас. Тилле сунарçăсем пăшалпа тата йытăпа тытаççĕ Тилĕ чăхха юрататъ. Тилĕ питĕ чее. Тилле хăшпĕр йытă кăна тытма пултаратъ. Тиллĕн тирĕнчен çухасем тăваççĕ, пальтосем çĕлеççĕ.

43. Пулăçă мĕне вăлтаран вĕçерет? (пулă). Сунарçă мĕне йĕрлет? (тилĕ). Мĕне кил хурал тăма усраççĕ? (йытă). Мĕне йăмраран аваççĕ? (пĕкĕ). Мĕне инкубаторпа кăлараççĕ? (чĕпĕ). Мĕне вăрманта касаççĕ? (вутă). Мĕне çăмарташăн тата ашшăн усраççĕ? (чăхă). Мĕне кремпа тасатаççĕ? (атă). Мĕне хăлхапа илтетпĕр? (сасă).

44. 1. Сăска пулă тытма тăваççĕ. 2. Пăчка вутă татма тыткалаççĕ. 3. Шĕшке мăйăрĕшĕн юратаççĕ. 4. Тимĕрçе мăлатук кирлĕ. Сунарçа йытă тата пăшал кирлĕ. 5. Уланка пулăçă тытнă. 6. Тискер кайăксем шăрша аякран сисеççĕ. 7. Вутă-шанка вăрмантан турттараççĕ.

45. *Сак сăмахсене камăнлăх, пару, тăву падежĕсенче лартса çырмалла.* Çĕçĕ—çĕççĕн, çĕççе. Юрă—... Тупă... Çанă... Кĕршĕ... Пыршă... Тенкĕ... Сăнă... Кўлĕ... Çĕрĕ... Чĕлĕ... Килĕ... Кĕрĕ... Пăкă... Шашкă... Кулă... Тапă... Çапă... Çўпĕ... Йĕлтĕрçĕ... Кĕвĕ... Тĕвĕ... Çĕвĕ... Йăлă...

г) ***и, й сасăсемпе пĕтекен япала ячĕсем камăнлăх, пару, тăву падежĕсенче вĕçленни.***

Коммунистсен партийĕн членĕсем çирĕп те пур енчен те примерлă. Партие чи хастарлă рабочисене илеççĕ.

46. 1. Тăрийĕн юрри çуркунне янăратъ. 2. Тăрие мартăн вĕçĕнче кĕтсе илтĕмĕр. 3. Пăрийĕн пучахĕ шултăра. 4. Пăрие çуркунне акаççĕ. 5. Пăшийĕн мăйраки йўплешкеллĕ. 6. Пăшие тытма юрамастъ. 7. Çерçийĕн çăмарти чăпар. 8. Çерçие чĕкеçсем парăнтарчĕç. 9. Тăпра сийĕн айĕнче тепĕр си пур. 10. Пĕр сие сăнаса пăхрăмăр.

47. 1. Уйăн вĕçĕ-хĕрри курăнмастъ. 2. Колхозниксем уя тислĕк тăкаççĕ. 3. Вăя хĕрхенмесĕр ĕçле. 4. Майăн пĕрремĕшне çулленех уявлатпăр. 5 Пĕр пайăн çуррине Сергее пачĕç. 6. Пая кĕрекенсем тăваттăн. 7. Телейĕн çăлкуçĕ ĕçре тата кĕрешўре. 8. Пирĕн телее тырă ăнса пулчĕ.

48. Мĕне уя акаççĕ? (пăри). Мĕне тўпере куратпăр? (тăри). Тырра ăçта акаççĕ? (уй). Мĕне тытма юрамастъ? (пăши). Кушак мĕне тытатъ? (шăши). Мĕне сивĕре пурăнма йывăр? (çерçи).

д) ***Япала ячĕсене -та, -те, -тан, -тен аффикссемпе çырасси.***

49. **Вăрман.** Вăрманта хурăн, юман, ăвăс, хыр, хурама тата ытти йывăççем те ўсеççĕ. Хурăнтан урапа кўпчекĕ тата кăмрăк тăваççĕ. Юмантан катка-пичке, тукăн, çуна тупанĕ тăваççĕ. Хыртан пўрт-çурт тăваççĕ. Хырта сухăр нумай.

50. **Хир.** Хирте ыраш, тулă, вир, хуратул, пăрçа тата ытти тырăсем те ўсеççĕ. Виртен кĕрпе тăваççĕ. Хуратултан та кĕрпе тăваççĕ тата çăнăх авăртаççĕ. Хирте колхозниксем тăрăшса ĕçлеççĕ. Хирте тырă кашни гектартан виççĕр тонна туса илеççĕ.

51. **Шăши.** Шăши хирте пурăнвă. Ун патне пĕрре ялтан шăши пырать. Шăши хăнана тулă, пăрçа, ыраш çитерет. Ялти шăши хирте пурăнма килĕшмест. Вăл хирти шăшие хăй патне хăнана чĕнет. Хиртен яла каяççĕ. Ялта тĕпсакайне кĕрсе вырăнаçаççĕ. Çĕрле пĕр хушăкран пӳлĕме тухаççĕ те сĕтел çине хăпараççĕ. Тултан çын кĕрет те, шăшисем тĕпсакайне тарса анаççĕ.

## § 8. Вĕреннине аса илмелли ĕçсем.

52. **Пулла кайни.** Эпир пиччепе пулла кайрăмăр. Ыраш пуссипе тухрăмăр. Çырма хĕррине çитрĕмĕр. Йĕри-тавра шăп. Хушăран карăш кăна каршлатать. Çырма хĕрринче хăмăш чăштăртатать. Часах мана кăртăш лекрĕ. Пиччен вăлти çинче пысăк çупах çатăлтататъ. Çĕр иртсе кайни те сисĕнмерĕ. Хĕвел те йăлтăртатса тухрĕ. Пичче çупа кулач кăларчĕ те, эпир ирхи апат çирĕмĕр. Пулă питĕ нумай тытрăмăр, вĕттисене илмерĕмĕр те.

53. **Çуркунне.** Вырăн-вырăн çĕр юртан тасалнă. Ялта шыв шăнкăртатса юхать. Йăмрасем çинче хура кураксем кăраклатаççĕ. Ирсенче хире шурă тĕтре хупласа тăрать. Тӳпере тăри юрри янăрать. Халĕ хирте те пахчара та ĕç питĕ нумай. Ачасем урамран кĕме те пĕлмеççĕ. Улмуççисен папкисем кӳпшекленеççĕ. Хурăнпа шĕшкĕ кăчкă кăлараççĕ. Тискер кайăк та, вĕçен кайăк та, пулăсем те, хурт-кăпшанкăсем те çуркунне ирĕккĕн сывлаççĕ. Халĕ ĕç лашана та, трактора та çитет. Улăхра кĕтӳçĕ шăхличĕ калать.

54. **Колхоз.** Ял хĕрринче колхоз вити. Витере пирĕн лашасем тăраççĕ. Витепе юнашарах сарай. Сарая утă хурса усратпăр. Сарай хыçĕнче пахча пуçланать. Пахчана çĕрулми, купăста, хăяр, сухан, кишĕр лартрăмăр. Пирĕн колхоз çинчен хаçатра çырчĕç. Вăл республикăри колхозсенчен чи лайăх колхоз шутланать.

## § 9. *С* сасă *ш* сасă хыççăн тăнă чухне ш саса пек илтĕнни, *ç* сасă хыççăн тăнă чухне *ç* сасă пек илтĕнни, ăна тĕрĕс çырасси.

55. 1. Акăшсем шывра ишеççĕ. 2. Чĕкеçсем йăва çавăраççĕ. 3. Нимĕçсене Совет çарĕ парăнтарчĕ. 4. Хутаçсене çула кайма кирлĕ япаласем чикрĕмĕр. 5. Каçă урлă касса кайрăмăр. 6. Çуркунне шăнкăрчсем вĕçсе килеççĕ. 7. Йывăçсем вăрманта ӳсеççĕ. 8. Чăвашсен тĕп хули—Шупашкар. 9. Юлташсене яланах пулăшас пулать.

56. **Çырлана кайни.** Çулла. Çырла пиçсе çитрĕ. Эпир юлташсемпе вăрмана çырлана кайрăмăр. Çулпа калаçса утатпăр. Çул хĕрринче пилешсем куртăмăр. Тĕрлĕ лĕпĕшсем сывлăшра вĕлкĕшеççĕ. Уçланка та çитрĕмĕр. Пиçсе çитнĕ çырласене татма тытăнтăмăр.

57. Чăрăш—чăрăшсем. Юлташ... Чăваш... Пурăш... Акăш... Тупăш... Пилеш... Уртăш... Пĕлĕш... Лĕпĕш... Терĕш... Куç...

Лаç... Каç... Хěç... Каврăç... Хутаç... Пуç... Вěç... Тавраш... Чěкеç... Чăхăмăç... Тěш... Апаш... Урпаш... Кӳкеç... Тивěш... Хурăнташ... Юлташ... Тултармăш... Тивěç... Тетěш .. Пăрăç...

58. Каç—каçса. Куç... Леç... Перкелеш. . Виç... Калаç... Хуç... Кармаш... Пулăш... Туртăш... Аш... Тăрмаш... Кěрмеш... Пěрлеш... Пиç... Уç... Тăрăш... Хутăш... Аташ... Йӳç... Ерěç... Вěç... Çыпăç... Килěш... Хуш... Паллаш... Чалăш...

59. 1. Акăшсем кěркунне вěçсе каяççě. 2. Вăрманта йывăçсем пěлěтелле кармашаççě. 3. Кěркунне пилешсем пиçсе çитеççě 4. Чěкеçсем çӳле вěçсе хăпарчěç. 5. Тăрăшса вěренекен юлташсене преми пачěç. 6. Лаçсенче çулла апат пěçереççě. 7. Эпир хěлле çил-тăман хыççăн вар пуçěнчен аран ашса тухрăмăр. 8. Урăх аташса каймарăмăр. 9. Вăрçăра çапăçса вилнě çынсен ачисене государство пулăшса тăрать. 10. Библиотекăран илнě кěнекене вăхăтра леçсе пар.

60. **Ěлěкхипе хальхи.** Патша вăхăтěнче Российăра выçса ларакан чухăнсем нумай пулнă. Пурăнăçсем япăх пулнипе нумайăшě Сибире куçса кайнă. Вěсене унта та савăнăç кěтмен. Асап-тертсем пěрлех пынă. Октябрьти революци хыççăн çеç пурăнăç йăлтах улшăнчě. Тăшмансене хирěç вирлěн кěрешсе пынипе кăна çěнтерме пултартăмăр. Октябрьти революцие тунă чух рабочисемпе хресченсене Ленинпа Сталин юлташсем ертсе пычěç.

61. **Аслă Отечественнăй вăрçăра.** 1941-мěш çулта нимěçсем пирěн çěршыва вăрă-хурахла тапăнса кěчěç. Совет çыннисем пуççене усмарěç. Хаяр тăшмана хирěç вăрçса, унăн вăйне иксěлтерсех пычěç. Тыл фронта пулăшса тăчě. Партизансем, тăшман тылěнче çапăçса, тăшман вăйне хавшатрěç. Мускав патěнче, Сталинград патěнче тата ытти хуласем патěнче те хаяррăн çапăçса, тăшман вăйне çапса хуçса, нимěççене хěвеланăçнелле хăваларěç. Юлашкинчен Берлин хулине те çитсе кěчěç.

## § 10. *лă, лě* аффиксла палла ячěсене çырасси.

62. 1. Чěпěллě хур урамра чěпписене ертсе çӳрет. 2. Усăк хăлхаллă йытă ăслă куçěсемпе хуçи çине пăхать. 3. Вăрăм уралла тăрнасем пăрça çине вěçсе анчěç. 4 Ěнеллě колхозниксем сěт-çуран, юр-вартан татăк пурăнмаççě. 5. Тěрěллě шурă кěпесене çу кунěнче тăхăнаççě. 6. Çуллă пăтта яшка хыççăн çиетпěр.

63. **Пирěн ял.** Пирěн ял çырмаллă вырăнта. Пирěн çырма пулăллă. Пирěн урам йăмраллă. Пирěн таврара кӳлěсем те сахал мар. Пирěн колхозра садлă çынсем нумай. Пирěн çырма хěрринче хăва ӳсет.

64. **Пирěн вăрман.** Пирěн ял таврашěнче çулçăллă вăрман ӳсет. Çуллахи хěвеллě кунсенче ачасем вăрманалла утаççě. Вăрманта вěçен кайăксем илемлě юрăсем юрлаççě. Ачасем хăйсем сăвăллă такмаксем, юрăсем янратаççě. Мěн чухлě хаваслăх, савăнăç çуллахи кунсенче.

65. Машина—машинăллă. Сеялка... Веялка... Молотилка... Çырма... Тăмра... Вăчăра... Тиха... Пахча... Ача... Шěшкě... Перо... Вěрене... Хурама... Çатма... Хупăлча... Вăлча... Кунча...

Сăпса... Тăпса... Алса... Пăру... Ĕне... Йĕлме... Путене... Кăрк-ка... Тăрна... Пусма... Атма... Хӳме...

66. Пура—пуралла. Атă... Çурла... Йăмра... Пăта... Тăрă... Арпа... Мăйрака... Туна... Кĕсле... Чĕрне... Пĕрне... Çуна... Урапа... Хăлха... Тута... Ту... Ура... Алă... Тăлă... Çапă... Çĕвĕ... Кĕвĕ... Çĕçĕ... Пуртă... Шăмă... Сĕлĕ... Тулă... Пăри... Пăрçа... Урпа... Кĕнеке... Юпа...

## § 11. Вĕреннине аса илмелли ĕçсем.

### (Япала ячĕсем тата паллă ячĕсем)

67. **Ирхине.** Кăвак пĕлĕте тата уçă сывлăша ытараймасăр эпĕ тула тухрăм. Çулçăллă вăрман еннелле утатăп. Шăрçаллă сывлăм ылттăн-кĕмĕл пек йăлтăртатать. Акă çулçăллă вăрман. Уçă та иккен вăрман сывлăшĕ. Çамрăк çулçăсем вĕлтĕртеткелеççĕ. Уç-ланкăра чечеклĕ курăксем нумай. Вăрманта шăпчăк юрăсем шăрантарать.

68. **Колхоз хирĕнче.** Колхоз хирĕнче шерепеллĕ сĕлĕ, хутаçлă пăрçа, пучахлă тулă, ылттăн ыраш сарăлса ларать. Юр пек шурă хуратул çинче ĕçчен хуртсем сĕрлеççĕ. Пиçсе çитнĕ ыраша колхозниксем вырма, çулма тытăннă. Колхозниксен ăмăртуллă ĕçĕ тапранса кайнă. Ыраш пуссинче часах шĕвĕр тăрăллă çĕмелсем курăна пуçларĕç.

69. **Пирĕн шкул.** Совет влаçĕ пулнă хыççăн çеç пирĕн ялта шкул уçнă. Ĕлĕк шкула кӳршĕ яла çӳренĕ. Пирĕн шкулта классем аслă, çутă тата ăшă. Шкул библиотекинче интереслĕ кĕнекесем пур.

70. **Ĕлка.** Хĕл-мучи çиленсе, хаярланса çӳрет. Вăл çитмен кĕтес те юлмасть. Çырмасенче алăсăр, пуртăсăр çирĕп кĕперсем хывать. Çĕрле шакка-шакка çӳçентерет. Якур пичче вăрмантан лăсăллă, шĕвĕр çĕлĕк пек тăрăллă чăрăш касса килчĕ. Чăрăша класа вырнаçтарса лартрĕç. Ăна хитре капăрлатрĕç. Шур сухаллă, туяллă хĕл-мучине те чăрăшпа юнашар тăратрĕç. Юрăллă, ташăл-лă кучченеçлĕ, савăнăçлă ĕлка çитрĕ.

71. **Аслатиллĕ çумăр.** Янкăр уяр кун. Тӳперен хĕвел ачашшăн лăпкать. Пăчă. Хĕвеланăçĕнче пĕр татăк хура пĕлĕт курăнчĕ. Вăл сарăлса, ӳссе пычĕ. Хура пĕлĕт çинче хуçланчăк çиçĕм явкала-нать, таттисĕр аслати кĕмсĕртетет. Пĕр кас тусанлă çил килчĕ. Йывăç тăррисем чӳхенеççĕ. Шултăра çумăр пĕрчисем шăп-шап ӳккелеççĕ. Çиçĕм ялкăшрĕ. Кĕрĕслеттерсе аçа çапрĕ. Вăйлă çумăр чашлаттарать. Лупашкасенче шыв кĕрлесе юхать. Пĕр самантрах çырмари шыв çурхи шыв пекех тулчĕ. Аслатиллĕ çумăр иртрĕ. Хĕвел каллех ялтăрать.

## § 12. Пайăр ятсем.

72. **СССР-ти чи паллă шывсем:** Атăл, Дон, Днепр, Нева, Енисей, Обь, Лена, Амур.

73 **СССР-ти паллă кӳлĕсем:** Ладога, Онега, Илмень кӳлли-сем, Шурă кӳлĕ. Онега кӳллинчен Свирь шывĕ юхса тухать. Вăл

Ладога кӳллине юхса кӗрет. Ладога кӳллинчен Нева шывӗ юхса тухать. Вӑл Финн заливне юхса кӗрет. Финн заливӗ—Балтика тинӗсӗн пайӗ, Балтика тинӗсӗ—Атлантика океанӗн пайӗ.

74. **Челюскинецсен чаплӑ похочӗ.** „Челюскин" пароход Çурçӗрти Поляр тинӗсӗпе Ленинградран Владивостока кайнӑ. Экспедицин начальникӗ—Шмидт профессор, пароход капитанӗ Воронин юлташ пулнӑ. Парохода пӑрсем хӗстерсе лартса шӑтарнӑ та, вӑл путнӑ. Экспедицири 104 çын пӑр çине тухса ӗлкӗрнӗ. Вӗсем пӑр çинче 2 уйӑх пурӑннӑ. Вӗсене пирӗн чаплӑ лӗтчиксем: Молоков, Водопьянов, Леваневский, Доронин, Ляпидевский, Каманин тата Слепнӗв çӑлнӑ. Совет влаçӗ хастар лӗтчиксене Совет Союзӗн Геройӗ ятне парса тата Ленин орденӗ парса наградӑларӗ, челюскинецсене пурне те Хӗрлӗ Çӑлтӑр орденӗ пачӗ.

75. **Сталин ячӗпе тӑракан колхоз.** Пирӗн ял Чӑваш республикинчи, Вӑрнар районӗнчи—Кольцовка ялӗ. Пирӗн ялта пурте, кулаксенчен пуçне, Сталин ячӗпе тӑракан колхоза кӗчӗç. Пиртен инçе мар „Ландыш", Молотов ячӗпе тӑракан, Крупская ячӗпе тӑракан, Ворошилов ячӗпе тӑракан, „Путиловец", „Трудовик", „Майӑн 1-мӗшӗ", „Çиçӗм" колхозсем; Хура Çырма, Кушлавӑш, Мамалай, Упакасси, Утик, Ершипуç ялӗсем пур.

Пиртен çурçӗр еннелле 11 километрта Вӑрнар станцийӗ пур. Шупашкар хули çитмӗл пилӗк километрта.

# ГЛАГОЛ.

## § 13. Хальхи вӑхӑтри виççӗмӗш сӑпатри пӗреллӗ хисепри глаголсен *ать, ет* аффиксӗсем.

76. **Çуркунне.** Ӑшӑ çуркунне çитет. Шурӑ юр васкаса ирӗлет. Шӑнкӑртатса шыв юхать. Йӑмра кӑчкӑ кӑларать. Садра шӑпчӑк юрлать. Вӗллерен хурт вӗçсе тухать. Çурхи чечексем çине ларать, пыл шырать. Хӗвел куллен çӳлерех хӑпарать. Колхоз çуракине хатӗрленсе çитет. Ыран-паян ака-суха тапранать.

77. **Карук.** Карук тӑхӑр çулта. Вӑл шкула çӳрет. Шкулта вӑл лайӑх итлесе ларать. Карук тӑватӑ сехет вӗренет те киле таврӑнать. Килте апатланать, унтан вӑл урама йӗлтӗрпе ярӑнма тухать. Каçпа Карук вулать, çырать, задача шутлать. Тетрачӗсене, кӗнекисене Карук таса тытать. Вӑл вӗсене шкула илсе кайма каçах сумкине чиксе хурать.

78. **Хӗрарӑмпа чӑхӑ.** (Юптару). Пӗр чӑх кулленех пӗрер çӑмарта тӑвать. Хӗрарӑмӑн чӑхха çӑмарта тата ытларах тутарас килет. Вӑл чӑхха ытларах çитерет. Чӑххи мӑнтӑрланса çитет. Çӑмарта тума пачах пӑрахать.

79. **Аслатиллӗ çумӑр.** Çулла эпӗ вӑрмана кӑмпа татма кайрӑм. Кӑмпа татса çитертӗм те киле кайма тӑтӑм. Сасартӑк çанталӑк улшӑнчӗ. Хӗвеле пӗлӗтсем хупласа илчӗç. Çиçӗм çиçет. Аслати халтӑртатать. Пӗр касӑ çил персе çитрӗ. Çумӑр чашлаттарать. Эпӗ ватӑ юман кутне лартӑм. Çиçӗм ялтӑр! турӗ те, çавӑнтах

аҫа ҫапрӗ. Манӑн пуҫа темӗн ҫапӑнчӗ. Эпӗ ӑнсӑр пулса ӳкнӗ. Ӑна кӗрсессӗн, пӑхатӑп—ҫанталӑк йӑл-йӑл кулать. Ҫулҫӑсем ҫинче ҫумӑр тумламӗсем шӑрҫаланаҫҫӗ. Вӗҫен кайӑксем юрлаҫҫӗ. Ман пуҫра темле мӑкӑль пур. Ватӑ юман мӑкӑрланать. Мана юман чӗлпӗкӗ пуҫран лекнӗ иккен. Эпӗ кӑмпана илтӗм те килеллле утрӑм.

80. **Кӑвакарчӑн.** Пӗрре пирӗн отряд разведкӑна каять. Ӑна тӑшман ҫавӑрса илет. Раци арканать. Утпа та, ҫуран та тӑшман тухма памасть. Йытта ярас, вӑл та часах тӑшман аллине лекме пултарать. Лопатин лейтенант шухӑшлать-шухӑшлать те кӑвакарчӑна ярать. Хамӑрӑннисем патне ҫитерме кирлӗ хута унӑн ури ҫумне ҫыхать. Кӑвакарчӑн виҫҫӗр метр ҫӳллӗш вӗҫсе хӑпарать те виҫӗ хут ҫаврӑнать. Унтан хӗвелтухӑҫнелле, хамӑрӑннисем патне, вӗҫет. Аялта шурлӑх, хура вӑрман сарӑлса выртать. Ҫӳлте хурҫӑ кайӑксем вӗҫеҫҫӗ.

Кӑвакарчӑна хурчӑка курать. Вӑл кӑвакарчӑна тытма тӑрать. Кӑвакарчӑн унран пӑрӑнать. Хурчӑка кӑвакарчӑна татах хӑвалать. Кӑвакарчӑнӗ татах пӑрӑнма тытӑнать, анчах ӑна хальхинче самолёт чӑрмантарать. Хурчӑка кӑвакарчӑна ҫурӑмран пыра-пыра сӑхать. Кӑвакарчӑнӑн тӗкӗ вӗҫет. Кӑвакарчӑн суранланать те чӑтлӑха ӳкет. Вӑл пысӑк асаппа хамӑрӑннисем патне вӗҫсе ҫитет. Ӑна тухтӑр ҫынна пӑхнӑ пекех пӑхать. Пӗр уйӑхран кӑвакарчӑн сывалать.

81. **Тӗлӗнмелле чӗпӗ.** Урине инке чӑхӑ айне ҫӑмартасем хурать. Чӑххи пусма ларать те чӗпӗсем кӑларать. Пӑхать —пӗр чӗппи ыттисем пек мар: кӗскеураллӑ, сарлака сӑмсаллӑ.

Пӗрре чӑхӑ чӗпписене пӗве хӗррине ертсе каять. Вӑл пӗве хӗрринче чакаланать, ӑмансем шырать, чӗпписене йыхӑрать, вӗсене ӑман шырама вӗрентет. Пӗр чӗппи амӑшӗ патне пымасть. Шыв хӗррине ҫитет те шыва сикет. Чӑхӑ хӑраса ӳкет, кӑтиклеме тытӑнать. Сарлака сӑмсаллӑ чӗппи шывра ярӑнать те ярӑнать.

Чӑх-чӗпсене хурчӑка тапӑнмасть-и тесе, Урине инке чӗпписене пӑхма тухать. Шывра кӑвакал чӗппи ишнине курать. Хӑй асӑрхамасӑр чӑх айне кӑвакал ҫӑмарти хунине тин сисет.

82. Тимӗрҫӗ тимӗре мӗн тӑвать? (*шакка*). Колхозник хирте (*тырӑ выр*). Ача кӗнеке (*вула*). Тракторист трактора мӗн тӑвать? (*юса*). Тӑри тӳпере мӗн тӑвать? (*юрла*). Лаша витере мӗн тӑвать? (*кӗҫен*). Автан кашта ҫинче мӗн тӑвать? (*авӑт*). Рабочи заводра мӗн тӑвать? (*ӗҫле*). Кӗркури урамра мӗн тӑвать? (*выля*). Колхозник йӗтем ҫинче мӗн тӑвать? (*тырӑ сӑвӑр*). Самолёт ҫӳлте мӗн тӑвать? (*вӗҫ*). Кулине мӗн тӑвать (*кӗпе ҫӗле*). Ванюк пуртӑпа вутӑ мӗн тӑвать? (*ҫур*).

83. Ҫыр—ҫырать. Вула... Лар... Тӑр... Хур... Итле... Ут... Ӗҫле... Кала... Юрла... Ҫутат... Шурат... Хӑпар.. Шӑвар... Кӑшкӑр... Хуп... Туп... Савӑн... Пӑрӑн... Ывӑн... Илт... Ҫи... Вырт... Кӑвакар.. Ҫумла... Тӑрӑш... Мухта... Тӳле... Тӑлла... Хӑрат... Кӗмсӗртет... Шапӑртат... Чашкӑр... Тулхӑр... Тыт...

84. **Хӗл.** Ҫанталӑк сивӗтет. Шыв шӑнать. Ӗне ӑшӑ витере тӑрать. Ҫил-тӑман тапса тухать. Кӗртсем хыва-хыва лартать. Мулкач ҫӗрле колхоз анкартине пырать, хӑй валли апат шырать.

## § 14. Хальхи вăхăтри виççĕмĕш сăпатри нумайлă хисепри глаголсен *аççĕ, еççĕ* аффиксĕсем.

85. 1. Çавапа утă çулаççĕ. 2. Жнейкăпа тырă выраççĕ. 3. Мăлатукпа тимĕр туптаççĕ. 4. Йĕппе çĕвĕ çĕлеççĕ. 5. Пăчкăпа вутă татаççĕ. 6. Витрепе шыв ăсаççĕ. 7. Плугпа суха сухалаççĕ. 8. Сӳрепе сӳре сӳрелеççĕ. 9. Поездпа, пароходпа, самолётпа инçете çӳреççĕ. 10. Кăвара турчкапа туртаççĕ. 11. Урапа утаççĕ, алăпа ĕçлеççĕ. 12. Чĕлхепе калаçаççĕ, хăлхапа итлеççĕ. 13. Куçпа кураççĕ. 14. Сăмсапа шăршлаççĕ.

86. **Àслă шăши.** Кушак шăшисене тухса çӳреме те памасть. Кашни кун тăват-пилĕк шăши тытать. Капла пурăнса пулмасть. Шăшисем кушакран хăтăлмалли май шыраççĕ. Пĕрре шăшисен пуху пухăнать. Àслă шăши калать: „Кушак мăйне шăнкăрав çакса ярас пулать. Вара эпир кушак килнине сисĕпĕр",—тет. Анчах нихăшĕ те кушак мăйне шăнкăрав çакма хăяймасть.

87. **Ĕççийĕ.** Тырă вырнă вăхăт—колхозра чи хĕрӳ вăхăт. Халĕ кашни минута, кашни сехет хаклă. Вăхăтра вырмасан, тырă тăкăнма, сая кайма пултарать. Тырă тăкăнсан, ĕçлени харама каять. Çавăнпа та малта пыракан колхозсенче уй-хир ĕçне питĕ ир, хĕвел тухичченех, тухаççĕ, хирти ĕçрен хĕвел ансан тин кĕреççĕ. Вĕсем халĕ пĕр минута та сая ямаççĕ: пĕр-пĕринпе тата бригадăпа бригада ăмăртаççĕ, çанна тавăрса ĕçлеççĕ.

88. **Колхозра.** Колхозниксем тырă тухăçне хăпартаççĕ. Вĕсем хĕлле юр тытаççĕ. Уй-хире тислĕк тăкаççĕ, тĕрлерен удобренисем сапаççĕ. Акмалли вăрлăха тасатаççĕ, формалинпа çăваççĕ, шултăра вăрлăх акаççĕ. Çере тарăн та шăйрăк хăвармасăр сухалаççĕ. Шăтнă тырă-пулла çумкурăксенчен тасатаççĕ. Пур ĕçе те вăхăтра туса пыраççĕ.

89. ***Творчески диктант.*** Темăсем: а) **Çуркунне колхозра.** С ă м а х с е м: юсаççĕ, хатĕрлеççĕ, каяççĕ, тасатаççĕ, тытăнаççĕ, сухалаççĕ, сӳрелеççĕ, акаççĕ, лартаççĕ, кăпăшлатаççĕ, шăвараççĕ, çумлаççĕ.

ă) **Вăрманта.** С ă м а х с е м: ырă шăршă сараççĕ, пиçеççĕ, шыраççĕ, кăшкăраççĕ, тытаççĕ, чĕвĕлтетеççĕ, кăраклатаççĕ, авăтаççĕ, кăвиклетеççĕ, чăйлаççĕ, шатăртатаççĕ, лăпсăртатаççĕ, хĕрелеççĕ.

## § 15. Хальхи вăхăтри иккĕмĕш сăпатри нумайлă хисепри глаголсене çырасси.

90. **Шкул ачисем.** Эсир ир тăратăр, сивĕ шывпа пит çăватăр, таса алшăллипе пит шăлатăр... Форточка уçатăр, уçă сывлăша пӳлĕме кĕртетĕр. Кĕнеке илетĕр, уроксене тепĕр хут пăхса тухатăр. Кĕнекесене, тетрадьсене хутаçа чикетĕр, шкула каятăр. Шкулта хăвăр класа кĕретĕр, вырăна ларатăр, урок пуçланасса кĕтетĕр.

91. **Рабочипе хресчен.** Эпир ялта пурăнатпăр. Эсир хулара пурăнатăр. Эпир колхозра ĕçлетпĕр. Эсир заводра ĕçлетĕр. Эпир вăйлă тырă-пулă çитĕнтеретпĕр. Эсир машинăсем тата ытти таварсем туса паратăр. Эпир ăмартса ĕçлетпĕр. Эсир те ăмăртатăр,

таварсене нумай тата паха туса кăларатăр. Рабочипе хресчен, ялпа хула пер-пĕринпе тачă çыхăнса пурăнать.

92. **Çулла.** Ирех тăратăр. Апатланатăр та пĕрне илсе вăрмавалла утатăр. Ыраш пуссинчи пĕчĕк сукмакпа пыратăр, ирхи уçă сывлăшпа сывлатăр. Курăк çинчи сывлăм шăрçисене куратăр. Чечексен шăршине туятăр. Вăрмана çитетĕр. Вĕçен кайăксен юррисене итлетĕр. Уçланкăра хĕрелнĕ çырласем тупатăр. Пĕрнене татса тултаратăр. Тулли пĕрнепе киле таврăнатăр.

93. **Эсир юрла** (Эсир юрлатăр). Эсир калаç... Эсир ĕçле... Эсир çыр... Эсир вула... Эсир итле... Эсир кур... Эсир ут... Эсир тăрăш... Эсир пулăш... Эсир савăн... Эсир ĕмĕтлен... Эсир ĕçле... Эсир тĕрле... Эсир хур... Эсир иш... Эсир чăм... Эсир кул... Эсир выля... Эсир лар... Эсир пупле... Эсир юса...

## § 16. Хальхи вăхăтри пĕреллĕ хисепри виççĕмĕш сăпатри пулманнине пĕлтерекен *масть, месть* аффиксем.

94. 1. Вутпа выляма юрамасть. 2. Вăрмана вутă никам та турттармасть. 3. Çăлтăрсене никам та шутласа кăлараймасть. 4. Çупа шыв хутшăнмасть. 5. Чекеç пĕччен вĕçсе килмест. 6. Ĕç куçа йÿçĕхтермест. 7. Ўркенни тăрантармасть. 8. Вутсăр тĕтĕм тухмасть. 9. Тутăх тимĕр йăлтăртатмасть. 10. Кам ĕçлемест, вăл çимест. 11. Алара шыв тăмасть. 12. Юрăран сăмах тухса ÿкмест. 13. Çăрттан тинĕсрен хăрамасть. 14. Çăла никам та шыв ямасть.

95. **Тупмалли юмахсем.** 1. Утмасть, хăй çÿрет. (*Алăк*). 2. Хура йытă çакăнса тăрать, вĕрмест, çыртмасть, никама киле кĕртмест. (*Çăра*). 3. Хут пĕлмест, ĕмĕрне çырать. (*Перо*). 4. Сăмса тавра явăнать, алла лекмест. (*Чечек шăрши*). 5. Çуначĕ пур—вĕçмест, ури çук—тыттармасть. (*Пулă*). 6. Çуначĕсемпе лăпăстатать, вĕçсе хăпараймасть. (*Сил арманĕ*). 7. Нимĕн те ыратмасть, пĕрмай ахлатать. (*Сысна*).

96. **Кĕнекене упра.** Кĕнекене хутпа чĕрке, вара вăл вараланмасть. Çинĕ вăхăтра кĕнеке вулама юрамасть: кĕнеке лапăртанать. Кĕнеке ăшне карандашсем, ручкăсем хума юрамасть, кĕнеке хуплашки татăлать. Кĕнеке çине паллăсем ан ту. Кĕнекене ан хуçлат.

97. Лар-лармасть. Çĕр... Кул... Кил... Çит... Тыт... Кур... Ут... Хут... Пĕл... Ўс... Тÿс... Чăт... Леç... Шăн... Ăшăн... Витĕн... Чĕн... Ыткăн... Çитĕн... Шурал... Тăрăл... Ватăл... Çутăл... Тутăх... Тыт... Курăн... Мухтан... Ывăн... Чарăн... Пÿл... Илт... Тух... Тар... Пăрăн.. Тат... Татăл...

98. **Ту çинче тата аялта.** Аялта, айлăмра, хĕрсех çуркунне тапранать. Çÿлте, ту çинче, юр ирĕлмест, курăк ешĕрмест, чечек курăнмасть. Кайăк сасси илтĕнмест. Кунта çуркунне çитмен-ха.

99. ***Творчески диктант.*** Тема: Шкул. Сăмахсем: сиктермест, урокра калаçса лармасть, учитель сăмахĕсене лайăх итлесе ларать, унталла-кунталла пăхмасть, юлташне чăрмантармасть т. ыт. те.

## § 17. Иртнӗ вӑхӑтри глаголсенче икӗ *н* ҫырасси.

100. 1. Ачасем ёлкӑра савӑннӑ. 2. Пахчара помидор ҫитӗннӗ. 3. Хур-кӑвакал шывра чӳхеннӗ. 4. Кашкӑр вӑрманалла сулӑннӑ. 5. Уроксем тӑхӑр сехетре пуҫланнӑ. 6. Атӑл пӑрӗ апрель уйӑхӗн варринче тапраннӑ. 7. Пакша йывӑҫ хӑвӑлӗнче пурӑннӑ. 8. Аякра вӑрман курӑннӑ. 9. Поезд сасси илтӗннӗ. 10. Сивӗпе тимӗр пӗрӗннӗ. 11. Лаша тихишӗн кӗҫеннӗ. 12. Ачасем шкулта кунне тӑватӑ сехет вӗреннӗ.

101. **Путене.** Сарӑ тулӑ хушшинче пӗчӗк путене ырӑ курса пурӑннӑ. Вӑл тулӑ ҫисе савӑннӑ. Путене пурнӑҫне шурлӑхри карӑш хапсӑннӑ. Путене мӑнтӑрланнӑ, ҫӗр ҫумӗнчен аран тапраннӑ. Путене йӑвине сунарҫӑ сӑнанӑ. Путене валли серепе лартса панӑ. Путене серепене ҫакланнӑ. Мӗскӗн путене ҫатма ҫинче ӑшаланнӑ.

102. **Упа.** Хӗлле упа шӑтӑкра пурӑннӑ. Хӗл каҫипе вӑл нимӗн те ҫимен, ырханланнӑ. Ҫуркунне упа вырӑнтан тапраннӑ. Ырхан упа аран-аран сулланнӑ. Пӗрре вӑл утара тапӑннӑ. Хуртсем ӑна сӗрлесе сырӑннӑ. Упан пит-куҫӗсем шыҫӑннӑ. Упа тарса кӑна ҫӑлӑннӑ.

103. Пурӑн—пурӑннӑ. Ҫилен... Пухӑн... Тӑхӑн... Сырӑн... Ӑшӑн... Сӗртӗн... Мухтан... Чарӑн... Ҫӑвӑн.. Ҫаклан... Тытӑн... Пуҫлан... Ҫитӗн... Парӑн... Ярӑн... Чӳхен... Пӗркен... Шиклен... Ҫеклен... Сивӗн... Пӗрӗн... Хурлан... Пӑрӑн... Тӑран... Вӑран... Пурӑн... Сиккелен... Вӗрен... Такӑн... Туртӑн...

## § 18. Аса илмелли ӗҫсем.

104. **Ҫуркунне.** Ҫуркуннене тем пекех кӗтетпӗр. Урамсенче шыв шӑнкӑртатса юхать. Хӗл куҫҫулӗпе макӑрать. Шӑнкӑрчсем валли йӑва турӑмӑр. Вӗҫен кайӑксем те вӗҫсе килеҫҫӗ. Кӑвак тӳпере тӑри юрлать. Ёнер ҫырмари пӑр та тапранчӗ. Сӑртсем ҫинче пӗлтӗрхи курӑк ешерет. Хӗлле витере тӑнӑ выльӑхсем ҫерем ҫине тухрӗҫ. Колхозра хӗрсех ҫурхи ӗҫсене тӑваҫҫӗ.

105. **Ҫуркунне ҫитрӗ.** Ҫуркуннехи ӑшӑ хӗвел кунран кун ытларах ачашлать. Хура кураксемпе тӑрисем тахҫанах вӗҫсе килнӗ. Шӑпчӑк та садсенче хӑй юррине шӑрантарать. Ёнер пристане пӗрремӗш пароход чарӑнчӗ.

Халӗ ӑҫтан килте ларатӑн? Шывсем уҫса яратӑн, сулӑсем, армансем тӑватӑн. Кунӗ-кунӗпе чупатӑн, ывӑннине пӗлместӗн. Киле тавӑрӑнатӑн, каҫхи апат ҫиетӗн те вилнӗ пек ҫывӑрса каятӑн. Вырсарникун Мария Петровнӑпа класӗпех вӑрмана каятпӑр. Унтан чечексем татса килетпӗр.

106. **Петров разведчик.** Тӑшман вӑйне пӗлсе килме нимӗҫсем йышӑннӑ яла Петрова ячӗҫ. Петров ял ҫывӑхне шуса ҫитет те курӑк ӑшне кӗрсе выртать. Ялта 20—30 нимӗҫ пулнӑ. Петров кусене майлаштарма шухӑшлать.

Кӗрхи тӗттӗм ҫӗр ҫитет. Петров нимӗҫсем пурӑнакан икӗ ҫурт ҫине пульӑсем пӗрхтерме тытӑнать. Петров пӗр вырӑнтан тепӗр вырӑна куҫа-куҫа перет. Фашистсем сехӗрленсе ҫитнӗ, пирӗн ҫине партизансен отрячӗ тапӑнчӗ тесе шухӑшлана. Вӗсем ку ялтан тухса тарнӑ.

107. **Кушак пулӑ тытни.** Ҫуллахи ир. Хӗвел хӗрелсе тухать. Курӑк ҫинче ирхи сывлӑм кӗмӗл пек шӑрҫаланать. Таврара шӑп. Инҫетре, станцире, паровоз кӑшкӑртать. Эпӗ пӗве хӗррине кайрӑм. Никам та чӑрмантармасть: ларатӑп, итлетӗп, сӑнатӑп. Пӗр хура кушак тухрӗ. Вӑл пӗве хӗрринелле йӑпшӑнса пырать. Сасартӑк кушак пӗвене сикрӗ, пӗр пулла кап! хыпрӗ те курӑк ӑшнелле чӑмрӗ. Кӗтӳҫӗ мана кушаксем кашни ир ҫапла пулла ҫӳрени ҫинчен каласа пачӗ.

108. **Сестра.** Иван Котлов—салтак. Вӑл хаяр ҫапӑҫӑва кӗрсе каять. Ивана нимӗҫ пули лекет. Алли витӗр тухать те кӑкӑрне кӗрсе ларать. Иван урараран ӳкет. Юлташӗсем малалла каяҫҫӗ, вӗсем нимӗҫсене хӑвалаҫҫӗ. Иван пӗчченех юр ҫинче выртать. Унӑн алли ыратать, кӑкӑрӗнчи пуля сывлама чӑрмантарать. „Пӗтрӗм ӗнтӗ, вилетӗп“,—тесе шухӑшласа выртать.

Сасартӑк вӑл такам хӑй патне пынине туять. Ун патне пӗр хӗр шуса пынӑ-мӗн. Хӗрӗн сумка пур. Сумки ҫинче хӗрлӗ хӗрес. Ку отрядри сестра иккен. Сестра сумкинчен бинт кӑларать те Иван суранне асӑрхавлӑн ҫыхма тытӑнать. Суранне ҫыхнӑ хыҫҫӑн сестра Иван Котлова хӑрушӑ мар вырӑна илсе каять. Нимӗҫсем пулемӗтсенчен те переҫҫӗ, тупӑсенчен те кӗрӗслеттереҫҫӗ. Сестра малалла шӑвать те шӑвать, аманнӑ Иван Котлова илсе тухать. Ҫапла вӑл Иван Котлова ҫӑлать.

109. **Ӑмӑрткайӑкпа кушак.** Кушак хӑй ҫурисемпе ял тулашӗнче выляннӑ. Ҫурхи ӑшӑ хӗвел пӑхнӑ. Кушаксем савӑннӑ. Сасартӑк ҫӳлтен пӗр пысӑк ӑмӑрткайӑк вӗҫсе анать те кушак ҫурине ҫавӑрса илет. Ӑмӑрткайӑк тарса хӑтӑлаймасть, кушак ӑна чӗрнисемпе ярса илет. Ӑмӑрткайӑк кушак ҫурине пӑрахать те кушакпа ҫапӑҫма тытӑнать.

Ӑмӑрткайӑкӑн ҫуначӗсем сулӑмлӑ, сӑмси ҫирӗп, чӗрнисем вӑрӑм та кукӑр, ҫапӑҫура вӑл вӗсемпе лайӑх усӑ курать. Вӑл кушак тирне чӗрнисемпе таткалать, хӑрах куҫне сӑхса шӑтарать. Кушак та парӑнмасть, чӗрнисене ӑмӑрткайӑк ҫине тирсе лартать, сылтӑм ҫунатне ҫыртса татать. Акӑ ӗнтӗ кушак ӑмӑрткайӑка парӑнтарса пынӑ. Анчах та ӑмӑрткайӑкӑн вӑй иксӗлмен, кушак ывӑнса ҫитнӗ. Кушак юлашки вӑйне пухать, ӑмӑрткайӑк ҫине ялт сикет, ӑмӑрткайӑк йӑванса каять. Вара кушак ун пуҫне ҫыртса татать. Ҫапӑҫу пӗтет. Кушак, хӑй суранлине пӑхмасӑр, аманнӑ ҫурин суранӗсене ҫулама тытӑнать.

110. **Тундра.** Инҫе ҫурҫӗрте ҫара тундра сарӑлса выртать. Йӗри-тавра—шурӑ юр кӑна. Пӑч-пач имшеркке тӗмсем ҫеҫ ӳсеҫҫӗ. Ҫынсем унта пӗр-пӗринчен инҫе пурӑнаҫҫӗ. Тундрӑри ҫынсем пӑлан усраҫҫӗ. Пӑлан хӑех мӑка юр айӗнчен чӗрнипе чавса кӑларать те ҫиет. Пӑлансем пӗр ҫӗрти мӑка ҫисе пӗтереҫҫӗ. Вара ҫынсем пӑлан кӗтӳне урӑх ҫӗре куҫараҫҫӗ. Тундрӑри ҫынсемшӗн пӑлан питӗ усӑллӑ выльӑх. Тундрӑри ҫынсем пӑланӑн ашне ҫиеҫҫӗ, сӗтне ӗҫеҫҫӗ.

111. **Пирвайхи юр.** Эпӗ килкартине тухатӑп. Лӑпкӑ та уҫӑ ир. Ҫӗрле юр ҫуса тултарнӑ. Пӗтӗм тавра шурӑ ҫитӗ пӗркеннӗ. Чанасемпе улакураксем вӑрман ҫинче ҫуйӑхашса явӑнаҫҫӗ. Хыр тӑр-

ринчи чи вӗтӗ туратсем те палӑраҫҫӗ. Йывӑҫсем ҫинче те шапшурӑ юр. Пӗр-пер ҫинҫе йывӑҫа тытса силлесен, пӑрӑнса ӗлкӗрейместӗн, юр сан ҫине мамӑк пек лӑпӑстатса анать. Колхозник ӗнтӗ ҫуна кӳлсе тухать. Ачасем хӗле хавассӑн кӗтсе илеҫҫӗ. Йӗлтӗрсемпе, ҫунашкасемпе урама тухаҫҫӗ. Йӗпе-сапаллӑ кӗр иртет. Тахҫантанпа кӗтнӗ хӗл ҫитет.

112. **Ыраш пуссинче.** Ача чухне эпӗ ыраш хушшинчи ансӑр сукмаксене пит юрататтӑм. Пыраттӑм, ырашӗ санран ҫӳллӗ. Утмӑлтуратсем илӗртеҫҫӗ. Тататӑн та тататӑн чечексене. Месерле выртатӑн та, пӗлӗт сан тӗлӗнте тӗпсӗр кӑвак тинӗс пек туйӑнать. Сасартӑк шӑши чупса иртет. Патӑнтах путене авӑтать. Вӑл сана туять те часах пӑрӑнать. Ҫӳлте, кӑвак тӳпере, тӑри юрлать. Сасартӑк темӗн кӗмсӗртетсе илет. Мӗн-ха ку? Аслати иккен. Хӗвеланӑҫ тӗксӗмленнӗ. Ҫумӑр пулать. Эпӗ ҫумӑр айне пуласшӑн мар. Часрах вӑрмана, чӑтлӑха вӗҫтеретӗп.

113. **Колхозри ҫураки.** Кашни колхозник ҫуракине хатӗрленет. Хӑшӗ вӑрлӑх тасатать, суртлать. Теприсем машинӑсемпе ытти хатӗрсене юсаҫҫӗ. Ҫураки умӗн лашасене лайӑхрах пӑхаҫҫӗ, кантараҫҫӗ. Колхозник, ан ман: акана лайӑх иртерӗн—тырпул ӑнса пулӗ.

114. **Ҫуллахи каҫ.** Эсир вӑрмана кӗретӗр. Хӗвел аннӑ. Анчах вӑрманта ҫутӑ-ха. Вӗҫен кайӑксем чӗвӗлтетеҫҫӗ. Вӑрмана та пӗчӗккӗн тӗксӗм сӑн ҫапать. Каҫхи ҫутӑ аялтан, туратсем ҫинчен, йывӑҫсен тӑррисем ҫинелле куҫать. Кӗрен пӗлӗт кӑвакарать. Аӑшӑ лӑм ҫапать. Ҫил шӑпланать. Вӗҫен кайӑксем шӑпланаҫҫӗ. Пӗлӗт ҫинче ҫӑлтӑрсем йӑлкӑшаҫҫӗ.

115. **Шуҫӑм килнӗ чух.** Килкартине тухатӑп. Пӗлӗт ҫинче унта-кунта ҫӑлтӑрсем мӑчлатаҫҫӗ. Сайра-хутра нӳрлӗ ҫил варкӑшать. Йывӑҫсем шӑппӑн пӑшӑлтатаҫҫӗ. Пӗлӗт хӗрри хӗрелет. Акӑ ылттӑн йӑрӑмсем пӗлӗтелле кармашаҫҫӗ. Пӗр вӗҫӗмсӗр тӑрисем юрлаҫҫӗ. Лӑпкӑ ҫил варкӑшать. Хӗвел хӗрелсе тухать. Чӗре кӑлт-кӑлт тапать. Уҫӑ, савӑк, ырӑ!

116. **Н. К. Крупская ҫырӑвӗ.** Надежда Константиновна Крупская пур пионерсемпе школьниксем патне те ҫыру янӑ. Ҫав ҫырура вӑл аслӑ ачасем кӗҫӗннисене мӗнле пӑхасси ҫинчен ҫырнӑ. Надежда Константиновнӑна ответлесе, ачасем нумай ҫырусем янӑ. Акӑ пӗр ҫырӑвӗ:

„Хаклӑ Надежда Константиновна! Эпир хапӑлласа Сирӗн ҫырӑвӑра вуларӑмӑр. Эпир виҫҫӗмӗш класра вӗренетпӗр. Эпир пурте пионерсем, отрядра лайӑх ӗҫлетпӗр. Пӗчӗккисене тивместпӗр, вӗсемпе ӗҫлетпӗр, вӗсене вӗрентетпӗр, вӗсене пионера кӗртме хатӗрлетпӗр. Эпир хамӑртан кӗҫӗннисемпе тата лайӑхрах ӗҫлеме сӑмах паратпӑр, вӗсене примерлӑ пионер пулма вӗрентме пулатпӑр“.

## § 19. Пӗрйышши члепла предложенисем.

117. **Ӑҫта мӗн ӳсет.** Хирте ыраш, тулӑ, сӗлӗ, урпа, пӑрҫа, пӑри ӳсеҫҫӗ. Пахчара ҫӗрулми, купӑста, хӑяр, помидор, кишӗр, чӗкӗнтӗр ӳсеҫҫӗ. Садра улмуҫҫи, чие, хурлӑхан, груша, хӑмла

çырли ӳсеççĕ. Вăрманта хыр, чăрăш, юман, хурăн, ăвăс, çĕмĕрт, пилеш, шĕшкĕ ӳсеççĕ.

118. **Ăçта мĕн пурăнать.** Ĕнене, сурăха, качакана, сыснана, йытта, кушака килте усраççĕ. Упа, кашкăр, пакша вăрманта пурăнаççĕ. Çерçи, чĕкеç, чана, кăвакарчăн, хура курак, шăнкăрч ялта йăва çавăраççĕ. Тăри, путене, карăш, хирте йăва çавăраççĕ. Чăхă, хур, кăвакал, кăркка килте пурăнаççĕ. Çăрттан, çупах, уланкă, çĕкĕ, шăла шывра пурăнаççĕ.

**Тумтирсем.** Çынсем çиелтен пальто, пиншак, кĕрĕк, сăхман, тăлăп тăхăнаççĕ. Пуça картуз, çĕлĕк, шĕлепке тăхăнаççĕ. Урана атă, туфли, ботинка, çăматă тăхăнаççĕ. Алла алса, перчетке тăхăнаççĕ. Çынсем çие кепе, йĕм, майка, трусик, юбка, платье, кофта тăхăнаççĕ.

119. **Ĕçлемелли хатĕрсем.** Машинăпа, çавапа, çурлапа, тырă выраççĕ. Пуртă, сава, пăчкă, ийе, пăра—платникпе столяр хатĕрĕсем. Çĕлемелли машина, йĕп, хачă, пӳрнеске, утюг çĕвĕçе кирлĕ. Ручка, перо, карандаш, тетрадь, кĕнеке вĕренекенсене яланах кирлĕ. Молотилка, веялка, тăпачă авăн çапнă çĕрте кирлĕ. Плуг, сӳре, сеялка, трактор тырă акнă çĕрте кирлĕ. Вăлта, атма, сĕреке, шакă пулăçа кирлĕ. Кĕреçе, сенĕк, шăпăр, кĕреплe хресчен хуçалăхĕнче кирлĕ хатĕрсем.

120 **Шкулта.** Шкулта сĕтел, пукан, партăсем, доска, шкап пур. Стена çинче картăсем, плакатсем, лозунгсем, çулпуçсен сăнĕсем çакăнса тăраççĕ. Учитель вĕренекенсене пероcем, ручкăсем, карандашсем, кĕнекесем парать. Шкулта вĕренекенсем вулаççĕ, çыраççĕ, задача шутлаççĕ, картинăсем ӳкереççĕ, юрлаççĕ.

121. **Мĕне мĕнрен тăваççĕ?** Яшка çине çĕрулми, купăста, кишĕр, помидор, кĕрпе, тăвар, çу яраççĕ. Пӳрт тума пĕрене, хăма, кирпĕч, кантăк, пăта т. ыт. те кирлĕ. Пальто çĕлеме пусгав, пусма, тир, вата, çип, тӳмесем кирлĕ. Атă çĕлеме сăран, пăта, пир, çип кирлĕ.

122. 1. Çын калаçать, илтет, ĕçлет, курать, çӳрет. 2. Платник чутлать, савалать, пăчкăпа татать, ырать (пассем тăвать). 3. Çĕвĕçĕ виçет, касать, çĕлет, якатать. 4. Вечерта купăс калаççĕ, ташлаççĕ, юрлаççĕ, сăвăсем калаççĕ. 5. Тракторпа сухалаççĕ, тырă выраççĕ, авăн çапаççĕ тата ытти ĕçсене те тăваççĕ. 6. Комбайн вырать, çапать, сăвăрать. 7. Колхозник сухалать, акать, çум çумлать, тырă вырать, авăн çапать.

123. 1. Çаран çинче сарă, кĕрен, хĕрлĕ, шурă, кăвак чечексем ӳсеççĕ. 2. Кĕтӳре хура, хĕрлĕ, хăмăр, ула ĕнесем çӳреççĕ. 3. Колхозра çӳрен, турă, кăвак, ула, хăла, сарă, пăварлă лашасем пур. 4. Утарта сарă, шурă, кăвак, хĕрлĕ вĕллесем пур. 5. Куçсем хура, хăмăр, кăвак, сенкер, симĕс пулаççĕ.

124. **Мĕне мĕншĕн усраççĕ?** Сурăха ашшăн, тиршĕн, çăмшăн усраççĕ. Ĕнене ашшăн, сĕтшĕн, çушăн, тиршĕн усраççĕ. Хура ашшăн, тĕкшĕн усраççĕ. Чăхха çăмарташăн, ашшăн тата тĕкшĕн усраççĕ. Сыснана ашшăн, шăртшăн, тиршĕн усраççĕ. Кролика ашшăн, тиршĕн, çăмшăн усраççĕ. Кролик купăста, кишĕр, чĕкĕнтер, сĕлĕ, утă, курăк çиет.

## § 20. Ирӗклӗ диктант валли статьясем.

**Асӑрхаттарни.** Ирӗклӗ диктантра миҫешер йӗркен вуласа памаллине учитель хӑй чухлать. Кунти абзацсем вӗсем тӗслӗхшӗн кӑна.

Ирӗклӗ диктант вӑл хӑйне майлӑ изложени пулса тӑрать. Диктант ирттернӗ чухне йӑнӑшсем тӑвасран сыхлантарас пулать. Йӑнӑшсенчен ҫак майсемпе сыхлантармалла: а) орфографи тӗлӗшӗнчен йывӑр сӑмахсене учитель класс доски ҫине малтанах ҫырса хурать; ӑ) ҫырнӑ чухне вӗренекен пӗр-пӗр сӑмаха ҫырма иккӗленет пулсан, вӑл алӑ тӑратать; учитель ун патне пырать те шӑппӑн, ыттисене чӑрмантармасӑр, кирлӗ кӑтартусем парать.

125. **Кущеев разведчикӑн чеелӗхӗ.** Пӗрре Кущеев вӑрман патӗнче пытанса выртнӑ. Ун патӗнче пульӑсем шӑхӑрнӑ. Кущеев юртан блиндаж тӑвать те, ун ҫине ланчашкасем тултарса, шӑтӑк витре лартать. Ирпе вӑл ланчашкасене вут тивертет те, хӑй окопалла шӑвӑнать.

Нимӗҫсем бинокльпе пӑхаҫҫӗ те тӗлӗнеҫҫӗ. Блиндаж имӗш, ун ҫинче тӗтӗм йӑсӑрланать. Нимӗҫсем урса ҫитеҫҫӗ те тытӑнаҫҫӗ пушӑ блиндажа тупӑсенчен пеме.

Хӗрӗх икӗ снаряд пӗтерсе, нимӗҫсем блиндажа тустарчӗҫ вара. Улталаннӑ нимӗҫсенчен пирӗн окопри салтаксем каҫса кайсах кулаҫҫӗ.

126. **Хӑраманскер.** Ирхи сивӗ питҫӑмартисене ҫӑтӑр чӗпӗтет. Ачасем шакӑлтатса шкула васкаҫҫӗ. Вӗсем шӳт тӑваҫҫӗ, кулаҫҫӗ.

Сасартӑк пӗр килкартинчен пысӑк йытӑ сиксе тухать те ачасем ҫине ыткӑнать. Ачасем шартах сикеҫҫӗ те, ҫуйӑхаша-ҫуйӑхаша, ӑҫта килчӗ унталла тараҫҫӗ.

Пӗчӗк Вася хӑраса ӳкмерӗ, вырӑнтан та тапранмарӗ. Йытта пӗчӗк пӳрнипе юнать, унпа пуплет: „Ан тив мана, йытӑ, ан тӗкӗн"—тет.

Йытӑ тӑпах тӑчӗ те вӗрме чарӑнчӗ. Унтан, хӳрене выляткаласа, Вася патне пычӗ.

127. **Партизансен лагерӗ.** Вӑрманта лагерь пулса тӑчӗ. Тарӑн ҫырмара ҫӗрпӳртсем алтрӗҫ, вӗсене пысӑк юман пӗренесемпе витрӗҫ, чӑтлӑх вырӑна кухня турӗҫ, лашасемпе ӗнесем валли йывӑҫсем айне лупассем турӗҫ. Ҫӳлтен пӑхсан—кунта сип-симӗс вӑрман ҫеҫ, анчах та йывӑҫсем айӗнче пурӑнӑҫ вӗресе тӑрать.

Кашни кун тенӗ пекех отрядран—штаб хушнипе—разведчиксем тӗрлӗ вырӑнсене кайса ҫӳренӗ, вӗсем хыҫҫӑн вара партизансен пысӑках мар ушкӑнӗсем унта та кунта—ҫулсем ҫине, кӗперсем айне минӑсем лартнӑ. Час та часах вӗсем нимӗҫсен обозӗсене тапӑннӑ, вара отряда тӗрлӗ трофейсем—апат-ҫимӗҫ, пӑшал, боеприпассем, выльӑх-чӗрлӗх илсе пынӑ, хӑш чухне тата нимӗҫсене тыткӑна та илкеленӗ. Ун пек чухне вара отряд штабӗ вырнаҫнӑ ҫӗрпӳрт умне яланах партизансем пурте тенӗ пекех пухӑннӑ. (Л. Агаков ҫырни тӑрӑх).

128. **Курӑнманскер.** Нимӗҫ грузовикӗсем вӑрманта юр ӑшне путса ларчӗҫ. Юр ҫӑвать, ҫил-тӑман. Пирӗн разведчик вӑрманпа

нимĕçсем патнех пычĕ те тĕмсем хыçне пытанчĕ. Вăл пурне те курать, пурне те асăрхать, пурне те сăнать, хăй курăнмасть. Вăл шурă халатпа, йĕри-тавра шурă юр. Иртсе пыракан нимĕçсем шухăшлаççĕ: „Юр тĕмески ку“,—теççĕ. Сасартăк çак тĕмескерен пульăсем шăхăрчĕç. Нимĕç офицерĕ йăванса кайрĕ, юнашарах тата икĕ фашист тӳнчĕç. Пирĕн разведчик питĕ тĕл перет. Пĕр пуля та сая ямасть. Çакăн пек тĕл перекенсене снайперсем теççĕ.

Нимĕçсем вăрманалла пеме тытăнчĕç, пĕр тĕлсĕр переççĕ. Ăçтан тытатăн курăнманскере? Вăл паçăрах хамăраннисем патне вĕçтерчĕ. Разведкăра мĕн курни çинчен командира каласа пачĕ.

129. **Шăшисем.** Пĕрре пĕтĕм таврари шăшисем пĕр çĕре пухăннă. Куçĕсем вĕсен хуп-хура, урисем çинçешке, шăлĕсем çивчĕ, кĕрĕкĕсем кăвак, хӳрисем çĕр çинче сĕтĕрĕнсе пыраççĕ.

Шăшисем, тĕпсакайĕнчи вăрăсем, пуçĕсене çĕмĕрсех канашлаççĕ, хăйсен йăвине сухари илсе пыма шухăшлаççĕ.

Акă шăшисем калаçса татăлчĕç. Сухарие кăшлама тытăнчĕç. Кашни шăши сухарие катса илет те йăвине илсе каять. Çак майпа шăшисем сухарие пĕтĕмпех çĕклесе пĕтерчĕç.

130. **Çерçипе чĕпписем.** Ыр̆а-çке чĕпсене хăйсен йăвинче, тăван амăшĕпе пурăнма. Çерçи чĕпписем çитĕнеççĕ, вĕсен тĕк те тухать. Вĕсен ĕнтĕ çунатсем те ӳсме тытăнчĕç. Пĕрре амăшĕ апат шырама кайрĕ. Пĕр чĕпĕ йăвинчен тухрĕ ӳкрĕ.

Амăшĕ вĕçсе таврăнать те курать: пĕр чĕппи çĕрте выртать, тăраймасть. Вăл чĕппи тавра вĕçкелет, явăнать, чăйлатать. Ытти çерçисем те вĕçсе пычĕç, вĕçкелеççĕ, явăнаççĕ, чăйлатаççĕ, нимĕнле те пулăшма пултараймаççĕ.

Çакна ача курать. Вăл çерçи чĕппине илет те читлĕхе лартать, читлĕхе йывăç çине çакса хурать. Кайран чĕпĕ амăшĕ читлĕх патне пырсах тăнă, читлĕх çине ларса, чĕппине çитернĕ.

131. **Çерçисем.** Çерçисем чĕвĕлтете-чĕвĕлтете улăм витнĕ пӳрт тавра явăнаççĕ. Пӳрт çине витнĕ улăма çерçисем шăтарнă та йăва тунă иккен.

Ачасем пусма илсе пырса лартаççĕ те хăпарса пăхаççĕ. Пĕр ачи аллине йăвана чикет те пĕчĕкçеççĕ чăп-чăпаркка çăмартасем туртса кăларать. „Хур вĕсене каялла“,—тет ачана пиччĕшĕ,— çерçисем чĕпĕ кăларччăр“,—тет.

Часах йăваран пĕчĕк çерçи чĕппйсем пуçĕсене кăлара пуçларĕç. Вĕсем çăварĕсене карса чăйлатаççĕ... Çерçисем, амансем çĕклесе пыра-пыра, чĕпписене çитереççĕ.

132. **Паттăр хуракайăк.**[1] Кушак килтен сивĕнчĕ. Кайăкланса кайрĕ, килти апатсăрах тăранса пурăнма тытăнчĕ. Вăрмансене, чăтлăхсене йăрккать, шăшисем, вĕçен кайăксем тытать, вĕçен кайăк йăвисене тустарать.

Хăвăлта хуракайăк пурăннйне кушак сисрĕ. Йăвинче хуракайăк чĕпписем чăйлатаççĕ. Кушак тĕмсĕлчĕ, хуракайăк чĕпписене тытма тăчĕ. Хăвăл патне пычĕ те урине хăвăла чиксе ячĕ.

---

[1] *Хуракайăк*—курак евĕрлĕ кайăк. Вăл вăрманта пурăнать. Хăшпĕр çĕрте ăна рунки теççĕ.

Çак вăхăтра хуракайăк вĕçсе пычĕ те кушак çине утланса ларчĕ, пуçĕнчен, сăмсинчен, куçĕнчен сăхма пикенчĕ. Кушакăн сехри хăпрĕ, вăл йывăç çинчен сиксе анчĕ те вĕçтере пачĕ.

133. **Кураксем вĕçсе килчĕç.** Хĕвел хытăрах пĕçертме тытăнчĕ. Витесем çинчен тумла тумлать. Хирсенче юр иксĕлсех пырать. Хăшпĕр вырăнта çĕр те тухнă.

Кураксем те вĕçсе килнĕ, кăраклатаççĕ. Вĕсем тислĕклĕ çулсем тăрăх, тăккаланчăксем шыраса, вĕçсе е уткаласа çӳреççĕ.

Акă кураксем йăмралăха вĕçе-вĕçе пыраççĕ. Вĕсем кивĕ йăвисем патĕнче шараçланаççĕ, çуйăхашаççĕ, тулашаççĕ, харкашаççĕ, çапăçаççĕ. Вăйлисем пĕлтĕрхи йăвисене йышăнчĕç, вăйсăррисем çĕнĕрен йăва çавăраççĕ.

134. **Каспи тинĕсĕ çинче.** Эпир тинĕспе пурĕ тăватă кун çурă килтĕмĕр. Пире ниçта та ытлах лăкантармарĕ: кунсем лăпкă тăчĕç.

Икĕ кун анчах маларах, çĕрле пĕр пысăк шхунăна хум çыран хĕрринех çапса кăларнă, терĕç. Тепĕр шхуна тинĕс варринче тăватă кун ларнă. Ун пеккине эпир курăймарăмăр. Ыйăннине те пĕлмерĕмĕр. Çук, ывăнма мар, тинĕс пире темле, халиччен пĕлмен вăй хушса пачĕ. Малтанах вăл, хумĕсене хаярлатма хăтланса, хăрушлăх килессине ялан курса тăма кирлине систерчĕ. Унтан хăйĕн вĕçĕ-хĕрри курăнманнипе, пиртен пĕрмай аяккалла тарса каякан тăр кăвак тĕслĕ суя чиккипе илĕртрĕ.

(Х у м м а Ç. тăрăх.)

135. **Улай.** Манăн Улай ятлă йытă пурччĕ. Эпĕ ăна пĕчĕкренпех пăхса çитĕнтертĕм. Вăл йăвашчĕ, анчах питĕ вăйлăччĕ.

Инçе çула кайнă чухне манăн ăна хампа илес килмерĕ, йытта хупса хума хушрăм та тухса кайрăм. Çирĕм пилĕк километр кайсассăн, лашасене кантарма чарăнтăм. Пăхатăп: эпĕ килнĕ çулпа темĕн, хура йăлтăрккаскер сиккипе пырать.

Ку Улай пулчĕ. Ман пата çитсен, вăл тӳрех ман çине ыткăнчĕ, алла çулама тытăнчĕ, урапа айне тăсăлса выртрĕ. Чĕлхи алсатуль пек тăсăлса тухнă.

Чĕлхине пĕрре тăсса кăларать, тепре каялла туртса илет, сĕлекине çăтать. Вăл пашкать, айккисем сиксе кăна тăраççĕ. Улай пĕр енчен тепĕр енне çавăрăна-çавăрăна выртать, хӳрипе çĕре çапа-çапа илет.

Кайран эпĕ акă мĕн пĕлтĕм: вăл кантăка çĕмĕрсе сиксе тухнă та, шăрăхне-мĕнне пăхмасăр, ман йĕрпе, мана шыраса пынă.

136. **Çар карапĕ çинче.** Эпир тăшман утравĕ патне çывăхарса пытăмăр. Утрав финсен аллинче. Çапăçу саманчĕ çывăхарчĕ.

Пирĕн артиллери персе тăнă вăхăтра матроссен десанчĕ, утрав çине тухса, хĕрлĕ ялав лартмаллаччĕ.

Тетре витĕр утрав тата вăрман курăнать... Тăшман утравĕ çине пеме ман оруди пуçламаллаччĕ: „Хатĕрленĕр!"—команда патăм эпĕ.

Эпир кĕрĕслеттертĕмĕр. Карап кисренчĕ. Утрав патне пирĕн десант шлюпкăсемпе катерсем çине ларса пырать. Утрав çинчен пирĕн карап çинелле переççĕ. Вырăнтан вырăна куçса, пирĕн

карап тăшман утравĕ çине вут-хĕм сапать. Десант утрав патне çывăхарать. Матроссем шлюпкăсемпе катерсем çинчен анаççĕ те, пилĕк таран шывра утса, çыран хĕрринелле васкаççĕ. Финсен пулемĕтчĕсем пирĕн матроссене хирĕç персе тăраççĕ.

Тăшман пулемĕтчĕсем çине тĕллесе перетпĕр те, вĕсем шăп пулаççĕ. Матроссем, ура кăшкăрса, утрав çине чупса тухаççĕ. Хĕрӳ çапăçу пулса иртет. Утрав çинче Совет ялавĕ вĕлкĕшет.

137. **Çурçĕр полюсĕнче.** 1937-мĕш çулта çуркунне мăн сывлăш карапĕсем Мускав аэродромĕнчен çĕкленчĕç те çурçĕрелле сулăнчĕç. Сывлăш карапĕсем Папанина, Кренкеле, Федорова тата Ширшова çурçĕр полюсĕ çине илсе кайрĕç.

Майăн 21-мĕшĕнче ирхине хастар Папанина, Кренкеле, Федорова тата Ширшова ăсатакансем Çурçĕр полюсне вĕççе çитрĕç. Вĕсем палатка карчĕç, радиостанци тата тĕпчемелли приборсем лартрĕç. Палаткăпа юнашар çӳллĕ те яштак йывăç çине хĕрлĕ ялав çакрĕç. Ялавĕ çинче тăван аттемĕрĕн Сталинăн сăнĕ.

Самолĕтсем каялла вĕççе кайрĕç. Федоров, Ширшов, Папанин, Кренкель пăр çине хĕл каçма юлчĕç.

Тăхăр уйăх хушши çак ялав пăрлă çурçĕрте вĕлкĕшрĕ. Хаяр сивĕсенче те, вăйлă çил-тăманта та, пăр шатăртатса тĕпреннĕ чухне те çак ялав, папанинецсене хавхалантарса, вăй парса, çĕнтерессине ĕмĕтлентерсе тăчĕ.

Пăра çĕмĕрсе кăнтăралла юхтарса кайрĕ. Тăватă учĕнăя — большевиксене—вилĕм хăратса тăчĕ. Анчах вĕсем хăйсене хушнă ĕçе лайăх туса пычĕç. Вĕсене Тăван çĕршыв пăрахмарĕ. Вĕсемпе çыхăну тытса хавхалантарса тăчĕ, кайран вĕсене пăр çинчен тухма пулăшрĕ.

138. **Шăнкăрч.** Анюк шăнкăрч чĕппи тупнă. Çак чĕпĕ, хăйĕн сарă сăмсаллă çăварне каркаласа, садри сукмак çинче чăйлатса выртнă. Шăнкăрч Анюка часах вĕренсе çитнĕ. Анюка курмасан шăнкăрч кичемленнĕ, тĕкне тăмалантарнă. Пĕрер уйăхран вăл хăйĕн ятне те пĕлме пуçланă. Шăнкăрч радио музыкине итлеме хăнăхнă, унпа перле хăй те шăхăркаланă, савăнса юрлакан пулнă. Пӳлĕмре тĕрлĕ вĕçен кайăк картинисем пулнă. Шăнкăрча ӳкернĕ картинка та пур. Шăнкăрч çак картинка патне час-часах пыра-пыра ларнă. Шăнкăрчăн вĕçкелес килет. Картинка çинчи шăнкăрч тапранмасть. Шăнкăрч çиленсе çитет те ăна сăхма тытăнать. Çапла сăхкаласа, шăнкăрч чĕппи картинкăна йăлтах шăтарса пĕтернĕ.

139. **Виçĕ миномĕтчик паттăрлăхĕ.** Чăнкă сăрт хĕррине виçĕ миномĕтчик вырнаçнă. Нимĕçсем виçĕ енчен миномĕтчиксем çине тапăннă. Совет миномĕтчикĕсем вĕсене хăрушлăх кĕтнине пĕлнĕ, анчах та йышăннă вырăнтан вилсен те пăрахса кайма шухăшламан.

Совет миномĕтчикĕсем тăшмана хирнĕ те хирнĕ, сăрт таврашĕнче нимĕç салтакĕсемпе офицерĕсен 150 вилли йăваланса выртаççĕ. Паттăр салтаксем нимĕçсенне виçĕ пулемĕтне тата икĕ миномĕтне аркатаççĕ.

Çапах та фашистсем, чулсем çийĕн кармашса, сăрт патне сывăхарса пынă. Акă ĕнтĕ тăшмансем 20—25 метрта кăна. Миномĕтчиксем минăсене тăшман çине алăпах ыткăнтараççĕ.

Юлашкинчен пĕр мина кăна тăрса юлчĕ. Фашистсем, пур енчен те çухăрашса, малалла ыткăнчĕç. Çак самантра мина шартлатса çурăлса кайрĕ. Совет миномĕтчикĕсем, виççĕшĕ те ыгаланса, вилчĕç, анчах фашистсем те теçетки-теçеткипе сывлăша сирпĕнчĕç.

---

# ТĂВАТТĂМĚШ КЛАСС

## § 1. Япала ячěсем камăнлăх аффиксěсене йышăнни.

1. 1. Хурăн вуттине ăвăс вуттинчен пахарах шутлаççě. 2. Колхоз кӳллине колхозниксем пулă ярса ěрчетрěç. 3. Çамрăксем хăйсен савăк юррине пуçласа ячěç. 4. Якур кулли аякранах илтěнет. 5. Йывăç вуллисем пěлěте кармашаççě. 6. Çăра уççине пăтана çак. 7. Хăва çаппи вут çинче ялкăшать. 8. Машина çěвви тип-тикěс. 9. Йывăçăн варри хăвăл. 10. Хурăн тăррисем çилпе хумханаççě. 11. Рис пăттине сěтпе пěçерне.

2. 1. Йытти яланах сунарçăпа пěрле çӳренě. 2. Якур уринчи аттине кулленех тасатнă 3. Колхоз тыррине пěр тăккаламасăр пуçтараççě. 4. Колхоз туллине суртласа акаççě. 5. Хур чěпписем амăшěпе пěрле пěвери шыв çинче ишеççě. 6. Сěтел çиттине тěрленě. 7. Сěлě кěлтин çыххине çапнă кěлтерен тăваççě. 8. Çӳппине урайěнчен шăлах тăнă. 9. Помидор вăррине парнике март уйăхěнчех акаççě. 10. Сойăн уссине куртăмăр. 11. Хурт сăннисем ӳт-тире шыçăнтараççě.

3. Пăтă—пăтти. Вутă... Хупă... Çěрě... Алă... Тулă... Чěпě... Тапă... Лăпă... Çакă... Пулă... Шěкě... Ухă... Сăнă... Сулă... Вулă... Тилě... Çěçě... Сěлě... Çапă... Атă... Чăхă... Тěрě... Çӳпě... Тупă... Ташă... Юрă... Шакă... Вакă... Каçă... Витě... Пекě... Тěкě... Çемě... Кӳлě... Сивě... Ăшă... Вăрă... Вăйă... Хăйă... Килě... Кěрě... Йăлă... Сутă...

4. **Сунарта.** Уçăп çутăлнă-çутăлманах аттине тăхăнчě. Каçах пěçернě вир пăттине çирě. Хăйěн йыттине ертрě, хулпуççи урлă пăшал çакрě те вăрманалла тухса утрě. Таврара пěр сасă та илтěнмест. Йытти тилě йěрне тупрě те шăршла пуçларě. Уçăппа йытти тилě йěрěпе кайрěç. Тилли питě чее: вырăнě-вырăнěпе йěрне çухатма тăрăшнă. Пěр уçланкăра йытă тилле хăваласа çитрě. Уçăп йывăçсем хыçне пытанчě. Йытă тилле Уçăп еннелле хăваларě. Тилě çиле хирěç чупать. Сасартăк пăшал сасси кěрěслетрě. Тилě тӳнсе кайрě. Уçăп тилле килне илсе таврăнчě.

5. **Пирěн кӳлě.** Пирěн колхозăн пулă кӳлли пур. Пулла колхоз хăех кӳлле ярса ěрчетнě. Кӳлě тавра яштака хăва хуллисем. Пулăсене колхоз сěрекесемпе, шакăсемпе тытать. Вěт пуллисене çитěнме каялла шыва ярать.

Пирěн колхозăн тырри те ăнса пулать. Тулли кашни гектар пуçне çирěм пилěк центнер тухрě. Уйри ěçсене ěçленě хушăра час-часах çамрăксен савăк юрри илтěнет.

6. 1. Йывăç турачĕ çинче пакша ларать. 2. Вĕренекенсен тетрачĕсем таса та тирпейлĕ пулмалла. 3. Партизансен отрячĕ нимĕç склачĕсене вут тĕртсе çунтарса ячĕ. 4. Суворов похочĕсем çинчен кĕнеке вуларăм. 5. Кашни ачан хăйĕн кровачĕ, хăйĕн алшăллийĕ пулмалла. 6. Колхоз сачĕ таврана илем кӳрет. 7. Йытă çĕмĕрчĕ вăрманта ӳсет. 8 Хула çурчĕсем темиçе хутлă пулаççĕ. 9 Вĕлле хурчĕсем çуллахи ăшă вăхăтсенче сĕрлеççĕ, тăрăшса пыл тăваççĕ. 10. Хĕлле çырма-çатрасенче юр кĕрчĕсем купаланса тăраççĕ.

7. **Партизансен отрячĕ.** 1941-мĕш çулта нимĕçсем пирĕн çĕршыва вăрă-хурахла тапăнса кĕчĕç. Белоруссири Лопатино ялне те нимĕçсем пырса тулчĕç. Çынсем хăйсен çурчĕсенчен туха-туха тарчĕç. Çывăхри вăрмансенче партизансен отрячĕсем тăва-тăва хучĕç. Партизансен отрячĕсем нимĕçсене кунĕн-çĕрĕн канăç памастчĕç. Яла вырнаçнă нимĕçсем çине вĕсем çĕр варринче тапăнатчĕç. Нимĕçсен хĕçпăшал склачĕсем çине тапăнса, хăйсем хĕçпăшаллă пулса тăратчĕç. Час-часах нимĕç поезчĕсене, минăсем хурса, рельсăсене пăсса, сирпĕнтеретчĕç. Совет самолĕчĕсем партизансемпе çыхăну тытатчĕç, вĕсем валли хĕçпăшал, продуктсем, литература т. ыт. те илсе пыратчĕç.

8. Турат-турачĕ. Çурт... Хурт... Сăрт... Кĕрт... Сад... Тетрадь... Склад... Çĕмĕрт.. Терт.. Кӳкĕрт... Тивлет... Хут... Вут... Суд... Поход.. Опыт... Апат... Шерпег... Черет... Тикĕт... Чăкăт... Пушăт... Ӳт... Кровать... Билет... Кĕлет... Меслет... Сурат... Сехет... Ответ... Çунат... Хăват... Хăлат... Нухрат... Хаçат...

9. **Чăваш пичечĕ.** Шупашкарта пичет çурчĕ пур. Пичет çуртĕнче типографи, хаçатсен редакцийĕсем, Чăвашгиз вырнаçнă. Шупашкарта „Чăваш Коммуни" тата „Красная Чувашия" хаçатсем тухса тăраççĕ. Пичет çуртĕнчех „Ялав" тата „Тăван Атăл" журналсем пичетленеççĕ. Кашни районтах район хаçачĕсем тухаççĕ. Пирĕн типографисенче шкулта вĕренмелли кĕнекесем тухса тăраççĕ, илемлĕ литература кĕнекисем нумай пичетленеççĕ. Чăваш пичечĕ Октябрьти революци хыççăн кăна вăй илсе аталанчĕ.

10. 1. Хăй кĕтĕвĕ патĕнче ача шăхличĕ калать. 2. Салтак çырăвĕ амăшĕ патне килчĕ. 3. Колхозниксен пухăвĕ каçхине çичĕ сехетре уçăлчĕ. 4. Ĕç ăмăртăвĕ ĕç тухăçне хăпартать. 5. Ачасен пĕлĕвĕ çулган çул хăпарса пырать. 6. Ачасен йăпанăвĕ — тĕрлĕ вăййăсенче. 7. Класс кĕрешĕвĕ обществăра классем пулса тăрсассăнах тапраннă 8. Колхозниксен ялхуçалăх ĕçĕнчи хавхаланăвĕ сарăлсах пырать.

11. **Социализмлă ăмăрту.** „Большевик" колхозăн çырăвĕ „Социализм" колхоза килчĕ. „Социализм" колхоз членĕсен пухăвĕ пуçтарăнчĕ. Колхозсен социализмла ăмăртăвĕ тапранчĕ: „Большевик" колхозăн чĕнĕвĕ — кăçал кашни гектартан 25 центнер тулă туса илесси. „Социализм" колхоз пухăвĕн йышăнăвĕ — кашни гектартан 28 центнертан кая мар тулă тумалла.

12. Ăмăрту-ăмăртăвĕ. Çыру.. Вĕренӳ... Пĕлӳ... Хуплу... Пăру... Пашалу... Веçленӳ... Суту-илӳ... Çĕкленӳ.. Хавхалану... Çыхăну... Чĕнӳ... Калаçу... Иртĕнӳ... Çулу... Хушпу... Улшăну...

Пуçару... Çитĕнӳ.... Килĕшӳ... Хутăштару... Хутлану... Кĕрешӳ... Çапăçу... Хирĕçӳ... Çĕнтерӳ... Кӳренӳ... Тытăçу... Ту...

13. 1. Çерçие ялта куратпăр. 2. Çерçийĕн йăви çурт тавра-шĕнче пулать. 3. Пăрие уя акатпăр. 4. Пăшие тытма чарнă. 5. Пăшийĕн мăйракисем йӳпленсе тăраççĕ. 6. Тăрийĕн юрри тӳ-пере янăрать. 7. Çĕрулмие яровизацилени ăна иртерех çитĕнме пулăшать тата унăн тухăçне хăпартать. 8. Пире коммунистсен пар-тийĕ ертсе пырать.

14. Тăри. Тăри çуркунне шăнкăрчпа пĕр вăхăтра вĕçсе килет. Тăрийĕн юррине эпир савăнса итлетпĕр. Тăрие, анса ларсассăн, курма йывăр, мĕнщĕн тесен вăл тăпра тĕслĕ. Тăри ялхуçалăхне пысăк усă кӳрет. Вăл ялхуçалăхне сиен кӳрекен хурт-кăпшан-кăсемпе тăранса пурăнать.

## § 2. Аффикссем хушса япала ячĕсем тăвасси.

15. 1. Арпалăха арпа хурса усраççĕ. 2. Вăрманта турталăх йывăç тупса касрăм. 3. Пуралăх хыр касрăмăр. 4. Магазинтан пĕр чӳречелĕх кантăк туянтăм. 5. Асанне пĕр хутăрлăх çип арланă. 6. Вĕлле хурчĕсем хăйсене пурăнмалăх та, илмелĕх те пыл тă-ваççĕ. 7. Пирĕн хуçалăх çултан çула çитĕнӳсем тусах пырать. 8. Октябрьти Социализмлă Аслă революци Российăри ĕççыннисене чуралăхран хăтарчĕ.

16. Çуна—çуналăх. Урапа... Чӳрече... Чăрăш... Шĕшкĕ... Хурама... Мунча... Кунча... Атă... Пуртă... Кĕпе... Шӳрпе... Пĕрне.. Вĕре-не... Çĕмĕрт... Турта... Хыр... Йăмра... Юман... Ăвăс... Яшка... Хăва... Çырма... Вулама... Ярапа... Арча... Кĕнеке... Çиме... Ут-ма... Хутма... Пилеш... Атма... Хуплу... Икерчĕ...

17. Петĕр вăрмантан пуралăх йывăç кăларнă. Магазинтан чӳ-речелĕх кантăк туяннă. Кирпĕч заводĕнчен кăмакалăх кирпĕч илнĕ. Пӳрт çине витмелĕх хăма заводĕнчен хăма илнĕ. Çапла ĕнтĕ Петĕр пӳрт тумалăх пур хатĕрсене те туяннă. Унăн плат-никĕсене ĕçшĕн тӳлемелĕх укçи те пур. Тата Петĕр шыв хĕр-ринчи хăвалăхран лăпăлăх хăва хуллисем каснă.

## § 3. Паллă ячĕсем.

18. Çаран çинче. Çаран çинче тĕрлĕ тĕслĕ чечексем ыра шăршă сараççĕ. Чечексене шуррисене, кăваккисене, саррисене, кĕреннисене татрăмăр. Çулла ачасем имлĕ чечексене пухаççĕ те сиплĕ имçамсем тума параççĕ. Ĕçчен вĕлле хурчĕсем пĕр чечек-рен тепĕр чечек çине вĕçеççĕ. Лутра курăксем хушшинчи пиçсе çитнĕ хĕп-хĕрлĕ çырласем илĕртеççĕ.

19. Пулă тытни. Йăмраллă урамсемпе малалла утатпăр. Чĕн-тĕрлĕ кĕпер патне çитетпĕр. Кĕпертен тăварах вăлталлă ачасем пулă тытса лараççĕ. Вăлтана вăлчаллă пулăсем те лекеççĕ. Хĕрлĕ сухаллă пулăсене ача, вăлтаран вĕçертсе, тимĕр витрене чăмта-рать. Ача патнелле чĕпĕллĕ хур ишсе пычĕ. Пулăсем вăлтана лекми пулчĕç.

20. **Вăрманта.** Вăрманта çӳллĕ йывăççем сенкер пĕлĕтелле кармашаççĕ. Шурă пӳллĕ хурăнсем кăтрисене сапаласа янă. Симĕс тухъяллă чăрăшсем ним чĕнмесĕр лараççĕ. Лутра шĕшкĕпе юнашар мăнкăмăллă юман тарăн шухăша кайса ларать. Шурă шупăрлă çĕмĕрт хăйĕн шăршипе сăмсана кăтăклантарать. Чăтлăхра чăпар куккук авăтать. Янравлă шăпчăк сăвăллă юррине шăрантарать.

21. **Колхоз хирĕнче.** Сарă ыраш хăййăн выртса ӳснĕ. Пучахсем тулли те шултăра. Ĕçчен колхозниксем бригадăн-бригадăн машинăсемпе, çурласемпе тырă выраççĕ. Тикĕс хăмăл çинче çĕмелсем лараççĕ. Пăвăрлă сĕлĕ ыраш пуссипе юнашарах. Сĕлĕ хушшинче путене авăтать. Путенен хăлхи те куçĕ те çивĕч. Хăй патне çын çывăхарсанах, вăл тепĕр вырăна куçса авăтать.

22. **Икĕ йывăç.** Пирĕн карта патĕнче икĕ йывăç ӳсетчĕç: вата яштак вĕрене тата кукăр йăмра. Йăмрин пысăк та тарăн хăвăл пурччĕ, хăвăл патĕнче тачка турат пурччĕ. Эпĕ çав турат çине хăпара-хăпара лараттăм. Кунтан йĕри-тавраринe йăлтах кураттăм: çырман сарлака кăвак хăюне, çывăхри ыраш пуссине тата леререхри тĕксĕм хыр вăрманне.

23. **Аслати умĕн.** Кăнтăрлахи сывлăш пăчă та йывăр. Вăрмана, çывăхри тата инçетри ялсене йăлтах тĕксĕм те çӳçентерӳллĕ сăн çапрĕ. Хура та сăнсăр пăнчă, хăйĕн пысăк çуначĕсене сарса, васкавлă шурĕ. Сасартăк пĕр касă уçă çил вĕрчĕ те тĕмсем хушшине кĕрсе кайрĕ. Унтан тăвăл персе çитрĕ.

24. **Хурăн.** Хурăн паха та капăр йывăç. Унăн вăрăм вулли шап-шурă. Унăн кăтра çӳç-пуçĕ пирĕн куçа шартарать. Илемлĕ хурăна эпир пурте юрататпăр.

25. **Ваттисен сăмахĕсем.** 1. Ăшă сăмах çемçе кукăльтен лайăх. 2. Начар вăрлăхран ырă тырă пулмĕ. 3. Хаклă хăнана яланах хапăл. 4. Çĕнĕ тус ту та киввине те ан ман. 5. Тутли хыççăн йӳççине çăвара та хыпас килмест. 6. Пĕр çĕрĕк панулми пĕр лав панулмие çĕртнĕ. 7. Сыввине мар, чирлине эмел памалла. 8. Çу вăрăмми мар, ăшши пултăр. 9. Суккăрри куçлине çавăтса çӳремест. 10. Ваттинчен мар, курнинчен ыйтса пĕл. 11. Çамрăккине ĕçе чĕн, ваттинчен ăс ыйт. 12. Хăравçине тунката та хăратать.

26. 1. Çирĕп, вăйлă, сывлăхлă çын пул. 2. Йĕркеллĕ, таса чĕреллĕ, ĕçчен, чăтăмлă çын пулма сăмах паратăп. 3. Ĕçрен ан хăра, вăл хăй санран хăратăр. 4. Юг вырăнта сĕм вăрмантипе пĕрех. 5. Ырă ĕçпе те ан мухтан. 6. Ырă ут та такăнмасăр пулмасть. 7. Çирĕп, вăйлă тата сывлăхлă çыннăн шухăшĕсем те çирĕп, вăйлă, таса. 8. Çуранни лашаллине çитеймĕ. 9. Чавса çывăх та, çыртаймăн. 10. Хир куçлă, вăрман хăлхаллă. 11. Ялан ăспа çӳресен, ялти вата ятламĕ. 12. Выртан каска мăкланнă, çӳрен каска якалнă.

27. **Суйласа çырмалли диктант.** Вăл мĕнпе ӳкерет? (хĕрлĕ тата кăвак карандаш). Пирĕн кил карташне мĕн тытса çавăрнă? (çӳллĕ хӳме). Эсĕ мĕн тĕслĕ чернилпа çыратăн? (хура чернил). Тĕтре ăçта сарăлнă? (çывăхри шур). Кашкăрсем ăçта пулнă? (çывăхри вăрман). Шăпчăк ăçта йăва çавăрнă? (йĕплĕ шăлан). Утă мĕнпе çулаççĕ? (çивĕч çава). Утар таврашĕнче мĕн явăнать?

(ҫӑмламас упа). Йытӑ мӗне хӑваларӗ? (шурӑ мулкач). Ҫырмари шыв мӗнпе витӗннӗ? (ҫӳхе пӑр). Путене мӗнпе тӑранать? (сарӑ тулӑ).

28. **Пӑхса ҫырмалли диктант.** Хор мӗн юрларӗ? (хавхаланул-лӑ юрӑ). Тырра мӗнлине вырмаҫҫӗ? (симӗсси). Чечексене мӗнлисене татрӑн? (шурри, сарри, кӑвакки). Лаша шыва мӗнлине юрататъ? (таси, тӑрри). Апата мӗнлине ҫиме юрамасть? (сивви, вӗри). Сада чиене мӗнлине лартаҫҫӗ? (ҫамрӑкки). Ҫынсем уявра тумтирсене мӗнлине тӑхӑнаҫҫӗ? (ҫӗнни, аванни). Пулӑсем атмана мӗнлисем лекмеҫҫӗ? (вӗтти). Лашасене мӗнлисене кӳлнӗ? (ҫӳренни, сарри, кӑвакки). Чӑхӑ хӑшӗ кӑлӑклать? (чӑпарри, сарри). Мӑйӑра мӗнлине татмаҫҫӗ? (хӑрӑкки). Туя кама кирлӗ? (ватти). Ёнесем мӗнлисем пулаҫҫӗ? (хӑмӑрри, хӗрли, хури, шурри). Задачӑна мӗнлине шутларӑн? (йывӑрри).

29. **Творчески диктант**. Темӑсем: а) **Вӑрманта.** Сӑмахсем: ҫулҫӑллӑ вӑрманта, ҫӳллӗ йывӑҫсем, чечексене шуррисене, кӗреннисене, саррисене, ҫамрӑккисене, юрӑсем, йывӑҫсен, ҫӳллисен, тӑррисем.

ӑ) **Сунарта.** Сӑмахсем: хӗллехи ир, хӗрлӗ йытӑпа, шурӑ юр ҫинче, ҫивӗч хӑлхипе, шурӑ мулкач хыҫҫӑн.

б) **Утӑ ҫулни.** Сӑмахсем: Ҫуллахи ир, сывлӑмлӑ ҫаран ҫинче, ҫутӑ хӗвел ӑшшинче, шавлӑ ушкӑн, ырӑ шӑршӑллӑ утӑ ҫинче.

## § 4. Аса илмелли ӗҫсем.

### Япала ячӗ тата паллӑ ячӗ.

30. **Колхозлӑ ял.** Колхозлӑ ял вӑйланса пырать. Колхозлӑ ялӑн пуянлӑхӗ кунран кун ӳсет. Колхозлӑ ялӑн тырӑ тухӑҫӗ ҫултан ҫулах хӑпарса пырать. Колхозлӑ ял ҫӗнӗ ялхуҫалӑх машинисем ытларах та ытларах туянать. Колхозлӑ ял электричество вӑйӗпе усӑ курать. Колхозлӑ ялта выльӑх-чӗрлӗх шучӗ ӳссех пырать. Колхозлӑ ялта халӑх мунчи тунӑ. Колхозлӑ ялта кашни килтех радио пур. Колхозлӑ ял хула культурине хӑвӑрт йышӑнать. Социализм хулапа ял хушшинчи ӗлӗк-авалтан пулнӑ уйрӑмлӑха пӗтерет.

31. **Ҫуллахи ир.** Ҫуллахи лӑпкӑ ир. Хӗвел чылай ҫӳле хӑпарнӑ, анчах хирте сывлӑм йӑлтӑртатать-ха. Уҫа сывлӑшра ырӑ шӑршӑ варкӑшать. Лӑпкӑ та нӳрӗк вӑрманта вӗҫен кайӑксем савӑнса юрлаҫҫӗ. Айккисем сӗвеккӗн хӑпаракан ту ҫинче ял курӑнать. Ыраш тин шӑркана ларнӑ. Ҫак ял патнелле уйри ансӑр ҫулпа ҫине шурӑ кӗпе, пуҫне улӑм шӗлепке тӑхӑннӑ, аллине зонтик тытнӑ хӗрарӑм пынӑ.

32. **Кавказ.** Эпир чӑнкӑ ҫыран хӗррипе пыратпӑр. Аялтан кӑвак ӗнтрӗк витӗр ту ҫинчен юхакан ҫырман ҫутӑ хӑюне курма пулать. Терек кӑпӑкланса, кӗрлесе юхнине куртӑм. Терек тусем хушшипе хӗсӗнсе, шавласа, чулсем тӑрӑх ыткӑнать. Эпӗ Кавказӑн чи ҫӳллӗ тӑррине, Эльбруса, куртӑм. Юрлӑ ту тӑррине эпӗ малтанах — ку шурӑ пӗлӗт пулӗ, терӗм.

33. **Кĕрхи ир.** Хĕвел тухнă кăна. Çутă пайăркисем аллейăри саралнă çăкасем витĕр сапаланса çĕрелле ÿкеççĕ. Сукмак çинче чăштăртатакан çулçăсем выртаççĕ. Сивĕ тивсе лÿчĕркеннĕ пăтнат çулçăсемпе пĕрле пĕркеленчĕк хĕрлĕ пилеш çупкăмĕсем çакăнса тăраççĕ. Георгинсем пĕркеленсе хуралнă. Шупкалнă ешĕл курăк çине тата çурт çумĕнчи хуçкаланчăк хупах çине кĕмĕл тĕслĕ пирвайхи тăм ÿкнĕ.

34. **Хăмăр упа.** Хăмăр упан тăлпăвĕ кĕске те тачка, пуçĕ шĕвĕр, куçĕсем хĕсĕк, хăлхисем пĕчĕкçĕ, хÿри кĕп-кĕске, ури лапписем тачка та вăйлă. Упа тирĕ вăрăм та лăпсăркка çăмлă.

35. **Çуркунне вăрманта.** Кăвак пĕлĕт тата çуркуннехи уçă сывлăш мана çывăхри вăрмана илĕртрĕç. Эпĕ пăчă пÿлĕмрен тухрăм та ансăр сукмакпа вăрманалла утрăм. Эпĕ часах çывăхри вăрмана çитрĕм. Сывлăш уçă. Çамрăк çулçăсем йăлтăртатаççĕ. Пирвайхи çутă чечексем хитре пуçĕсене каçăртса лараççĕ. Çемçе курăк çинче шултăра сывлăм тумламĕсем йăлтăртатаççĕ. Вĕçен кайăксем çÿлте юрă юрлаççĕ.

36. **Пахча.** Çулпа çăкалăхран тухрăмăр та пахчана кĕрсе кайрăмăр. Ватă улмуççисем хушшинче шултăра купăста пуçĕсем курăнаççĕ. Çÿллĕ шалчасем тавра симĕс хăмла аври явăннă. Чăсăк та шултăра кавăнсем çĕр çинче выртаççĕ. Кĕтеслĕ çулçăсем хушшинче симĕс хăярсем. Çÿллĕ çатан патĕнче типнĕ вĕлтĕрен хумханать. Пахча айккинелле илсе каякан ансăр сукмак çинелле пăрăнтăмăр. Тĕм хыçĕнчен хăма витнĕ пĕчĕк крыльцаллă пÿрт курăнса кайрĕ.

37. **Çулла.** Çаран симĕс ковĕр евĕрлĕ сарăлса выртать. Тĕслĕрен тырă хумханать. Инçех мар кĕрен-шурă чечеклĕ, хĕрлĕ туналлă хуратул. Юнашарах тăсăк та тĕксĕм симĕс çулçăллă, хĕрлĕ-сарă пучахлă вир. Çил варкăшĕ килсе çапăнчĕ. Сарă ыраш хумханать, урпапа тулă пучахĕсем пуçĕсене таяççĕ, шупка шерепеллĕ сĕлĕ пăшăлтатать. Тÿпере тăри юрри илтĕнет.

38. **Сунара кайни.** Левин пăшал илчĕ те хăйĕн Ласкипе пушă урама тухрĕ. Вăл карчăка тĕл пулчĕ. Акăш шурĕ патне каймалли çул çинчен ыйтрĕ. Карчăк ăна кантăр анипе илсе кайрĕ те кукăр-макăр сукмак кăтартрĕ. Хĕвелтухăçĕнчен тухакан хĕвел курăнчĕ. Левин куçĕсем шурăмпуç çăлтăрне шырарĕç, анчах вăл ĕнтĕ сÿннĕ. Вĕçĕ-хĕррисĕр хирте Левинăн чĕри хавассăн тапать, унăн кăкăрĕ çăмăллăн сывлать. Вăл айлăмри шур патнелле васкарĕ.

39. **Вĕлле хурчĕ.** Юр ирĕлнĕ вырăнсенче, пирвайхи чечексем шăтса тухсанах, юмахри пек ăвăслă çуртĕнчен малтанхи хут вĕлле хурчĕ вĕçсе тухрĕ. Пĕр ирхи чечек çинчен вăл тепĕр чечек çине вĕçсе ларать, ырă та ăшă çуркуннерен тĕпчет: „Час килет-ши хаклă хăна, час ешĕрет-ши çаран, кăтра хурăн çулçисене час сарать-ши? ырă шăршлă çĕмĕрт çеçки час çурăлать-ши?"

(А. С. Пушкинăн и тăрăх)

40. **Çĕрле.** Ытарма çук каç! Шартлама сивĕ, пĕлĕт тап-таса çĕлесе тытăнтарнă шăналăк пек, кăвак тÿпене çăлтăрсем чăшăлах тухнă. Çурт-йĕрсенче тĕттĕм-ха. Хапхасене мăн çăрасемпе питĕр-

нĕ. Халăх пур çĕрте те лăпкăн канать. Суту-илӳ шавĕ, çуйхашу чарăнчĕ. Карташ хуралçи кăна, сăнчăрне чанкăртаттарса, вĕркелет.

(А. С. Пушкин).

## МЕСТОИМЕНИ.

## § 5. Сăпатлă местоимение тĕрĕс çырасси.

41. 1. Эпĕ шкула сакăр сехет çурăра каятăп. 2. Манăн юлташ Иван ятлă. 3. Эсĕ кăнтăрла иртсен пĕр сехетрен киле таврăнатăн. 4. Эсир хурăна пурте юрататăр, ăна çурт-йĕр çывăхне лартса ĕрчететĕр, ун çинчен юрăсем юрлатăр. 5. Эпир вăрман патне çывхаратпăр. 6. Тăм кирпĕч тунă çĕре каять; унран чӳлмексем те тăвaççĕ. 7. Пирĕн колхоза преми пачĕç. 8. Сирĕн хваттертен пирĕн çурт çур километрта. 9. Ивана эпĕ хăйне куртăм. 10. Эпир Анна патне тата унăн йăмăкĕ патне кайрăмăр. 11. Çĕнĕ пускиле эпир сайра куратпăр. 12. Манăн икĕ пичче пур. 13. Кама юратаççĕ, ăна итлеççĕ. 14. Кириле алса шырать, вăл хăйĕнчех пулнă-мĕн.

42. **Хурт ĕрчетекенĕн калавĕ.** Ман çемьере пурте хуртсене хăнăхса çитнĕ, анчах ман кĕçĕн хĕр пыл хурчĕсенчен хăратчĕ. Эпĕ ăна хуртсенчен хăрама акă мĕнле пăрахтартăм. Эпĕ хурт сăвăр уйăрса турат çине сăрнине куртăм. Хурт амине тытрăм. Хĕре перчетке, пит-куç витти тăхăнтартрăм, аллине хурт ами тыттартăм. Хуртсем хĕр тавра явăнаççĕ. Унăн аллине сăрса илчĕç. Эпĕ хуртсене кунтăк çине пуçтартăм.

43. **Чĕкеç.** Чĕкеçе кам пĕлмест-ши, кам савмасть-ши çак çивĕч те кӳрентермен пĕчĕк вĕçен кайăка? Ăна епле пĕлмĕн-ха: вăл сăвĕпех пирĕн çурт-йĕр таврашĕнче, сывлăшра явăнать. Кашни хуларах, чи пысăк урамсенче, чӳречен çӳлти кĕтесĕ çумне хулари чĕкеç тăмран йăва çавăрать. Ялти чĕкеç пӳрт витти айне е сарай витти айне тăмран йăва çавăрать. Ялти чĕкеçе халăх питĕ юратать: вăл вĕçнĕ тăрăх çанталăк улшăнассине пĕлет; унăн сăвăллă юрри халăха хавхалантарать, савăнтарать (Богданов калавĕ тăрăх).

44. **Юман.** Юмана халăх питĕ юратать. Вăл ун çинчен юрăсенче те юрлать. Юманăн вулли те, хуппи те, йĕкелĕ те кирлĕ. Унăн хуппинче кислота нумай, вăл тир тунă çĕре каять. Унăн вулли питĕ çирĕп, унтан хаклă йышши сĕтел-пукансем, шкапсем тăваççĕ.

45. **Вăрманта.** Ачасем вăрмана кайнă. Вĕсем вăрманта çырла татнă. Вĕсен сывлăхĕшĕн вăрманти уçă сывлăш питĕ усăллă. Вĕсене шăпчăксем юрă юрласа савăнтарнă. Ачасемпе пĕрле вăрмана Улай ятлă йытă çури те пынă. Вĕсенчен инçе мар чĕрĕп пулнă. Вăл, çынсене курсанах, лăпчăнса, шăрчĕсене тăратса выртнă.

46. **Петĕр.** Вăл вунпĕр çулта пулнă. Ăна ашшĕ хĕлле валли пальто çĕлетсе панă. Унăн пуçне тăхăнма çĕлĕк, аллине тăхăнма алса, урине тăхăнма кăçатă пулнă. Ăна хĕллехи сивĕ хăратайман.

Шкултан таврӑнсан, вӑл йӗлме йӗлтӗрӗпе ярӑннӑ. Унӑн сывлӑхӗ ҫирӗпленнӗ. Ашшӗ-амӑшне вутӑ татма пулӑшнӑ, выльӑхсене апат панӑ. Уҫӑлнӑ хыҫҫӑн вӑл вуланӑ, ҫырнӑ, задачӑсем шутланӑ.

47. Манӑн пичче тата йӑмӑк пур. Мана пичче ҫунашка туса пачӗ. Унпа эпӗ тӑвайкки ярӑнатӑп. Манпа пӗрле Анна, Алтюк, Верук ярӑнаҫҫӗ. Анна манран икӗ ҫул кӗҫӗн. Вӑл иккӗмӗш класра вӗренет. Унӑн кӗнекисем тата тетрачӗсем тирпейлӗ те таса.

48. **Пирӗн колхоз.** Пирӗн колхозра виҫӗ бригада. Вӗсем пӗрпӗринпе ӑмӑртса ӗҫлеҫҫӗ. Иккӗмӗш бригада ӑмӑртура мала тухрӗ. Ӑна преми пачӗҫ.

Пирӗн задача — вӑйлӑ тырпул туса илесси. Ӑна эпир пилӗк ҫуллӑх план тӑрӑх ӗҫлесе тӑватпӑр. Пире Сталин аттемӗр пӗтӗм вӑя хурса, тӑрӑшса ӗҫлеме хушать. Эпир Сталин сӑмахӗсене яланах пурӑнӑҫа кӗртме хатӗр.

49. Кама шкулта тетрадь панӑ? (*эсӗ*). Кама ашшӗ йӗлтӗр илсе панӑ? (*вӑл*). Куҫма камран икӗ ҫул аслӑ? (*эпӗ*). Кирук камран аван вӗренет? (*эсӗ*). Ҫемен кампа пӗрле шкула ҫӳрет? (*эпӗ*). Камӑн ашшӗ заводра ӗҫлет? (*эсӗ*). Камӑн амӑшӗ колхозра ӗҫлет? (*эпӗ*). Ҫулла кама экскурсие яраҫҫӗ? (*вӑл*). Эсир кампа хуларан таврӑнтӑр? (*вӑл*). Камӑн мӑйӗнче хӗрлӗ галстук? (*вӑл*). Кама амӑшӗ юрататъ? (*эсӗ*).

50. Хӑш колхозра ӗне, лаша, сысна, сурӑх фермисем пур? (*эпир*). Хӑш шкулта шкул сачӗ пур? (*эпир*). Кама музее экскурсине илсе кайрӗҫ? (*эпир*). Кампа пӗрле Ванюк ҫулла ҫырлана кайнӑ? (*эсир*). Таниле камран чупса иртрӗ? (*вӗсем*). Петӗр камран виҫӗ ҫул кӗҫӗнтерех? (*эсир*). Камӑн аттисем таса? (*вӗсем*). Камӑн Мускав курас килет? (*эсир*). Кама лайӑх вӗреннӗшӗн кӗнеке парса премилерӗҫ? (*эпир*). Стена хаҫатне камӑн статьисем тухрӗҫ? (*вӗсем*). Ҫулла кампа пӗрле шыва кӗме каятӑн? (*вӗсем*). Кампа лапталла вылятӑн? (*эсир*). Камра ӳркенӳ ҫук? (*вӗсем*). Октябрӗноксем камран пулӑшу кӗтеҫҫӗ? (*эпир*).

## ГЛАГОЛ.

## § 6. Аса илмелли ӗҫсем.

### (Виҫҫӗмӗш класра вӗреннине аса илни).

51. **Ҫуллахи каникулта.** Ҫулла ялта питӗ лайӑх. Ирхине ирех тӑратӑн та чей ӗҫетӗн, унтан вӑрмана уҫӑлса ҫӳреме каятӑн. Сукмаксем тӑрӑх ҫӳретӗн, уҫӑ сывлӑшпа сывлатӑн. Ывӑнса ҫитетӗн те пӗве хӗррине ларса канатӑн е симӗс курӑк ҫине тӑсӑлса выртатӑн. Унтан кӑнтӑрлаччен пахчара ӗҫлетӗн. Апат ҫинӗ хыҫҫӑн канатӑн, унтан ҫырмана, хире тата вӑрмана каятӑн. Вӑрманта кӑмпа тататӑн, хирте чечексем пуҫтаратӑн, пуҫ кӑшӑлӗ тӑватӑн. Лӗпӗшсем тытатӑн, курӑк ҫинче выртатӑн. Ҫырмара шапа хуранӗсем пуҫтаратӑн, вӑлтапа пулӑ тытатӑн. Шыва кӗретӗн те, ывӑнса ҫитсе, киле таврӑнатӑн. Каҫхи апат ҫиетӗн те хытӑ ҫывӑрса каятӑн.

52. **Ҫавал хӗрринче.** Хӗвел шевли Ҫавал ҫинче вут пек выляса тӑрать. Хӗвел хӗртнипе ҫӗртен пӑс тухать те вырӑнтан вырӑ-

на куçса çӳрет. Çилпе чӳхенсе ларакан йăмрасен мĕлкисем Çавал çинче пĕлĕтсем юхса çӳренĕ пек курăнаççĕ. Çавал хĕрринчи юшкăн тăпри çинче çутă çурхахсем ылттăнăн-кĕмĕлĕн курăнаççĕ. Хăш еннелле пăхсан та, темĕн чухлĕ пахча сарăлса выртать. Ушкăн-ушкăн хăмла шертисем шăкăртатса лараççĕ. Хăмăшхăях хушшинче кӳлĕсем çутăлса выртаççĕ. Кĕмĕл пек çутă пулăсем сике-сике илеççĕ. Ялтан пĕр километрта вĕçĕ-хĕрри курăнман пысăк вăрман сарăлса выртать. Сарлака, аслă çул тăрăх, вăрман хĕррипе, тӳп-тӳрĕ телеграф юписем курăнса лараççĕ. Вăхăт-вăхăт паровоз кăшкăртни янăраса каять.

53. **Тупмалли юмахсем.** 1. Алли çук, ури çук, хăй кĕмсĕртетет, шаккать, халтăртатать. (*Аслати*). 2. Пуçне çиеççĕ, ӳтне пăрахаççĕ, тирне тăхăнаççĕ. (*Йĕтĕн*). 3. Çулла ӳсеççĕ, кĕркунне ӳкеççĕ (*Çулçăсем*). 4. Мĕне çулталăкра пĕрре капăрлатаççĕ? (*Ёлка*). 5. Икĕ кăвак кăвакарчăн çĕр айĕнче çӳреççĕ, çынсене ырлăх кӳреççĕ. (*Плуг*). 6. Мана касаççĕ, мана çыхаççĕ, пĕр хĕрхенмесĕр хĕнеççĕ, вутпа шыв витĕр тухатăп, юлашкинчен мана çĕçĕ ваклать те шăл ватать. (*Çăкăр*). 7. Алăкран кĕтĕм, акам куртăм. (*Пĕрене çурăкĕ*). 8. Утса-утса пынă чух кĕмĕл çĕррĕм тухрĕ ӳкрĕ, уйăх курчĕ, хĕвел илчĕ. (*Сывлăм*). 9. Тумлать, тумлать, çĕре тивмест. (*Сăпка*). 10. Сăмсасăр кăвакал пăр шăтарать. (*Тумла тумлани*).

54. **Пакшасем.** Пакшасем апата малти урисемпе тытаççĕ те çăварĕ патне илсе пыраççĕ. Вĕсем йывăçсем çине хăпарма питĕ пултараççĕ. Пакшасем йăвисене йывăç хăвăлĕсене тăваççĕ. Вĕсем йывăçсен кăчкисене çиеççĕ, вăрмансене пысăк сиен кӳреççĕ. Пакшасене вĕсен çемçе тирĕшĕн тытаççĕ.

## § 7. Хальхи вăхăтри пĕрреллĕ хисепри виççĕмĕш сăпатри глаголсене çырасси.

55. **Тупмалли юмахсем.** 1. Суккăр автан сиксе авăтать. (*Пуртă*). 2. Шывра çуралать, шывран хăрать. (*Тăвар*). 3. Кăнтăрла ташлать, çĕрле кĕтессе кĕрсе выртать. (*Шăпăр*). 4. Сăрт çинче кăптăр-каптăр çурт тăрать, шыв сирпĕнет, сухал силленет. (*Арман*). 5. Алăсăр-урасăр—кĕпе тăхăнать. (*Тӳшек.*) 6. Пуртăсăр, алăсăр пӳрт тăвать. (*Вĕçен кайăк йăва çавăрни.*)

56. **Октябрьте.** Шав çывхарать. Халăх пуçтарăнать. Ялав вĕлкĕшет. Урам хумханать. Митинг пуçланать. Юрă тапранать. Чун çекленет.

**Пирĕн çĕршыв.** Пирĕн çĕршыв савăнать. Пирĕн çĕршыв чунтан хĕпĕртет. Пирĕн çĕршыври ача-пăча савăнса пурăнать. Совет çынни тинĕс тĕпне те анать, çӳллĕ ту çине те хăпарать, вăл пур çĕрте те парăнтарать.

1. Пĕччен суран—типсех пырать, халăх сурать—кӳлĕ тăвать.
2. Кĕрт хывать—тырă пулать, шыв тулса сарăлать—утă пулать.
3. Çеçпĕл кулянать, шикленет: таврара чечексем çук, тет.
4. Типпĕ çулçă тăкăнать, çил ашкăнать, кантăкран шаккать.
5. Утнă чухне арăслан чĕрнисене шалалла туртса кĕртет, ури лапписемпе çемçен пусать, çавăнпа вăл çывхарнине никам та

сисейместь. 6. Чӗкеҫ хӑйӗн йӑви тавра явӑнать, чӗпписене апат ҫитерет. 7. Пирӗн юрӑ сарӑлать, шӑранать, ӳсет.

57. 1. Ҫын аллинчи кукӑль пысӑккӑн курӑнать, пире лекет те пӗчӗккӗн туйӑнать. 2. Вӑрманта мӗнле сасӑ илтӗнет, ҫав сасӑ хирӗҫ чӗнет. 3. Вӑл мӗн тытнӑ, ӑна тӑвать. 4. Кам ӗҫлет, вӑл ҫиет. 5. Юланут пӗрхӗнет, юланут сирпӗнет, чӗрни айӗнчен тусан ҫӗкленет. 6. Тӳперен хӗвел пӑхать, йӑлтӑртатать, ялкӑшать, пайӑркисене уй-хире, ҫарана сапалать. 7. Вӑрман йӑшӑлта тумасть, юрӑ ҫех янӑрать, инҫетрен вӑл хӑлха патне килекиле ҫапӑнать. 8. Уйӑхран уйӑхах, ҫултан ҫулах пирӗн пурӑнӑҫ лайӑхланать, мӗншӗн тесен пире коммунистсен партийӗ ертсе пырать.

58. **Ҫерҫи ушкӑнӗ.** Ҫемен пӗр ывӑҫ сӗлӗ сапать, ҫерҫи ушкӑнӗ пухӑнать. Ҫерҫи ушкӑнӗ ҫапӑҫа-ҫапӑҫа ҫисе тӑранать, ҫивитти айне кӗрсе ларать, савӑнса чӗвӗлтетет.

59. **Поезд.** Шӑнкӑрав чанкӑртатать. Семафор уҫӑлать. Поезд ҫывхарать. Поезд чарӑнать. Халӑх вӗркет. Стрелка куҫать. Поезд тапранать. Семафор хупӑнать. Каллех лӑпланса ҫитет.

60. **Кӗр паллисем.** Кӗр ҫитсе пырать. Ав эрешмен карти хӗвелпе йӑлтӑртатса тӑсӑлать. Лере капан каҫӑрӑлса ларать. Хӳме урлӑ хӗрлӗ пилеш ҫупкӑмӗ уртӑнать. Хирте сурат сайралать. Лере ем-ешӗл калча кӗҫеленет.

61. **Кӗркунне.** Сентябрь уйӑхӗнче кӗр пуҫланать. Хӗвел кунран кун сахалтарах ӑшӑтать. Ҫанталӑк сивӗтет. Сивӗ ҫил вӗрет, ҫумӑр ҫӑвать, таврана тӗтре хуплать. Вӗҫен кайӑк ӑшӑ енне вӗҫсе каять.

62. *Творчески диктант.* Тема: **Самовар лартни.** Сӑмахсем: ярать, хупать, кӑмрӑк ярать, чӗртет, трубине лартать, илет, уҫать, пӗҫерет, лартать, тултарать, ӗҫет.

## § 8. Хальхи вӑхӑтри нумайлӑ хисепри виҫҫӗмӗш сӑпатри глаголсем.

63. 1. Атӑл тӑрӑх тӑвалла та аналла та пароходсем иртеҫҫӗ. 2. Кушак куҫӗсем тӗттӗмрен хӑрамаҫҫӗ. 3. Вӑйпа ҫех кӗрешмеҫҫӗ, мелпе кӗрешеҫҫӗ. 4. Сурӑхсем ҫулла кӗтӳре ҫӳреҫҫӗ. 5. Тырра вӑхӑтра акаҫҫе, вӑхӑтра выраҫҫӗ. 6. Урпа утмӑл кунта кӗрекене ларать, теҫҫӗ. 7. Ватӑ ҫынтан кулма хушмаҫҫӗ, пӗчӗк ачана вӗрентме хушаҫҫӗ. 8. Ӗҫе вӑхӑтра тӑваҫҫӗ, паянхи ӗҫе ырана хӑвармаҫҫӗ. 9. Вӗҫен кайӑксем пур ҫӗрте те вӗҫеҫҫӗ, вӗсен юррисем савӑнтараҫҫӗ. 10. Ҫанталӑк ӑшӑтать, хирти юрсем ирӗлеҫҫӗ, шывсем шарласа юхаҫҫӗ, ҫӳлте хуркайӑксем вӗҫеҫҫӗ.

64. **Тупмалли юмахсем.** 1. Марьепе Тарье хире-хирӗҫ пӑхаҫҫӗ. (*Урайпа мачча*). 2. Икӗ пӗр таван шыва кӗреҫҫӗ, виҫҫӗмӗшӗ кулать. (*Витресемпе кӗвенте*). 3. Иккӗшӗ шыва кӗреҫҫӗ, виҫҫӗмӗшӗ ҫӗрте выртать, иккӗшӗ тухаҫҫӗ, виҫҫӗмӗшӗ уртӑнать. (*Витресемпе кӗвенте*). 4. Ҫул урлӑ пурӑнаҫҫӗ, пӑхаҫҫӗ, пӗрпӗрне курмаҫҫӗ. (*Куҫсем*). 5. Тӑваттӑн тӗвеҫҫӗ, пӗри авӑсать. (*Лаша*). 6. Икӗ пӗр тӑван шыв ҫине пӑхаҫҫӗ, ӗмӗрне пӗр-пӗрипе пӗрлешмеҫҫӗ. (*Шыв хӗррисем*).

65. **В. И. Ленин мавзолейӗ патӗнче.** Шкул ачисен речӗсем шăвaççӗ. Музыка илтӗнет. Утăмсен хăвăртлăхӗ чакать. Колоннăсем мавзолей патне çывхараççӗ. Ялавсем усăнаççӗ. Ленина курма кӗрекенсем çӗлӗксене хываççӗ.

Ленин, пирӗн аслă учитель, каланă: „Кам ӗçлемест, вăл çимест",—тенӗ. Мӗне пӗлтереççӗ-ха çак сăмахсем, кама пырса лекеççӗ-ха Ленин сăмахӗсем? Эксплоататорсене, вӗсем хăйсем ӗçлемеççӗ, ыттисене ӗçлеттереççӗ те çын вăйӗпе пуяççӗ. Тата кама лекеççӗ? Камсем хăйсем кахалланаççӗ, çын вăйӗпе пуйма пăхаççӗ (И. В. С т а л и н).

1. Çырлана пиçсе çитсен татаççӗ. 2. Мăйăра тулса çитсен татаççӗ. 3. Мулкача капкăнпа, мăйкăчпа, пăшалпа тата йытăпа йӗрлесе тытаççӗ. 4. Вӗлле хурчӗсем ăшă вăхăтра вӗçеççӗ, сӗрлеççӗ, пыл тăваççӗ. 5. Сурăхсем кашкăрсенчен хăраççӗ. 6. Çуркунне вӗçен кайăксем чӗпӗ кăлараççӗ. 7. Пионерсем ашшӗ-амăшӗсене пулăшаççӗ. 8. Ачасем шкул пахчинче ӗçлеççӗ. 9. Пирӗн республикăра çул-йӗрсене юсасах тăраççӗ. 10. Колхоз хирӗнче тракторсем кӗрлеççӗ. 11. Вӗçен кайăксем савăнса юрлаççӗ. 12. Шăнкăрчсем хурăн çинче юрлаççӗ. 13. Хура кураксем йăмра çинче кăраклатаççӗ. 14. Çерçисем çăка çинче чӗвӗлтетеççӗ.

66. **Çил.** Çил пӗлӗтсене илсе килет. Çил карапсене путарать. Çил арман çуначӗсене çавăрать. Çил йывăççене йăвантарать. Çил пӳрт виттисене сирет. Çил кӗпе-йӗмсене типӗтет. Çил пушар вутне вăйлатать. Çилпе тырă сăвăраççӗ. Çилпе ӳсентăран вăррисем сапаланаççӗ. Çил сывлăша уçăлтарать.

**Çуллахи вăрман.** Йывăç çулçисем пăшăлтатаççӗ. Йывăççем сип-симӗс ешӗреççӗ. Уçланкăсенче чечексем курăнаççӗ. Ирхи куна касчен вӗçен кайăксем юрлаççӗ. Ачасем вăрмана çырласем, кăмпасем татма пыраççӗ.

**Хӗллехи вăрман.** Шăппăн та кичеммӗн ларать хӗллехи вăрман. Йывăççемпе тӗмсем шурă юрпа витӗнеççӗ. Йывăççене улакаткасем сăмсисемпе таклаттараççӗ. Тискер кайăксем шăтăксене тарса пытанаççӗ. Пакшасем хăвăлсенче мăйăр çиеççӗ. Упасем шăтăксенче çывăраççӗ.

67. **Мускаври метро.** Кӗретпӗр. Билетсем илетпӗр. Акă тӗлӗнмелле пусма. Ун çинче çынсем тăраççӗ, вăл хăех аялалла антарать, çӳлелле хăпартать. Аялта эпир хитре зал куратпăр. Икӗ минута кӗтетпӗр. Тоннельтен поезд тухать. Эпир вагона кӗретпӗр. Вагон алăкӗсем хăйсемех хупăнаççӗ. Поезд тапранать, каллех тоннеле кӗрсе каять. Эпир çемçе дивансем çинче ларатпăр. Вагона электричество çутти çутатать. Темиçе минутăран эпир хулан тепӗр вӗçне, Белорусси вокзалӗн площадьне, çитетпӗр.

68. **Çуркунне.** Ырă шăршăллă çӗмӗртсем чечеке лараççӗ. Хурлăхансем симӗс çулçă кăлараççӗ. Шăнкăрчсем пӗлтӗрхи йăвисене йышăнаççӗ, тирпейлеççӗ. Тăрисем кăвак тӳперен анмасăр юрлаççӗ. Хурт-кăпшанкăсем йăшăлтатаççӗ. Сывлăшра лӗпӗшсем вӗлтӗртетеççӗ. Вӗллесенче пыл хурчӗсем сӗрлеççӗ. Сирень çулçисем сарăлаççӗ. Вӗлтӗрен кайăкӗсем хурлăхан çине йăва çавăраççӗ. Кăткăсем кӗшӗлтетсе ӗçлеççӗ. Чӗкеçсем чӗвӗлтетсе хăйсен йăвисене кӗреççӗ.

69. **Пионерсем**. Пионерсем хăйсен организацийĕсенче ушкăнпа пурăнма вĕренеççĕ, физкультура тăваççĕ, хăйсен пÿлĕмне капăрлатаççĕ, вăхăта йĕркеллĕ ирттереççĕ т. ыт. те.

**Колхоз уставĕнчен.** Колхоз членĕсем хăйсен артельне çирĕплетеççĕ, чунтан тăрăшаççĕ, колхоз тупăшне ĕç тăрăх валеçеççĕ, обществăллă харпăрлăха сыхлаççĕ, колхоз пурлăхне упраççĕ, тракторсене, машинăсене тирпейлĕ тытаççĕ, лашасене лайăх пăхаççĕ, рабочисемпе хресченсен государствин заданине пурнăçлаççĕ—çапла вара колхозсем большевикла пулса тăраççĕ, колхозниксем пурте пуян пулаççĕ.

70. **Экскурсире**. Экскурсие кайма ăшă та çăмăл тумланаççĕ. Ирхине 8 сехетре пурте пуçтарăнаççĕ. Çул çинче пĕр-пĕринчен юлмаççĕ, пăтранмаççĕ. Вăрманта сапаланса пĕтмеççĕ. Пурте пĕр вăхăтра таврăнаççĕ. Вăрçмаççĕ, ятлаçмаççĕ.

71. ***Пăхса çырмалли диктант***. Чугун çул тăрăх çÿреме... Сылтăм еннелле... Вагон чÿречисенчен... Çуркунне шывсем çулленех... Пур çĕрте те хĕрлĕ ялавсем... Çуркунне пуринчен малтан хăвасем... Колхозниксем çуракине...

72. ***Суйласа илсе çырмалли диктант***. Хĕлле конькипе мĕн тăваççĕ? (*ярăн*). Ачасем шкулта мĕн тăваççĕ? (*вĕрен*). Колхозниксем хирте мĕн тăваççĕ? (*ĕçле*). Хыгă япаласем ăшăтсан, мĕн тăваççĕ? (*сарăл*). Пăчкăпа мĕн тăваççĕ? (*тат*). Тырра арманта мĕн тăваççĕ? (*авăрт*). Утта çавапа мĕн тăваççĕ? (*çул*). Пушара шывпа мĕн тăваççĕ? (*сÿнтер*).

73. ***Творчески диктант***. Темăсем: а) **Йĕлтĕрпе.** Сăмахсем: тăваççĕ, упраççĕ, сĕреççĕ. Çыраççĕ, çăмăл тумланаççĕ, чарăнмаççĕ, шăнса пăсăлма пултараççĕ, таврăнаççĕ, урăх тумтир тăхăнаççĕ.

ă) **Йĕлтĕрпе ярăнни**. Сăмахсем: вирхĕнеççĕ, хăрамаççĕ, пăрăнаççĕ, ÿкеççĕ, кулаççĕ, пыраççĕ, çавăрăнаççĕ.

## § 9. Хальхи вăхăтри нумайлă хисепри пĕрремĕш сăпатри глаголсем.

74. **Лагерьте.** Çулла эпир лагерьте пурăнатпăр. Лагерь патĕнче шыв юхать, тата вăрман кашласа ларать. Эпир ирех тăратпăр та зарядка тăватпăр. Зарядка хыççăн эпир ирхи апат çиетпĕр те вăрмана уçăлса çÿреме каятпăр. Эпир вăрманта çырласем, кăмпасем тататпăр. Вăрмантан эпир каялла лагере таврăнатпăр. Лагерьте кăнтăрлахи апат çиетпĕр. Эпир лагере питĕ юрататпăр.

1. Эпир йывăç сулхăнĕнче ларатпăр. 2. Эпир карандашпа тата чернилпа çыратпăр. 3. Эпир хамăр çĕршыва чĕререн юрататпăр. 4. Эпир Сталин сăнне чечексемпе капăрлататпăр. 5. Эпир чителейлĕ тапхăрта пурăнатпăр. 6. Эпир çăвара хупатпăр та сăмсапа сывлатпăр. 7. Эпир кашниех уйрăм кроватьсем çинче çывăратпăр. 8. Эпир шăлсене таса тытатпăр. 9. Çÿллĕ ту çине улăхатпăр. 10. Куçпа куратпăр, хăлхапа илтетпĕр, алăпа ĕçлетпĕр, урапа утатпăр. 11. Вăрçă хыççăнхи сурансене тÿрлететпĕр. 12. Шкулти стена хаçачĕ валли статьясем çыратпăр. 13. Хĕлле йĕлтĕрсемпе ярăнатпăр.

## § 10. Хальхи вăхăтри виççĕмĕш сăпатри пĕррелле хисепри ĕç пулманнине пĕлтерекен глаголсем.

75. 1. Çил-тăман чарăнмасть, çанталăк уçăлмасть. 2. Йывăç турачĕ тапранмасть, пĕр çулçă та вĕлтĕртетмест. 3. Курăк чăштăртатмасть, йывăç хумханмасть. 4. Халĕ ĕнтĕ шăпчăк та юрламасть, чĕкеç те явăнмасть. 5. Алара шыв тăмасть. 6. Хула шавĕ илтĕнмест. 7. Çул çинче тусан вĕçмест, çулçă та вĕлтĕртетмест. 8. Шăнкăрч кĕркунне вĕçсе каять те çуркуннесĕр таврăнмасть. 9. Вĕçен кайăксене тытма юрамасть. 10. Упа кашкăртан хăрамасть. 11. Хĕлле хĕвел пăхать, анчах ăшăтмасть. 12. Пионер нихăçан та ӳркенмест. 13. Çумăрсăр кăмпа ӳсмест. 14. Ăшăсăр ӳсентăран ӳсмест. 15. Тăрăшмасăр тырă тухăçĕ хăпармасть.

76. Хĕл умĕн. Сас-чĕвĕ илтĕнмест. Нимĕнле вĕçен кайăк та юрламасть. Йывăç тăрри хумханмасть. Çумăр çума чарăнмасть. Хĕвел пĕлĕт айĕнчен тухса курмасть. Çулçă текех ешĕрмест. Йывăç-курăк халĕ ĕнтĕ ӳсмест.

77. 1. Ĕçчен çын нихăçан та ĕçсĕр лармасть. 2. Пулă типĕ çĕрте пурăнмасть, вăл ӳпкепе сывламасть. 3. Урапа пĕр йĕрпе кусмасть. 4. Вăкăр лаша чухлĕ хăвăрт çӳреймест. 5. Çӳллĕ тусем çинчи юр ĕмĕрне ирĕлмест. 6. Кĕркунне куккук авăтмасть, шăпчăк юрламасть. 7. Пароход тĕтрере çӳремест. 8. Ниçта та хăйă çути курăнмасть. 9. Паттăр разведчик тăшмантан та, вилĕмрен те хăрамасть. 10. Шыв тăвалла юхмасть. 11. Рак малалла утмасть. 12. Çĕрте çĕрмест, шывра путмасть. 13. Чăхă шывра ишмест. 14. Çилсĕр çил арманĕ авăрмасть. 15. Тимĕр шывра ишмест. 16. Краççин шывра путмасть. 17. Çиекен выльăх çулта ывăнмасть. 18. Шыв çулла шăнмасть.

## § 11. Хальхи вăхăтри нумайлă хисепри иккĕмĕш сăпатри глаголсем.

78. **Аквариум туни.** Пысăк кĕленче савăт илетĕр. Ун çине çуса тасатнă хăйăр яратăр. Шыв тултаратăр, тĕпне шывра ӳсекен ӳсентăрансене е икĕ-виçĕ улитка яратăр, унтан пулă яратăр. Аквариума астусах тăратăр. Аквариумри шыва хутран-ситрен улăштаратăр.

79. ***Пăхса çырмалли диктант.*** Çавапа çулатăр. Çĕçĕпе... Пуртăпа... Пăчкăпа... Атмапа... Çилĕмпе... Витрепе... Шăпăрпа... Сеялкăпа... Веялкăпа... Кашăкпа... Савапа... Куçпа... Хăлхапа... Пăрапа... Ӳпкепе... Перопа... (касатăр, чутлатăр, çыпăçтаратăр, пулă тытатăр, тататăр, шăлатăр, шыв ăсатăр, сăвăратăр, акатăр, çиетĕр, илтетĕр, куратăр, савалатăр, çыратăр, сывлатăр, шăтаратăр).

80. 1. Эсир кĕнеке вулатăр. 2. Эсир ĕлкăра юрлатăр, вылятăр, ташлатăр, сăвăсем калатăр, кучченеçсем илетĕр. 3. Эсир шкул пахчинче ĕçлетĕр. 4. Кашни эрнере мунча кĕретĕр, таса кĕпе-йĕм тăхăнатăр. 5. Эсир завода экскурсие каятăр. 6. Уявра эсир çĕнĕ кĕпе тăхăнатăр.

## § 12. Иртнĕ вăхăтри глаголсем.

81. **Вĕçен кайăк йăвисене тустаракансем.** Пĕр ялта питĕ пумай сад ĕрчетнĕччĕ. Çуркунне тата çулла çак садсенче вĕçен кайăксем йăва çавăратчĕç, шăрантарса юрлатчĕç. Вĕсене никам та тĕкĕнместчĕ. Кĕркунне ку садра панулми, груша, слива питĕ пумай пулатчĕ.

Акă пĕрре шăпăрлан ачасем пыраççĕ те вĕçен кайăксен йăвисене тустараççĕ. Вĕçен кайăксем ку садран пăрахса тараççĕ те урăх таврăнмаççĕ.

Татах çуркунне çитет. Садра шăпăртах, вĕçен кайăк сасси илтĕнмест. Хурт-кăпшанкăсем кĕшĕлтетеççĕ. Вĕсем йывăççен çулçисене, чечекĕсене çисе яраççĕ. Кĕркунне йывăççем çинче панулмисем, грушăсем, сливăсем курăнмаççĕ.

82. **Совет çĕршывĕшĕн.** Хутора ялтан тарăн вар уйăрса тăратчĕ. Çулла ун тĕпĕнче шыв юхса выртатчĕ. Халĕ вăл шăннă. Яка пăр кăпăшка юрпа витĕннĕ. Хутор таврашĕнче пирĕн окопсем тăсăлатчĕç, ял таврашĕнче тăшмансен окопĕсем курăнатчĕç. Тăшманпа пирĕн хушăра вар пурччĕ. Пирĕн наступлени хатĕрленетчĕç. Ку куна пирĕн салтаксем тем пекех кĕтетчĕç. Сивĕ тăнă хыççăн ăшăтса ячĕ. Йĕпе юр çăва пуçларĕ. Командир командующин приказне вуласа пачĕ. „Тăван çĕршыв пире хăюллăн та хăвăрт малалла кайма, тăшмана çапса аркатма хушать. Пире тăван ялсемпе хуласем кĕтеççĕ. Пире хамăр тăвансем кĕтеççĕ. Сталиншăн, совет çĕршывĕшĕн малалла!"

Тупăсемпе миномĕтсем кĕмсĕртетрĕç. Тепĕр çур сехетрен пехота тăшман çине ыткăнчĕ.

83. **Ир.** Хĕвел тухатчĕ. Айлăмра тĕтре йăсăрланатчĕ. Садра хура кураксем кăраклататчĕç. Ешĕл тĕмсем çинче сывлăм йăлтăртататчĕ. Кăвакарчăнсем вĕçетчĕç. Çул çинче çерçисем сикнелетчĕç. Йăмрасем çинче пыл хурчĕсем сĕрлетчĕç. Инçетре арман хăлтăртатни илтĕнетчĕ.

84. Йĕри-тавра ĕç вĕресе тăратчĕ. Урапасемпе çĕр, чул тата пĕренесем турттаратчĕç. Çынсем носилкăсемпе çĕр тата чул çĕклетчĕç. Çĕр чавакансем—платниксем кĕпе вĕççĕн ĕçлетчĕç. Пин-пин çын çĕре таптаса хытаратчĕç. Китай-город таврашне çирĕплететчĕç. Тупăçăсем тупăсене вырнаçтаратчĕç. Çĕрле тупăсем патĕнче кăвайт ялкăшатчĕ. Мининпа Пожарский укреплениссем патĕнче çӳретчĕç, çынсене хавхалантаратчĕç.

85. **Çулла.** Çуллахи шăрăх вăхăтра эпир лашасене çĕр каçма хире илсе каяттăмăр. Каçалапа лашасемпе хире тухаттăмăр та ирхине, хĕвел тухичченех, киле таврăнаттăмăр. Янраса, çухрашса сиккипе пыраттăмăр. Çул çинче тусан йăсăрланатчĕ. Лаша ури сасси таçтанах илтĕнетчĕ. Лашасем, хăлхисене лăпчăтса, вирхĕнетчĕç. (И. С. Т у р г е н е в ă н н и тăрăх).

86. **Хурчкапа сунара çӳрени.** Эпĕ час-часах путенесене хурчкапа тытаттăм. Кун пек сунара эпĕ шăрăх мар кун çӳреттĕм. Шăрăх кун хурчка путенесене тытма ӳркенетчĕ. Сунара çӳреме кĕркуннерехри хĕвелсĕр кунсене суйласа илеттĕм. Эпĕ ирех хире тухаттăм та каçченех çӳреттĕм.

87. **Вӗçен кайӑксене хуралласа тытни.** Çуркунне, хӗвел аниччен вунпилӗк минута маларах, вӑрмана тухаттӑм. Вӑрман хӗрринче майлӑрах вырӑн тупаттӑм та тӑраттӑм. Хам йӗри-тавра пӑхкаласа илеттӗм, пӑшала çавӑркаласа пӑхаттӑм, юлташпа куç хӗскелесе илеттӗм те кӗтеттӗм. Вӑрман ӑшчикӗ пӗчӗккӗн тӗттӗмленетчӗ. Йывӑç тӑррисем те тӗксӗмленетчӗç. Кӗрен пӗлӗт те кӑвакаратчӗ. Вӑрман шӑрши вӑйланатчӗ. Ӑшӑ нӳрӗк пырса çапӑнатчӗ. Йывӑççем хуралатчӗç. Пур вӗçен кайӑксем те çывӑратчӗç; пӗчӗк улакаткасем кӑна тӗлӗрсе чӑйлататчӗç. Чӗре кӑлтлатса тапатчӗ. Кӗтсе тӑраттӑм. Сасартӑк çывӑхрах карӑк кӑраклататчӗ, çуначӗпе лӑпӑстаттаратчӗ. Тӗксӗм хурӑн хыçӗнчен сан пӑшалуи кӗпçи патне васкамасӑр кӑрӑпчак вӗçсе тухатчӗ. (И. С. Тургеневӑнни тӑрӑх).

88. **Вӑрманта.** Эпир вӑрмана çитеттӗмӗр. Çӳлӗ хырсем пӗлӗтелле кармашатчӗç. Кӑтра хурӑнсем таврана илем кӳретчӗç. Юман чатӑр евӗр хӑйӗн турачӗсене саратчӗ. Хурӑн çырли пӗчӗк шурӑ куçӗсемпе пӑхатчӗ. Çулçӑсем хушшинче ландыш шерепеленсе ларатчӗ. Чӑтлӑхра вӑрман кӑвакарчӑнӗсем вӗçетчӗç. Çӳлӗ чӑрӑш çинче çуртсӑр куккук авӑтатчӗ.

89. 1. Шуçӑм килетчӗ, вӗçен кайӑксем вӑранатчӗç, ирхи куна каçченех юрӑ юрлатчӗç, шӑрантаратчӗç. 2. Хӗвел çинче эрешмен карти тӑсӑлатчӗ. 3. Курӑк çинче сывлӑм йӑлтӑртататчӗ. 4. Йывӑççем çинчен çулçисем тӑкӑнатчӗç; çӗрле çил тулатчӗ, кантӑкран шаккатчӗ. 5. Тӗттӗм вӑрман тапранмастчӗ. 6. Çырмари пӑр шатӑртататчӗ, çурӑлатчӗ. 7. Çил-тӑман вӗçтеретчӗ, кӗрт хыватчӗ. 8. Ӑшӑ çу çӗрпе сывпуллашатчӗ. 9. Çырма шывӗ курӑксем хушшинче явкаланатчӗ. 10. Хурӑн çулçи çурӑлатчӗ. 11. Хӗвел хӗлле ир анатчӗ. 12. Атте каçпа ӗçрен таврӑнатчӗ. 13. Çулçӳреи кантӑкран шаккатчӗ. 14. Ирпе çил-тӑман чарӑнатчӗ.

90. **Çырма.** Вӑрманта пӗчӗк шыв юхса выртатчӗ. Тӑрӑ шывра пӗчӗк пулӑсем йӑрӑлтататчӗç. Шыв хӗрринче шӑрчӑксем явӑнатчӗç. Шыв хӗрринче сарӑ чечексем хумханатчӗç. Хӗвел питӗнче ачасем шыва кӗретчӗç. Вӗсем çуйхашатчӗç, ахӑлтататчӗç чӑмпӑлтататчӗç, шыв сирпӗнетчӗ те хӗвел çинче ялтӑртататчӗ.

91. Кай—каяттӑм. Çыр... Вула .. Калаç... Çут... Ут... Пӗл... Кӳр... Кӗт... Çит... Сӳт... Кур... Илт... Юрла... Кул... Чӗр... Ил... Чуп... Хуп... Çӗле... Чӑт... Тӑхӑн... Витӗн... Лар... Тӑр... Савӑн... Выр... Çул... Хуп... Пер... Ан... Çывӑр.... Уçӑл... Чӗн... Ӑшӑн... Шан...

Кил—килетчӗ. Кай... Вула... Çыр... Хур... Лар... Тӑр... Ӗçле... Кала... Пӗл... Кӳл... Тыт... Выр... Юрла... Кур... Çи... Таврӑн... Ут... Çӳре... Ӑнлан... Аталан.. Ӳс... Тӳс... Пух... Çывӑхар... Пурӑн... Çеклен... Хӑпар... Ан... Тытӑн...

92. ***Пӑхса çырмалли диктант. Глаголсене иртнӗ вӑхӑтра,—хальхи умӗнхи вӑхӑт форминче—виççӗмӗш сӑпатра лартӑр.*** 1. Пакша пӗр йывӑç çинчен тепӗр йывӑç çине (*сик*). 2. Хӑй патне çын пымассерен Петӗр çӑкӑр (*ларт*). 3. Хӗрача çулла уçланкӑра чечек (*тат*). 4. Колхозник ирех ӗçе (*тытӑн*). 5. Вӗренекен кашни ыйту çине ответ (*пар*). 6. Вӑл çӗçӗ илетчӗ те çӑкӑр (*кас*). 7. Упа шӑтӑкра хӗлӗпех (*çывӑр*). 8. Сунарçӑ мулкач (*тыт*). 9. Пулӑçӑ ирех пулӑ тытма (*кай*).

93. Эсĕ ирех тăраттăн, çăвăнаттăн, шыва кĕме каяттăн. 2. Лашана çĕлĕ параттăн. 3. Шкултан таврăнсан, эсĕ вулаттăн, çыраттăн. 5. Çулла аçу-аннŭсене хирти ĕçсем тунă çĕрте пулăшаттăн. 6. Шкулта эсĕ учитель каланине яланах итлесе лараттăн. 7. Шкултан эсĕ тăватă урок хыççăн киле таврăнаттăн. 8. Каçпа тăхăр сехетре эсĕ çывăрма выртаттăн. 9. Вĕреннине яланах астăваттăн.

## § 13. Вĕреннине аса илмелли ĕçсем.

94. 1. Савăк вĕçен кайăк вĕçсе килетчĕ те юррисене юрлама пуçлатчĕ. 2. Ĕçленĕ чухне эпĕ яланах юрлаттăм. 3. Чăтлăхра шăпчăк юрă шăрантаратчĕ. 4. Аван юрра тепĕр хут юрлаттăмăр. 5. Тŭпере тăрисем юрлатчĕç. 6. Ире хирĕç автансем авăтатчĕç. 7. Эпир юмахсем итлеме юрататтăмăр. 8. Çуркунне çĕмĕрт чечеке ларатчĕ. 9. Юлташ вут хуратчĕ, эпĕ пулă тытаттăм.

95. **Атăл хĕрринче.** Эпĕ килтен тухатăп та Атăл хĕрринелле утатăп. Хĕвел анас патне çитнĕ. Атăл тăрăх нимĕн сасă памасăр анаталла сулăсем юхаççĕ. Сулăсене хирĕç пароход хăпарать. Ун урапысем айĕнчи шыв кăпăкланса пырать. Çŭлти палуба çинче пассажирсем тăраççĕ. Пароход, Шупашкар патне çывхарсан, кăшкăртать. Шупашкар пристанне çитсе чарăнать. Пароход çинчен пассажирсем тухаççĕ.

96. **Аслати.** Ирех хĕвел пĕçертет. Сывлăш вĕри мунчари пек пулса çитет. Çынсем шăрăхпа аптăраса çитеççĕ, сулхăна пытанаççĕ. Кăнтăрла тĕлне пĕлĕтсем тухаççĕ. Часах таврана хура пĕлĕтсем хупăрлаççĕ. Çиçĕм çиççе кăна тăрать. Аслати кĕмсĕртетет. Хирте пĕр касă вăйлă çил варкăшса килет. Малтан çумăр пĕрчисем ŭккелеççĕ, унтан шултăра пăр çума тытăнать.

Акă çумăр иртсе каять. Çĕр çинче сийленсе сивĕ пăр выртать. Çĕрте хуçăлса ŭкнĕ йывăç турачĕсем, курак йăвисем йăваланса выртаççĕ. Пŭрт тăррисене çил сирсе антарнă. Хирсенче ыраша та, сĕлле те пăр çапса кайнă.

97. **Çулла ялта.** Çŭлте шурă пĕлĕтсем хуллен шăваççĕ. Кашни курăк хĕвел патнелле туртăнать. Вĕлле хурчĕсем пĕр чечек çинчен тепĕр чечек çине вĕçсе लараççĕ. Курăк ăшĕнче шăрчăксем вĕçĕмсĕр чарăлтатаççĕ. Шыв хĕрринче кĕтŭ çŭрет. Тŭпере тăрисем юрлаççĕ Чĕкеçсем чĕвĕлтетсе вĕçкелеççĕ.

98. 1. Ачасем савăнса шыв хĕррине чупаççĕ. 2. Юлташ вăрмана каять. 3 Уйăх çути пĕве çине ŭкет. 4. Салтак лашине карта çумне кăкарать. 5. Курăк çинче сывлăм йăлтăртатать. 6. Тŭперен хĕвел савăнса пăхать 7. Хĕрлĕ ялавлă пысăк караппсем Мускав каналне таçтан та килеççĕ.

99. 1. Пŭске стенана пырса перĕнет. 2. Эпир часах хулана çитетпĕр. 3. Учитель вĕренекенсене задачăсем парса ярать. 4. Çунашка сăрт çинчен хăвăрт шуса анать. 5. Эпир сарай çинчи юра ывăтатпăр. 6. Эпĕ шурă хурăн патне чупса пыратăп, унта хурăн кăмпи ŭсет.

1. Эпĕ юлташ патне кĕретĕп, эпир шыв хĕррине анатпăр. 2. Шыв хĕррипе утатпăр. 3. Лодка тупатпăр. 4. Лодка çине ларатпăр та ярăнма каятпăр. 5. Хĕвел пĕлĕт хыçне пытанать.

6. Поезд каçпа каять. 7. Шурă упасем çурçĕрте пурăнаççĕ. 8. Çырăва конверт ăшне хураççĕ. 9. Халĕ арбуз Чăваш республикинче те ÿсет. 10. Салтаксемпе матроссем Тăван çĕршыва хÿтĕлеççĕ.

## § 14. Хисеп ячĕсем.

100. 1. Ванюк вунпĕр çул тултарчĕ. 2. Хĕрĕх тупă сывлăша кисрентерсе тăчĕç. 3. Колхоз сачĕ вăтăр гектара яхăн. 4. Мускава Совет Союзĕнчи ытти хуласенчен вунă чугун çулĕ пырса кĕрет. 5. Пирĕн район центрĕ Шупашкартан утмăл километрта. 6. Эпир тăшмана тăхăр кун хушши сывлама памасăр хăваларăмăр. 7. Тĕрлĕ вырăнсенчен Артека 70 ача пынă. 8. Икçĕр трактор паян тесен паянах хире тухса кайма хатĕр тăраççĕ. 9. Площаде пилĕкçĕр çын пухăннă.

101. **Панфиловецсем-гвардеецсем.** Пин те тăхăрçĕр хĕрĕх пĕрремĕш çулта декабрь уйăхĕнче Мускав патĕнче Панфилов генерал отрядĕнчи çирĕм сакăр гвардеец хамăр çĕршыва хÿтĕленĕ. Вăйлă та вăрах çапăçнă хыççăн нимĕçсем гвардеецсем çине хĕрĕх танк яраççĕ. Çирĕм сакăр гвардеец танксене хирĕç хăюллăн çапăçма тытăнаççĕ. Пĕр сехет ытла пенисем, шартлатса çурăлнисем сывлăша кисрентерсе тăчĕç. Кун хыççăн çирĕм танк каялла чакрĕç. Юлашки вунсакăр танкĕ çапăçнă вырăнах юлчĕç. Вĕсене гвардеецсем аркатса тăкнă.

Çак вăйлă çапăçура çирĕм сакăр панфиловец-гвардеец пуçĕсене хучĕç. Пĕри те вĕсенчен каялла чакман. Нимĕçсен танкĕсем чакнă.

102. **Пирĕн шывсем.** Совет Союзĕнче пысăк шывсем пур. Сибирти Лена шывĕ тăватă пин те икçĕр утмăл тăватă километр тăршшĕ, Обь шывĕ тăватă пин те вунултă километр тăршшĕ, Енисей шывĕ виçĕ пин те сакăрçĕр çичĕ километр тăршшĕ. Инçетри Хĕвелтухăçĕнчи Амур шывĕн тăршшĕ тăватă пин те виççĕр аллă тăватă километр. Совет Союзĕн Европăри пайĕнче Европăри чи пысăк шыв Атăл юхса выртать, унăн тăршшĕ виçĕ пин те ултçĕр тăхăрвун тăватă километр.

103. **Хĕвел.** Хĕвел çĕр чăмăрĕнчен пĕр миллион та виççĕр сакăрвун тăватă хут пысăкрах. Талăкне çичшер çĕр километр кайсан, хĕвел тавра вунçичĕ çул хушшинче çаврăнса çитме пулать.

104. **Хăвăрт вĕçме пултарни.** Улакуракпа чана сехетре утмăл километр вĕçме пултараççĕ, почта кăвакарчăнĕ—çĕр аллă километр, вĕршĕн—виççĕр аллă километр, самолёт—тăватçĕр сакăрвунă километр вĕçет.

105. **Хĕвел системи.** Меркурий планета хĕвел тавра сакăрвун сакăр кунта, Венера—икçĕр çирĕм пилĕк кунта, Çĕр—виççĕр утмăл пилĕк кунта, Марс—икĕ çулта, Юпитер—вуникĕ çулта, Сатурн—вăтăр çулта, Уран—сакăрвун тăватă çулта, Нептун—çĕр утмăл пилĕк çулта çаврăнаççĕ.

106. **Китсем.** Китсем—чĕрчунсенчен чи шултăрисем. Китсен тăршшĕ вăтăр метра çитет, вĕсем çĕр аллă тонна таран туртаççĕ.

Çакăн пек кит вăкăртан икçĕр аллă хут йывăртарах, тип çĕр çинчи чи пысăк чĕрчунтан, слонтан, аллă хут йывăртарах.

107. **Стаханов.** Стаханов кăмрăк кăларас ĕçе çĕнĕлле организациленĕ. Августăн вăтăр пĕрремĕшĕнче вăл шахтăна аннă та çĕр те икĕ тонна кăмрăк кăларнă. Ку малтанхи нормăран вунă хут пысăкрах. Стаханов пуçарăвĕ ытти шахтĕрсем хушшинче те сарăлса пынă. Çĕр çирĕм пилĕкшер, çĕр çитмĕл пилĕкшер, икçĕр çирĕм çичшер, икçĕр хĕрĕхшер, пилĕкçĕр аллă икшер тонна кăмрăк кăларма тытăннă.

108. **Йĕлтĕрпе ăмăртса чупни.** Виçĕ сехет тĕлне старта çирĕм йĕлтĕрçĕ пухăнчĕç. Шăп виç сехетре йĕлтĕрçĕсем вăтăр километр хушши йĕлтĕрпе чупса çаврăнса килме тухса кайрĕç. Йĕлтĕрçĕсенчен чи хăвăрт чупаканни тăватă сехет иртсен çаврăнса çитмеллеччĕ. Пилĕк сехет çитеспе Семĕнов курăнса кайрĕ. Вăл çара пуçăн, фуфайкăсăр. Çĕлĕкĕпе фуфайкине вăл çирĕм саккăрмĕшпе çирĕм тăххăрмĕш километр хушшине пăрахса хăварнă. Ăна алă çупса кĕтсе илчĕç. Унран вăтăр ултă секунда каярах Петров çитрĕ.

**Фабрикăра.** Ирхине сакăр сехет çитеспе эпир пир-авăр фабрики патне çитрĕмĕр. Фабрика патне виçĕ енчен те çынсем пыраççĕ. Эпĕ сехет çине пăхрăм. Сакăр сехет çитесси вунпилĕк минута. Вунă минута хушшинчех пĕр пин рабочи хăйсен станокĕсем патне тăраççĕ. Пире пысăк зала илсе кĕчĕç. Залăн тăршшĕ вăтăр ултă метр, сарлакăшĕ вунсакăр метр. Шăнкăрав шăнкăртатрĕ. Çĕраллă станок харăсах ĕçлеме тытăнчĕç. Ураççиллĕ ăса пĕр минута хушшинче кумми витĕр çĕр хут ытла кĕрсе тухать. Çаврăнакан урапасем татти-сыпписĕр кăлтăртатни, металл качăртатни, çăт-çат туни илтĕнет.

**Тупмалли юмахсем:** Пĕр шăшийĕн икĕ хӳре. (*Çăпата*). Вуникĕ ăмăрткайăкпа виççĕр утмăл пилĕк шăнкăрчă пĕр çăмарта тунă. (*Çулталăк*). Иккĕшĕ тăраççĕ, иккĕшĕ выртаççĕ, пиллĕкмĕш çӳрет, улттăмĕшĕ çӳретет, çиччĕмĕшĕ юрлать. (*Алăк*). Пĕр пĕркенчĕк айĕнче тăватă хĕр йĕрет. (*Сĕтел*).

## § 15. Наречисем.

109. 1. Хĕвел хавассăн çутатать. 2. Пионер отрячĕ урамра хавассăн утать. 3. Çамрăксем килĕшӳллĕ юрлаççĕ. 4. Хĕрлĕ ялавсем пур çĕрте те вĕлкĕшеççĕ. 5. Паян—Майăн пĕрремĕшĕ. 6. Эпир хуллен малалла утатпăр. 7. Сасартăк пăшалсенчен, пулемĕтсенчен пенисем илтĕнчĕç. 8. Малта пирĕн танксем çул уçса пыраççĕ. 9. Вĕсем хыççăн пирĕн салтаксем хăвăрттăн ыткăнаççĕ. 10. Хыçалта тупă кĕрлени илтĕнет. 11. Эпир сыхлануллă утатпăр.

110. Кураксем вĕçсе килчĕç. Кунсем чылай хушăнчĕç. Хĕвел пайăркисем тӳррĕн ӳкеççĕ те хыттăн пĕçертеççĕ. Шурă юр çитти пĕчĕккĕн тĕксĕмленет, çулсем хуралаççĕ. Урамсенче шыв шарласа юхать. Март уйăхĕ пĕтет, апрель çывхарать. Хутранситрен вĕçен кайăксем курăнкала пуçларĕç. Пуринчен малтан хура кураксем вĕçсе килчĕç те йăвисене йышăнчĕç. Вĕсем вас-

кавлӑн хӑйсен кивӗ йӑвисене юсаççӗ. Каçсенче вӗсем йӑмра çине мӑшӑррӑн-мӑшӑррӑн лараççӗ те хӑйсен малашнехи пурӑнаçе çинчен канаш тӑваççӗ. Çавӑн чухне кураксен сасси таçтах каять.

111. **Сунарта.** Ирпе ирех сунарçӑсен артелӗ тюленьсене шырама кайрӗ. Артель хӑйне ертсе пыракан Максимыч хыççӑн пӑр тӑрӑх хӑвӑрттӑн утнӑ. Максимычӑн тинкерӳллӗ куçӗсем пӑр çинче хура пӑнчӑсем пуррине курах кайнӑ. Кусем тюленьсем пулнӑ. Сунарçӑсем вӗсем патне сисӗнкӗсӗр пырса çитрӗç, сунар пуçланчӗ.

112. **Ӑнӑçлӑ сикни.** Ирпе ирех эпир кӑвак тӳпене вӗçсе хӑпартӑмӑр. Эпӗ хӑвӑрттӑн самолёт çуначӗ çине тухса тӑтӑм та сикме команда парассине кӗтрӗм. Çанталӑк хитре тӑратчӗ. Аялта çӗр сарӑлса выртать. Акӑ, юлашкинчен, эпӗ сикетӗп. Эпӗ самолётран хӑпрӑм. Малтанах эпӗ аялалла чул пекех сирпӗнтӗм, унтан парашюта уçрӑм та хуллен, майӗпен çӗр патне çывхартӑм.

113. **Шыва кӗни.** Эпир виççӗн вӑрмана каякан çулпа шыва кӗме кайрӑмӑр. Инçетре çырма шывӗ йӑлтӑртатать, сылтӑмалла та, сулахаялла та вӑрман сарӑлса выртать. Инçетре путенесем авӑтни илтӗнет. Йӗри-тавра ешӗл курӑк курӑнать. Акӑ çырмана çитрӗмӗр. Салантӑмӑр та шыва сикрӗмӗр.

114. **Çурçӗр енче.** Малтан пӑт-пат имшеркке йывӑçсем курӑнкалатчӗç, унтан сулахаялла та, сылтӑмалла та шурсем пуçланса кайрӗç. Ниçта та кун пек кичем те чире яракан вырӑн тӗл пулман. Кунти чухлӗ вӑрӑмтунасем нумаййӑн вӗркӗшнине эпӗ нихӑçан та курман, тен курас та çук. Ку çул манӑн пит ӑнӑçсӑр пулчӗ. Лашасем урисене аран-аран ярса пусаççӗ. Çулӗ питӗ кисренчӗк пулчӗ. Эпӗ ку çула хам ӑшӑмра ылханса пытӑм.

115. **Сунарта.** Эпир хуллен лодкӑпа ишсе пыратпӑр. Старик юшкӑн ӑшӗнчен хӑйӗн вӑрӑм шӑччине аран турта-турта кӑларать. Юлашкинчен, хӑмӑшлӑх тӗлне çитрӗмӗр те, мыскара тапранчӗ. Кайӑк кӑвакалсем пӗве çинчен шавлӑн вӗçсе хӑпараççӗ. Вӗсене пӑшалсемпе харӑссӑн переççӗ. Кутамас кӑвакалсем сывлӑшра чикеленеççӗ те шыв çине хыттӑн çатлатаççӗ.

116. **Вӑрмантан таврӑннӑ чухне.** Сулахайра та, сылтӑмра та çӑра вӑрман. Нӳрлӗ варкӑш пыра-пыра çапӑнчӗ. Çил вӑйлансах пычӗ, сасартӑк аслати авӑтрӗ. Пӗлӗтсем капланчӗç. Пӗр касӑ çумӑр çурӗ. Лашасем малтан юртса пычӗç, кайран хуллен утрӗç. Эпир вӑрмантан тухрӑмӑр. Ентӗ сылтӑмра çаран ешӗрет, сулахайра шыв йӑлтӑртатать. Çул вырӑн-вырӑн çыран хӗррипех пырать. Урапа çинчен ӳксен, эпир тӳрех шыва чӑмнӑ пулӑттӑмӑр.

***Творчески диктант.*** Тема: **Кӗтӳ çине тапӑнни.** Сӑмахсем: Кӗтӳ, кӑнтӑрла иртсен, курӑнать, инçетрен, çывӑхра, малта, хыçалта, кашкӑр, кӗтӳç, вӑхӑтра, кӑна, хыçалтан, ниçта та, пӗчӗккӗн.

***Словарь.*** Сулахаялла, сылтӑмалла, малалла, каялла, çӳлелле, аялалла, еннелле, лашалла, вӑрманалла, хирелле, аяккалла, тӑвалла, анаталла.

Хаяррӑн, пӗчӗккӗн, пысӑккӑн, йӑвашшӑн, хыттӑн, тӳлеккӗн, сахаллӑн, нумаййӑн, чалӑшшӑн, ӑшӑккӑн, тарӑннӑн, чӗррӗн, ӑшшӑн, сиввӗн, тӑваттӑн, иккӗн, виççӗн, хӑяккӑн, пӗччен, вӑрттӑн, кичеммӗн, хӑвӑрттӑн.

Аран-аран, час-часах, пăт-пат, сайра-хутра, хутран-ситрен, унта-кунта, кунĕн-çĕрĕн, тулăн-шалăн, калле-малле, пĕчĕккĕн-пĕчĕккĕнех, куçа-куçăн, ытлăн-çитлĕн.

## § 16. Хыççăмахсем.

### Хыççăмахсене çырасси.

117. 1. Сĕтел çинче кĕнеке выртать. 2. Ĕнер çунă юр çинче мулкач йĕррисем палăраççĕ. 3. Уроксем хыççăн вĕренекенсем киле таврăнаççĕ. 4. Кĕнеке çинче хитре картинăсем. 5. Картă çинче Атăла кăтартрăм. 6. Çўллĕ тусем çинче ĕмĕрне ирĕлмен юр выртать. 7. Пăр çинче конькипе ярăнаççĕ. 8. Ял-ял витĕр килтĕмĕр электричество çуттипе. 9. Урам урлă кушак чупса каçать. 10. Шкул умĕнче ачасем пухăнаççĕ. 11. Шкул валли вутă лашапа та, машинăпа та турттараççĕ.

118. **Çырласене типĕтесси.** Çырлана хĕвел çинче типĕтеççĕ. Çырлана типĕтес умĕн çўп-çапран тасатмалла, суйламалла. Çырлана ала çинче типĕтме аван, алине тўнтерле çавăрса хумалла та çырлана çўхен сармалла.

Çырлана ытла вĕри мар кăмакара та типĕтме пулать. Çăкăр пиççе тухнă хыççăн, ала çине çўхен сарса, çырлана кăмакана лартмалла. Типĕтнĕ çырларан кукăль, компот, кĕсел тума пулать.

119. **Çумкурăкпа кĕрешесси.** Çумкурăк—тырпулă тăшманĕ, вăл питĕ чăтăмлă, ĕрчевлĕ. Çумкурăксем сивĕрен те, типĕ çанталăкран та хăрамаççĕ, кирек мĕнле тăпра çинче те ўсме пултараççĕ. Вĕсен вăррисем аллă çултан та шăтма пултараççĕ. Çумкурăксем калама çук хăвăрт хунаççĕ. Пĕр тĕп пиçен çинче çу каçиччен хĕрĕх пин вăрă çитĕнет.

Çумкурăксем вăрăпа кăна мар, тымартан та хунаççĕ. Пĕр тĕп пиçен тымарĕнчен аллă-утмăл пиçен пулса тăрать.

Çумкурăксем тырпул тухăçне чакараççĕ, вĕсем тырпула хупласа лартаççĕ, ăна нўр памаççĕ, ун апатне туртса илеççĕ. Çумкурăка пĕтермесен, тырпул лайăх пулассине кĕтме çук. Çумкурăксене пĕтермелли майсем нумай. Вĕсенчен пĕри—çумкурăкне çумласси. Пахча-çимĕç йăранĕ çинчен кăна мар, çумкурăксене хиртен те çумласа тасатмалла. Çумкурăка тымарĕпе тăпăлтармалла та йăран çине пăрахмалла мар, пĕр çĕре пуçтарса, çунтарса ямалла.

Йăран хушшинче, сукмаксем çинче ўсекен çумкурăксене вăрри пуличчен çумламалла.

## § 17. Союзсем.

120. **Апрельте.** Апрель пуçламĕшĕнче кăнтăрла ăшă, çĕрле сивĕ тăчĕ. Хĕл çуркуннене парăнасшăн пулмарĕ, анчах ăшă ăна парăнтарчех. Шыв лутра çырантан тухрĕ те улăха сарăлчĕ. Юр вăрманта тата çырма-çатрасенче анчах юлчĕ.

121. **Ирхине.** Хĕвел вăрмантан çўлерех хăпарчĕ те, курăк йăлтăртатрĕ. Сывлăм пĕчĕккĕн типрĕ те кĕмĕл пек тумламăн

пухӑнчӗ. Пӗлӗтсем шурӗç, анчах çил тапранмарӗ-ха. Кунта сарӑ ыраш хӑйӑн вyртса ӳсетчӗ те, леререх вӑрман курӑнатчӗ. Курӑксен тата чечексен шӑрши кӗретчӗ.

1. Çӗрле çумӑр çӑватчӗ, анчах ирпе çанталӑк уçӑлчӗ. 2. Кун ӑшӑ, анчах çиллӗччӗ. 3. Хӗвел тухрӗ те, тӗтре сирӗлчӗ. 4. Ӑшӑ çанталӑк тӑрать, анчах кураксем вӗçсе килмен-ха. 5. Паян эпӗ кунӗпе ӗçлетӗп те ыран пушанатӑп. 6. Аслати йывӑррӑн та çиллессӗн авӑтрӗ. 7. Юлташ кӑвайта хурал тӑчӗ те, эпӗ вӑл вӑхӑтра пулӑ тытрӑм. 8. Кӗрхи кунсем çитеççӗ те, ачасем шкулсенче вӗренме тытӑнаççӗ. 9. Тӑвӑл иртсе кайрӗ те, тавра уçӑлчӗ. 10. Çумӑр иртсе кайрӗ, анчах аслати кӗмсӗртетет. 11.Тавра сасартӑк улшӑнчӗ те тӗксӗмленчӗ. 12. Хӗвел анчӗ те, хӗвеланӑç хӗрелчӗ. 13. Ту çинче юр выртать, анчах аялта шӑрӑх.

## § 18. Татӑксем.

### Татӑксене тӗрӗс çырасси.

Сирӗн колхоз сад ӗрчетет-и? Хӗлле аслати авӑтать-и? Çулла юр çӑвать-и? Хӗлле йывӑçсем çитӗнеççӗ-и? Йывӑç шывра путать-и? Кӑмрӑк çӗрте çӗрет-и? Пароход тӗтре вӑхӑтӗнче çӳрет-и? Кӗркунне тӑри юрлать-и? Кӑнтӑрла çӑлтӑрсем курӑнаççӗ-и? Чӗрӗп мулкача хӑваласа çитет-и? Шыв тӑвалла юхать-и? Алапа шыв çӗклеме пулать-и? Чавсана çыртма пулать-и?

Икӗ метр пир кӗпе çӗлеме çитет-ши? Кӑнтӑр енчен тӑри час вӗçсе килет-ши? Колхозниксем ыран ӗçе миçе сехетре тухаççӗ-ши? Ку сехет тӗрӗс çӳрет-ши? Ку чернил мӗн тӗслӗ çырать-ши?

122. **Ванюк пурӑнӑçӗнчен**. Ванюк мастерскойӗнче ларать те тӑван ялне аса илет: „Ӑçта-ши халӗ эпӗ юратнӑ вӑйлӑ тырӑпулӑллӑ уй-хирсем? Вӗсем инçе тата сарлака сарӑлса выртаççӗçке! Ӑçта-ши халӗ эпӗ çырла тата кӑмпа татнӑ вырӑнсем? Аçта-ши эпӗ, урасене хӑяхсемпе чӗртерсе, ырашпӗтрисемпе партассене тытма çӳренӗ шыв? Ӑçта-ши халӗ утӑ типӗтсе туранӑ ешӗл çарансем? Çаврӑнса çитейӗп-ши эпӗ унта утӑ çулнӑ вӑхӑта?"

123. **Танкист калавӗ**. Урамшӑн çапӑçу пырать. Тӑшман вутхӗм тӑкать. Эпир тӑшмана площаделле, малалла хӗсетпӗр... Сасартӑк машина патне ача сиксе тухать:—Командир юлташ! Эпӗ вӗсен туппи ӑçтине пӗлетӗп. Эпӗ унтах шуса пытӑм. Вӑл ав лере, садра...

— Ӑçта-ха, ӑçта вӑл?—Эпӗ сирӗнпе танк çине ларса пырам-и? Тӳрех илсе пыратӑп.—Мӗн-ха, çапӑçу кӗтмест. Кӗр эппин, кӗр-ха кунта, ачам! Эпир тӑваттӑн çав вырӑна васкатпӑр. Пульӑсем, минӑсем шӑхӑраççӗ, ача ним те çӳçенмест.

124. **Çуллахи вӑрман**. Илемлӗ-çке çуллахи вӑрман! Кашни йывӑç ем-ешӗл-çке. Уçланкӑсенче тӗрлӗ чечексем ӳсеççӗ-çке, вӗсен ырӑ шӑрши сӑмсана çурать-çке. Пиçсе çитнӗ çырласем тем пекех илӗртеççӗ-çке. Вӗçен кайӑксем таттисӗр юрлаççӗ-çке. Сывлӑшӗ уçӑ. Питӗ ырӑ-çке çулла вӑрманта.

125. Эсӗ кӑçал вӑрмана кайнӑ-и? Эсӗ вӑлтапа пулӑ тытнӑ-и? Эсӗ станцине кайнӑ-и? Эсӗ хулара пулнӑ-и? Эсӗ кинона кайнӑ-и?

Эсӗ армана кайса курнӑ-и? Эсир выставкӑра пулнӑ-и? Сирӗн колхозра выльӑх фермисем пур-и? Колхозра кӑҫал тихасем нумай-и? Садра шӑпчӑксем юрлаҫҫӗ-и? Сирӗн вӑрманта юмансем ӳсеҫҫӗ-и? Сирӗн вӑрманта каракӑсем, пӑчӑрсем пур-и? Сирӗн класра отличниксем пур-и? Эсир картинӑсем ӳкеретӗр-и?

126. 1. Паян Кӗркури килтех-ха. 2. Эпӗ халӗ вуннӗр ҫула ҫитрӗм-ха. 3. Манӑн атте выльӑх ферминче ӗҫлет-ха. 4. Кӑҫал хӗл сивех мар-ха. 5. Вӑрҫӑ вӑхӑтӗнче пулнӑ сурансем тӳрленсех ҫитеймен-ха. 6. Ванюк уроксем хатӗрлет-ха. 7. Выльӑхсем утӑ ҫиеҫҫӗ-ха. 8. Пирӗн ялта та электричество пулать-ха. 9. Атӑлпа Дон шывӗсене пӗрлештермен-ха. 10. Йывӑҫсем папка кӑларман-ха.

## § 19. Пӗрйышши членлӑ предложенисем.

127. 1. Палюк, Петӗр тата Ванюк урамра выляҫҫӗ. 2. Атмана уланкӑсем тата кӑртӑшсем лекрӗҫ. 3. Ҫул ҫинче арҫын ача, хӗрача тата пӗр старик пыраҫҫӗ. 4. Вӑрманта нӑрӑсем, кӑткӑсем тата калта куртӑмӑр. 5. Хирсенче, вӑрмансенче юрӑсем илтӗнеҫҫӗ. 6. Тырӑсем ҫинчен пиҫенсене, пухрасене ҫумларӑмӑр. 7. Выльӑх ферминче ӗнесем, пӑрусем, сурӑхсем уйрӑм витесенче пулаҫҫӗ. 8. Амӑшӗ, хӗрӗ тата ывӑл ачи хулана кайнӑ. 9. Кӑнтӑртан хура кураксем, тӑрисем, шӑнкӑрчсем вӗҫсе килеҫҫӗ. 10. Хурӑн тата ӑвӑс вӑрманта ӳсеҫҫӗ. 11. Садра улмуҫҫи, груша, хурлӑхан тата чие пур.

128. 1. Ванюк пальто тӑхӑнса ячӗ те аслашшӗ хыҫҫӑн чупрӗ. 2. Ҫӳрен лаша Петӗре курчӗ те ун патне ыткӑнчӗ. 3. Ҫӗрле чӗрӗп чупкаланӑ, урисемпе урайне такӑртаттарнӑ. 4. Сысна ҫурисем улӑм ӑшне кӗрсе выртнӑ та ҫывӑрнӑ. 5. Ҫерҫи чӗпписем амӑшне курнӑ та чӗвӗлтетнӗ. 6. Юр вӗҫкелет те хӗвел ҫинче йӑлтӑртатать. 7. Асанне лӑпӑ ӑшне улӑм хучӗ те йӑва турӗ. 8. Ҫил тапранчӗ те йывӑҫсен тӑррисене хумхатрӗ.

129. 1. Ачасем ҫыраҫҫӗ тата вулаҫҫӗ. 2. Ҫӗмӗрт тата чие чечеке лараҫҫӗ. 3. Хураҫка Петӗрпе юнашар пынӑ та унталла-кунталла пӑхкаланӑ. 4. Кирук тата Марук шкулта вӗренеҫҫӗ. 5. Хырсем тата чӑрӑшсем пуҫӗсене таяҫҫӗ. 6. Садра улмуҫҫисем тата грушӑсем чечеке лараҫҫӗ. 7. Анне вутӑ илсе кӗчӗ те кӑмака чӗртсе ячӗ. 8. Кӑсия читлӗхрен вӗҫсе тухрӗ те турат ҫине ларчӗ. 9. Шурӑ хурӑнсем тата ӑвӑссем ҫулҫӑ сарчӗҫ.

130. 1. Кавӑрле, Куҫма тата Лариван пахчара ӗҫленӗ. 2. Хула яла плугсем, сеялкӑсем, тракторсем, комбайнсем ярать. 3. Малта уй тата ял курӑнать. 4. Утӑ ҫине тухиччен ҫулсене, кӗперсене юсаҫҫӗ. 5. Кулине савӑт-сапана сӗтел ҫинчен пуҫтарать, вӗри шывпа ҫӑвать, алшӑллипе шӑлать. 6. Юр ҫарансене, хирсене витсе лартрӗ. 7. Улӑхсенче, шыв ҫинче тӗтре тӑрать. 8. Хутҫӗлен телефон пралукне ҫакланчӗ те вӗҫмерӗ.

131. 1. Тӑрнасем, акӑшсем, кайӑкхурсем, шӑнкӑрчсем тата тӑрисем вӗҫсе кайрӗҫ. 2. Вӑрмансенче, хирсенче юрӑсем илтӗнмеҫҫӗ. 3. Пӗлӗт таса та тӑрӑ. 4. Аякра тусем, айлӑмсем, вӑрмансем курӑннӑ. 5. Ҫӑра курӑк ӑшӗнче урасем ҫыхланнӑ, путнӑ.

6. Шавлать, чӳхенет ӗмӗрхи тайга. 7. Хӗвел пӗлӗт ҫинче йӑлтӑртатать, пӗҫертет, хирсем ҫине, ҫарансем ҫине пайӑркисене сапалать. 8. Ледокол хуллен, майӗпен пынӑ. 9. Эпир мӗнпур пушӑ вырӑнсене, айлӑмсене, сӑртсене тырӑ акӑпӑр тата пахча-ҫимӗҫ лартӑпӑр.

132. **Юман.** Пӗчӗк йӗкелтен элес-мелес, кутамас юман шӑтса ҫитӗннӗ. Миҫе ҫул хушши пӗчӗк юман хӗвел патнелле, кӑвак пӗлӗт патнелле кармашнӑ! Пӗчӗккӗн-пӗчӗккӗнех унран вӑйлӑ та хӑватлӑ йывӑҫ пулса тӑнӑ. Миҫе хӗл, миҫе ҫу вӑл хӑй ӗмӗрӗнче курнӑ. Кашни кӗркуннех вӑл хӑйӗн ешӗл хитре тумтирне хывнӑ. Миҫе йывӑр, тертлӗ саманасем курнӑ юман хӑйӗн вӑрӑм ӗмӗренче.

133. **Пулла кайни.** Ирпе кӳлӗ тӳлек, лӑпкӑ. Эпир пиччепе тетел илтӗмӗр те кӳлӗ хӗррине кайрӑмӑр. Кимӗ ҫине лартӑмӑр та ишме пуҫларӑмӑр. Кимӗ ҫӑмӑллӑн та хӑвӑрттӑн малалла шӑвать. Часах эпир кӳлӗ варринчи пӗчӗк утрав патне ҫитсе чарӑнтӑмӑр. Тетеле шыва ятӑмӑр. Ҫапла эпир пулӑ тытма пуҫларӑмӑр.

134. 1. Майӑн пӗрремӗшӗнче уҫҫӑн та хавассӑн юрӑ янӑрать. 2. Юрататӑп тӑван уй-хире, шурӑ хурӑна, ешӗл чӑрӑша, сухӑрлӑ хыра. 3. Ҫул ҫинче ҫынсем, лавсем, тӗвесем татӑлман. 4. Шыв хумханнӑ, кӑпӑкланнӑ, шавланӑ. 5. Ҫӑра тӗтре пирки айлӑмсем, ҫырмасем, вӑрмансемпе ялсем те курӑнмаҫҫӗ. 6. Пӗлӗт ӳсет, хуралать, малалла шӑвать. 7. Шыв хӗрринче чулсем, шапа хуранӗсем нумай.

135. **Шӑнкӑрчсем вӗҫсе килни.** Тӑрисем хыҫҫӑн кӑнтӑртан шӑнкӑрчсем вӗҫсе килеҫҫӗ. Акӑ шӑнкӑрч ушкӑнӗ ял тӗлне ҫитрӗ, явӑнчӗ, аяккалла пӑрӑнчӗ. Хӑшпӗр шӑнкӑрчсем ушкӑнтан уйӑрӑлчӗҫ те яла вӗҫсе кӗчӗҫ. Шӑнкӑрчсем хӑйсен йӑвисем патне вӗҫсе пычӗҫ, йывӑҫсем ҫине ларчӗҫ, юрласа кӑтартрӗҫ. Вӗсем кӑштах канчӗҫ те унталла-кунталла пӑхкаларӗҫ те ҫимелли шырама вӗҫе-вӗҫе кайрӗҫ.

136. **Гаврош.** Гаврош каллӗ-маллӗ чупкаланӑ, ҫӳлелле кармашнӑ, аялалла аннӑ, шавланӑ, пур ҫӗре те ӗлкӗрнӗ. Унӑн уҫӑ сасси янӑраса кӑна тӑнӑ. Пысӑк баррикадӑна вӑл тытса тӑнӑ. Ҫын янтӑлани ҫине ҫеҫ шанакансенчен вӑл кулнӑ, наянсене еҫлеттернӗ, ӗшеннисене хавхалантарнӑ; пӗрисене йӑпатнӑ, теприсене ҫилентернӗ, хӑшӗсене тарӑхтарнӑ, пурне те хускатма пултарнӑ.

137. **Пирӗн чӗрчун кӗтесси.** Пирӗн чӗрчун кӗтессинче ҫерҫи, шӑнкӑрч, пакша, чӗрӗп, калта, пулӑсем пурӑнаҫҫӗ. Ещӗксем ҫинче пӑрҫа, ыраш, сӗлӗ, тулӑ, урпа, тӗрлӗрен чечексем ӳсеҫҫӗ. Ӳсентӑрансене Палюк, Ҫемен, Анюк, Роза пӑхаҫҫӗ. Эпӗ, Кулине, Укахви, Пурис чӗрчунсене апат паратпӑр, шыв ӗҫтеретпӗр, йӑвисене ҫӗнетсе, майлаштарса тӑратпӑр.

138. **Выставка.** Пирӗн шкул выставка турӗ. Эпир сӗтелсем тата ҫӳлӗксем ҫине хамӑр ӳстерсе ҫитӗнтернӗ пахча-ҫимӗҫӗсене сарса хутӑмӑр, плакатсем ҫыртӑмӑр, вӗсене стенасем ҫине ҫакрӑмӑр, курма пыракансене пахча-ҫимӗҫсем ҫинчен ӑнлантарса пама хатӗрлентӗмӗр. Пирӗн выставкӑна пурте хапӑл туса пычӗҫ,

интересленсе пăхса тухрĕç. Плакатсене вуларĕç, пирĕн пахча çимĕçсене ырларĕç. Каçпа эпир сăвăсем каларăмăр, юрларăмăр, ташларăмăр, вылярăмăр.

139. **Стахановецсем.** 1935-мĕш çулта августăн 31-мĕшĕнче çамрăк шахтĕр Алексей Стаханов пĕр сменăра 102 тонна çĕр кăмрăкĕ кăларнă. Çапла вăл 15 норма патне тултарнă. Стаханов ĕçĕ çинчен часах пĕтĕм çĕршыв пĕлнĕ. Çĕнĕ формăллă социализмлă ăмăрту—стахановла юхăм тапраннă. Производство техникине алла илес тĕлĕшпе шахтĕрсем, чугун çул çинче ĕçлекенсем, тимĕрçĕсем, хурçă шăратакансем, фабрикăсенче ĕçлекенсем пысăк çитĕнӳсем тунă. Кривонос машинист, пир тĕртекен Виноградова, Бусыгин тимĕрçĕ, Сметанин атăçă паллă çынсем пулса тăнă. Стахановла ĕç колхозсенче, совхозсенче, машинăпа трактор станцисенче те сарăлса пынă. Звенона ертсе пыракан Мария Демченко, Ангелина трактористка тата ытти социализмла ялхуçалăх геройĕсем те нумай палăрнă.

140. ***Творчески диктант.*** (*Пĕрйышши членлă предложенисем тумалли темăсем*).

*Темăсем*: а) **Килти выльăхсем:** мĕн мĕнпе тăранать, вĕсемпе усă курни, вĕсен пурăнăçĕ, мĕн мĕнпе хăйне хăй хӳтĕлет, мĕн мĕне юратать, хăшĕ хăйне мĕнле тыткалать?

ă) **Вăрманти йывăçсем:** çулçăллă тата лăсăллă йывăçсем, вĕсен тулашĕ, мĕнрен мĕн тăваççĕ?

б) **Вĕренмелли хатĕрсем:** мĕнпе мĕн тăваççĕ?

## § 20. Пĕтĕмлетӳ самахĕллĕ пĕрйышши членлă предложенисем.

141. 1. Пирĕн вăрманта çак йывăçсем ӳсеççĕ: юман, хуран, авăс, хыр, чăрăш. 2. Пирĕн çĕрайĕнче иксĕлми пурлăх: çĕр кăмрăкĕ, нефть, тимĕр, пăхăр тата кĕмĕл. 3. Пур çĕрте те пушă: хирте, çул çинче, шыв хĕрринче. 4. Аслашшĕ Энтрие пурне те хăйпе тан тутарнă: парăс ларттарнă, кĕсменсемпе иштернĕ, тетел картарнă, лекнĕ пулăсене пуçтарттарнă. 5. Пурĕ пилĕк ача пулнă: Хĕветĕр, Палюк, Илюк, Кĕçтук тата Ванюк. 6. Вĕçен кайăксем те, чечексем те, курăксем те—пурте хĕвеле тараватӡ. 7. Пур енче те вăрман: сылтăмра та, сулахайра та, малта та, хыçалта та. 8. Тăвăл хыççăн тинĕс хĕрринче тĕрлĕрен япаласем йăваланса выртаççĕ: пĕренесем, йывăç турачĕсем, татнă вутăсем, хăмасем, вилнĕ пулăсем, шыв курăкĕсем. 9. Кăнтăра хĕл каçма кайнă вĕçен кайăксем: хура кураксем, шăнкăрчсем, тăрисем, хуркайăксем пирĕн пата васкаççĕ. 10. Типнĕ курăка, лаша хĕлĕхне, тĕке, турата—пурне те вĕçен кайăк хăй йăвине тултать. 11. Вĕçен кайăксем улах вырăнта: пӳрт-çурт çине витнĕ улăм ăшĕнче, çурт-йĕр карнизĕнче, хăвăлта, курăк хушшинчи путăкра, тĕмсем çинче йăва çавăраççĕ.

142. 1. Пирĕн совхоз çакăн пек çĕнĕ машинăсем туянчĕ: трактор, икĕ жнейка, виçĕ веялка, молотилка. 2. Технически курсра çакăн пек специалистсене хатĕрленĕ: слесарьсене, токарьсене, трактористсене, электромонтĕрсене. 3. СССР-ти пысăк

шывсем çаксем: Атăл, Днепр, Дон, Нева, Çурçĕр Двина, Ока, Кама, Урал. 4. Эпир çак майсемпе çӳретпĕр тата япаласем турттаратпăр: лашапа, автомашинăпа, шывпа, чугун çулпа тата самолётпа. 5. Читальнăна çак хаçатсемпе журналсем килеççĕ: „Правда“, „Пионерская правда“, „Чăваш Коммуни“, „Ялав“, „Красная Чувашия“, „Мурзилка“. 6. Çак колхозсем ударлă акса пĕтерчĕç: „Социализм“, „Большевик“, „Ударник“, „Хĕрлĕ Çăлтăр“, „Коммунизм çулĕпе“. 7. Колхоз тата çак машинăсене туянасшăн: триер, молотилка, сеялка, жнейка. 8. Çĕр çинче, йывăçсем çинче, пӳрт тăррисем çинче—пур çĕрте те юр. 9. Инçе çула кайма çак япаласене хатĕрлемелле: апат-çимĕç, ăшă тумтир, кĕпе-йĕм. 10. Хĕвел тухрĕ те пурте чĕрĕлчĕ: вăрман, пĕве, хир. 11. СССР-ăн Европăри пайĕнче çак тинĕссем: Балтика тинĕсĕ, Шурă тинĕс, Хура тинĕс, Азов тинĕсĕ тата Каспи тинĕсĕ пур. 12. СССР-ăн хĕвелтухăç чиккинче çак тинĕссем: Беринг, Охотск тата Япони тинĕсĕ. 13. Вăл çак пулăсене тытать: çăрттансене, çуйăнсене, шаласене. 14. „Челюскин“ парохочĕн çулĕ: Шурă тинĕс, Баренц тинĕсĕ, Карски тинĕс, Хĕвелтухăç Сибирь тинĕсĕ, Чукотски тинĕсĕ тата Беринг тинĕсĕ.

143. ***Пăхса çырмалли диктант.*** Садсенче мĕнле йывăçсем ӳсеççĕ? Совет Союзĕнчи чи пысăк хуласен ятне çырăр, чи пысăк шывсен ячĕсене çырăр. Эсир мĕнле пысăк утравсем пĕлетĕр? Шупашкарта мĕнле хаçатсемпе журналсем тухаççĕ? Сирĕн колхозра мĕнле машинăсем пур? Эсир хăш-хăш писательсен произведенийĕсене вуланă?

## § 21. Обращени.

144. 1. Салам сана, çутă хĕвел! 2. Мĕн-ха шухăша кайрăн, сĕм вăрман? 3. Мĕн-ха кĕçенетĕн, шухă утăм? 4. Ан шавлăр-ха эсир, сĕм вăрмансем! 5. Сывă-и, хĕл мучи? 6. Тухсам, сарă хĕвел, Атăла çутат. 7. Колхоз хирĕ, эпĕ сана юрататăп. 8. Эсĕ пире, Сталин юлташ, трактор çине лартрăн.

1. Çӳлтен, самолётсем, перĕр! 2. Штыксемпе хирĕç тăрăр, салтаксем. 3. Эсĕ ĕнтĕ чылай кантăн, Ванюк, алла ĕç тытсан та юрать, ачам! 4. Чуп, чуп, ачам, савăн майăн чечеклĕ кунĕпе, савăн. Уç кантăкна, тусăм: сывлăш ăшă, ырă шăршăллă. 5. Атсемĕр! Çине тăрса ĕçлер! 6. Каласам, лĕпĕшĕм, эсĕ мĕнпе пурăнатăн, пепкем? Чуп-чуп, лашам, чуп, лашам, çитес çĕре çит, лашам! 8. Вĕç-вĕç, самолёт, çулсене сыхла; тăшмана чикĕ урлă каçма ан пар! 9. Кĕрле, кĕрле эсĕ, мотор! Шăран, юррăм, ирĕкре!

1. Ан пăшăлтат, ырашăм, пиçнĕ пучахупа! 2. Çăлтăрсем, çутă çăлтăрсем, çитĕ сире çиçме! 3. Çинçешке пилешĕм, ма-ха çĕре çитиех чӳхенетĕн? 4. Шавла, çырма, сивĕ шывупа, кĕрле, сĕм вăрман, хытăрах! 5. Ылттăн Украина, тырăллă çĕршывăм! Саншăн халăх юнĕ сахал тăкăнман. 6. Ылттăн Украина, пирĕн ĕç-терте эсĕ ахаль хăвармастăн, вăйлă тырă-пулă паратăн. 7. Пĕтĕм тĕнчери пролетарисем, пĕрлешĕр! 8. Хытăрах шакка, мăлатукăм, тупта!

1. Ăçта эсĕ, шăнкăрчăм?—Кунтах-çке, пичче.—Вĕçсе кай, шăпчăкăм, тăван çĕршыва! 3. Çул парăрсам, сĕм вăрмансем! 4. Эсир шывсем, сирĕлĕрсем! 5. Ан шавла эсĕ, ешĕл юманлăх! 6. Пирĕн юрă, инçете янăра, йĕри-тавра сирпĕн! 7. Малалла, юлташсем! Пурте пĕрле алла-аллăн тытăнар, пурте пĕр шухăшлă пулар. 8. Ма-ха эсĕ, курăк, часах сархайрăн, ма-ха эсир, чечексем, часах шантăр? 9. Ма-ха эсĕ, кĕр, пирĕн пата ир çитрĕн? Пире çутăпа ăшă йăлăхтарманччĕ-ха. 10. Вĕçсе килсем, тӳлек каç, лăпкă уйсене! 11. Ырă автанăм, мĕнле эсĕ чипер авăтатăн! 12. Малашне çын инкекĕнчен ан кул, кăвакарчăн! 13. Илсе кайсам, çил, пăр пĕлĕчĕсене! 14. Çисем, кӳршĕ, çисем! Çисем, кӳршĕ, тăраниччен. Пĕрер кашăк сыпсам! Сĕнсем, арăм! Тепрер тиркĕ çисем, тăванăм! 15. Шăранăр, хĕрӳллĕ юрăсем. 16. Телейлĕ пулăр, пиравăрçăсем. 17. Янра, çурхи Россия, янра, ирĕк çĕршыв! 18. Юрла, кĕрле, мăн хула. 19. Майăн пĕрремĕшĕ, çиçкĕн! 20. Хурал тăр, çурлапа мăлатук, савăн, ирĕк çĕршыв!

1. Тăван çĕршыв, эсĕ маншăн яланах ырă пул! 2. Ырă асатте, илсе кайсам мана кунтан киле, яла! 3. Эй, лар ман пата, ачам! 4. Асту, кума, намăс ан кур! 5. Вĕçсе иртĕр, хура пĕлĕтсем, катаран. 6. Пĕлтерсем, юрă, тăван çĕршыва, май уйăхĕ ытти уйăхсенчен ыррине. 7. Итле, Тăван çĕршыв, пионер сассине! 8. Кала-ха, Палестина турачĕ, ăçта эсĕ ӳснĕ, ăçта чечекленнĕ? 9. Ешĕл вăрмансем хушшинче эс ларатăн, тăван ял! 10. Мĕнле санпа мухтанас мар, Тăван çĕршывăм! 11. Чĕкеçĕм, эп юрататăп санăн янравлă юрруна, кунтан вĕçсе ан кай! 12. Шавла, шавла, ешĕл вăрман! 13. Ачасем, сире савăнмашкăн эпĕ чăрăш илсе килетĕп. 14. Ачашла пире, хĕвел, хăвăн пайăркусемпе! 15. Ачасем, шкула кайăр!

1. Вĕрен, тăванăм, вĕрен! 2. Пурте, юлташ, пĕрле каяр! 3. Кӳршĕм, эпĕ тăрантăм-çке! 4. Илтрĕм, тилĕ тус, сан ĕçӳсем çинчен! 5. Ăçта эсĕ, Ванюк, çĕтсе çӳрерĕн? 6. Тăван çĕршыв, сана салам ятатăп. Юрласа парсам, çил, çӳллĕ тусем çинчен.

1. Пионерсем, Ленин çулĕпе утăр. 2. Ачасем, ĕçе кар тăрăр! 3. Хĕрлĕ ялавсем, вĕлкĕшĕр. 4. Хытăрах шăран, юрă! 5. Салтаксем, атакăна хăюллăн кайăр.

**Пытару маршĕ.** (*В. И. Ленина асăнса*). Эсĕ, аслăскер, вилтĕн, мĕльюншар халăха кĕрешĕве ертсе пынă çĕрте. Эсĕ вилтĕн, Ильич... Сан тăпру çине ялавсем усатпăр. Сан вĕрентĕвне, хаклă çулпуçĕ, эпир хамăр чĕрере усратпăр.

**Пирĕн çĕршыв.** Совет çĕршывĕнче савăнса пурăнатпăр! Сан ятна, Сталин, чĕрере усратпăр. Эпир ăна пĕтĕм çĕр çине çĕклĕпĕр, эпир сана тавтăватпăр, тăванăм. Эсĕ пире телей патăн, эсĕ пире çутта кăлартăн. Санăн яту, Сталин, мĕнпур çĕнтерӳсен ялавĕ!

**Буденнăйăн утлă çарĕ.** Сухаламан хирсем тăрăх тусан мăкăрланать, Семĕн Михайлович утлă çара ертсе пырать. Пулемĕтчиксем, пулемĕт лартăр, янкăр пĕлетре явăн, хĕрлĕ самолĕт!

(М. Голодный).

**Çуркунне чĕнĕвĕсем.** Вăрман чечекĕ, часрах çурăл! Эсĕ, хăва, çемçе мамăкпа пĕркен! Куккуксем, шăнкăрчсем, вĕçсе килĕр, çуркуннене мухтаса юрлăр.

**Утă çулаканăн юрри.** Хулпуççийĕм, сарăл, сулăнсам, аллăм! Кăнтăр çил, варкăш, пите уçăлтар! Чашăлтат, çава, йăлтăр-ялтăр ту. Касăлнă курăк, пăшăлтат та тӳн! Пуççапах, чечек, çĕрелле таян!

**Чĕнни.** Çамрăксем, çӳлелле, çамрăксем, самолёт çине! Çамрăксем, танксем çине!

**Сарă автан.** —Сар-сар автан, сар автан, ăçта каян эс, автан?

— Вар леш енне, вăрмана, тилĕ патне хăнана.

**Хĕлле.** Аван-и, хĕл-мучи? Пирĕн пата кил те çурçĕр юррине вăрмансенче, хирсенче юрла!

**Ман тăван çĕршыв.** Салам сана, Тăван çĕршывăм, санăн сĕм вăрманусемпе, санăн аслă Атăлупа тата вĕçĕ-хĕррисĕр хирӳсемпе. Салам сана, тăван çĕршыв халăхĕ, ĕçре ырма пĕлмен паттăр!

**Сава.** Часрах чашăлтат, сăтăр, сава, юрла верстак юрри, вĕри хурçăпа хăмана çула, хĕрӳ турапа тура.

## § 22. Хутлă предложени.

145. 1. Çил-тăман хаярланать, çил-тăман улать, хăравçă утсем хартлатаççĕ. 2. Çил лăпланчĕ, вĕçен кайăксем шăпланчĕç, кĕтӳсем канма выртрĕç. 3. Шăрăхланса çитрĕ те, эпĕ килелле васкарăм. 4. Пичче пулă тытрĕ, эпĕ вĕсене витрене ярса пытăм. Эпĕ сана тулă сапса паратăп, эсĕ мана юрă юрласа пар. 5. Хĕвел пăхрĕ те, тĕтре сирĕлчĕ. 6. Çиçĕм йăлтăртатрĕ те, аслати кĕмсĕртетрĕ. 7. Çанталăк пит хитреччĕ, сасартăк аслати кĕмсĕртетрĕ. 8. Тусем çинче лăпкă каç пулать, кӳлĕ тĕкĕрĕ витĕр уйăх пăхать. 9. Чĕкеçсем вĕçсе кайрĕç, ĕнер шуçăм килнĕ чух çеç хура кураксем вĕçетчĕç. 10. Сивĕсем çитрĕç, хĕл ларчĕ.

1. Çумăр иртрĕ те, тăвăл лăпланчĕ. 2. Каç пулчĕ те, хĕвеланăç хĕрелчĕ. 3. Ыраш саралать, тĕмсем хушшинче шыв кăшт йăлтăртатать. 4. Лашасем пачĕç те, эпир кайрăмăр. 5. Дежурнăй звонок пачĕ те, ачасем савăнса столовăя чупрĕç. 6. Ăшă кунсем çитрĕç те, сăрт хĕрринчи курăк ешерчĕ. 7. Ылттăн кун йăлтăртатать, шывсем çырмара шăнкăртатаççĕ.

146. **Укçасăр столовăй.** Ула курак вăрман хĕрринче хир качаки виллине тупнă. Вăл хăйĕн тăванĕсене чĕнсе пуçтарчĕ те, мĕнпур кĕтӳ каçхи апат тума тытăнчĕ. Каç пулнă, уйăх çутатнă. Вăрманта тахăшĕн уланă сасă илтĕнчĕ. Ула кураксем сапаланчĕç, тăмана виле çине пырса ларчĕ. Тăмана çиме тытăннăччĕ кăна, тилĕ пычĕ. Тăмана йывăç çине вĕçсе ларать, вилене тилĕ çиме тытăнать. Тилĕ çисе те тăранаймарĕ, кашкăр пычĕ. Тилĕ тĕмсем хыçне пытанчĕ, вилене кашкăр турткалать. Халĕ яхăна та ан пыр. Кашкăр çисе тăранчĕ те, тилĕ тавăрăнчĕ. Тилĕ çисе тăранчĕ те, тăмана вĕçсе пычĕ. Тăмана çисе тăранчĕ те, ула кураксем вĕçсе пычĕç. Анчах та вĕсем валли качакан шăммисем кăна тăрса юлнă.

1. Çуркунне çитрĕ те, колхозниксем уя тухрĕç. 2. Эпир каçă латне васкарăмăр, паром шывăн леш енчеччĕ. 3. Çаран çинче юман ӳсет, унăн шултăра турачĕсем çинче вĕçен кайăк пӳрăнать. 4. Эпĕ халĕ инçете ăшă енне вĕçсе каятăп, çуркунне эсĕ каллех мана кĕт. 5. Тăвăл лăпланчĕ, тинĕс çаплах хумханать.

147. **Вăйлă çумăр**. Кăнтăртан хура пĕлĕт шуса килет. Вăл мĕнпур пĕлĕте хупласа илчĕ. Çиçĕм ялкăшать, аслати кĕмсĕртетет. Тусанлă çĕр çине вăйлă çумăр чашлаттарма тытăнчĕ. Шыв юхтарса çумăр çурĕ. Тепĕр самантран пĕлĕт хӳрешкисем кăна юлчĕç. Хĕвел пăхрĕ, çĕр савăнчĕ. Çырмана пăтранчăк шывсем шавласа чупаççĕ. Ӳсентăрансем ырă шăршă сараççĕ. Хуртсем сĕрлеççĕ, лĕпĕшсем вĕлкĕшеççĕ, ӳпресем явăнаççĕ. Вĕçен кайăксем савăнса юрлаççĕ. Çынсем çумăрпа исленнĕ хирсемпе çарансем çине пăхса савăнаççĕ.

148. 1. Хресченсем колхоз турĕç те мĕнпур йăрансене пĕтерчĕç. 2. Эпир вăрçасшăн марччĕ, анчах пире тăшмансем вăрçтарчĕç. 3. Колхозниксем вăрлăха çине тăрса суртларĕç, акана тухма ĕнтĕ пурте хатĕр. 4. Шăпчăк пысăк мар та, унăн сасси пысăк. 5. Хĕвел пăхрĕ те, пурте савăнчĕç. 6. Çĕре вăхăтра сухаланă, пахчасене те вăхăтра лартнă. 7. Шурта карăш карăшлатать, тата шапасем теменле кĕвĕсем калаççĕ. Юр вĕçкелет, çил улать. 8. Çавапа çулаççĕ, çурлапа выраççĕ. 9. Инçетре салтаксем курăнчĕç те, пирĕн оркестр марш выляса ячĕ. 10. Вĕсем те айăплă мар, эпĕ те айăпсăр.

1. Колхозра пĕтĕм çĕре пĕрлештернĕ, анчах кил вырăнĕпе уйрăм колхоз членĕсем усă кураççĕ. 2. Пилĕкçуллăха пурăнăçлас тĕлĕшпе пысăк çитĕнӳсем тунă, анчах пирĕн ку çитĕнӳсемпе лăпланма кирлĕ мар.

3. Эпир сулхăна лартăмăр, анчах сулхăнта та пăчăччĕ. 4. Пĕçерсе тăракан пит-куçăм çил вĕрсе уçăлтарасса кĕтрĕ, анчах ниçта та çил таврашĕ пулмарĕ.

5. Ăмăрткайăксем чăхсенчен аяларах та анма пултараççĕ, анчах чăхсем пĕлĕт çине вĕçсе хăпараймаççĕ. 6. Çил вĕрчĕ те, арман авăрма пуçларĕ. 7. Чавса çывăх та, çыртма çук. 8. Мулкачран хытă чупаймăн, ăна та пулин тытаççĕ. 9. Тĕк çăмăл, анчах ăна пӳрт урлă ывăтаймăн. 10. Хирсенче юр кайса пĕтмен-ха, анчах хуркайăксем карти-картипе çурçĕрелле вĕçсе каяççĕ. 11. Ĕç çынна тăрантарать, ӳркенни пăсать. 12. Çынсем çăва хавас, пыл хурчĕсем—чечеке. 13. Оркестр гимн выляса ячĕ те, вĕренекенсем площаделле утрĕç. 14. Колоннăсем трибуна патне пычĕç, анчах халăх вĕсене пăртак хĕсрĕ. 15. Кашкăра ăшă, анчах кĕрĕкне хывма çук. 16. Çĕнĕ пурăнăç чечекленсе пырать, кивви пĕтсех пырать.

## § 23. Хутлă предложенисенче запятой лартасси.

149. 1. Хурçă авăнмасть, сарă ылттăн тутăхмасть. 2. Çумăр суса тасатĕ, хĕвел типĕтĕ, ачаш çил кăтруна тураса якатĕ. 3. Сад сарăлса выртать, садра вуникĕ йăран, кашни йăранĕнче тăватă

суха касси, кашни суха кассинче çичшер кучан (*Çултталăк*). 4. Сасартăк хура пĕлĕт хупласа илчĕ, уйăх пытанчĕ, тĕмсемпе çӳллĕ курăк ăшĕнче çĕршер куçăн темĕн йăлтăртататать. 5. Акă çумăр пĕрĕхрĕ, тусан вĕçет, çумăр пĕрчисем йăлтăртатаççĕ, хĕвел уй-хире ылттăн сапать. 6. Çурхи шыв иртрĕ, çĕршыв типрĕ, тулта ăшă, хĕвел çĕре пăслантарать.

**Çуркунне.** Çур çитрĕ, юр кайрĕ, курăк шăтса тухрĕ, хурăн çулçă кăларчĕ, тĕрлĕрен вĕçен-кайăксем вăрманта юрра ячĕç. Пурте савăнаççĕ.

**Кĕркунне.** Кĕр çитрĕ, чечексем типсе хăрчĕç, çара тĕмсем салхуллăн лараççĕ. Пĕлĕтсем хупласа тăраççĕ, хĕвел пăхмасть, хирте çил улать, тăтăшах çумăр пĕрĕхет.

**Хĕлле.** Çулсем çине юр тултарчĕ, сукмаксен йĕрĕ те юлмарĕ. Шывсем хулăн пăрпа витĕнчĕç.

**Кĕркунне.** Айлăм тĕтрелле, сывлăш чĕрĕ, тӳпене пĕлĕт хуплать, тĕксĕм тĕнче салхун пăхать, салхун çил улать.

**Вăрманта.** Шăпчăксем юрлаççĕ, улаппа улатать, куккук авăтать.

**Çуркунне.** Акă пĕлĕт курăнчĕ, пĕрремĕш хут аслати авăтрĕ, çĕре çумăр пĕрĕхсе илчĕ, вара пурте савăнчĕç.

1. Ĕнтĕ юр та ирĕлет, урамсенче шыв шăнкăртатса юхать, çуркунне çитрĕ. 2. Сывлăш çуталать, çул курăнать, пĕлĕт тăрăлать. 3. Пĕлĕт тĕксĕмленчĕ те, сасартăк ĕç шавĕ чарăнса ларчĕ. 4. Ĕнтĕ айлăмра тĕттĕмленет, каç çывхарса килет. 5. Уйсенче юр çитти сирĕлчĕ, çырмасем те тыткăнран хăтăлаççĕ. 6. Çынсем вилеççĕ, анчах вĕсен ĕçĕсем юлаççĕ. Çил савăнса шавлать, карап çăмăллăн шăвать, ав инçетре тăван çĕршыв курăнать.

## § 24. Урăх çын сăмахлă предложенисенче чарану паллисем лартасси.

150. —Эсĕ кунта пĕчченех-и?—тесе ыйтрăм эпĕ хĕрачаран.

— Пĕчченех,— терĕ вăл шăппăн.
— Эсĕ вăрман хуралçин хĕрĕ-и?
— Вăрман хуралçин,—терĕ вăл, пăшăлтатса.

151.—Пăлан пăрушĕ тарчĕ-и мĕн?
— Тарчĕ, Кĕркури.
— Сарă-и?
— Сап-сарах, пуçĕпе чĕрнисем кăна хура.

152. „Пире эсĕ ăçта илсе килтĕн? Нимĕн те курăнмасть",—Сусанин çине тарăхса, кăшкăрнă тăшмансем. 2. „Ăçта-ха, Кĕркури?"—тесе ыйтнă ашшĕ. 3. „Ну, атьăр, ачамсем"—терĕ Бульба.

153.—Санăн кимĕ пур-и?
— Пур та, питĕ начар.
— Мĕн тата?
— Хăмисем хăпнă та хăй шăтнă.
— Тупрăн тата! Шăтăксене чӳпĕкпе питĕретпĕр!
— Питĕрме пулать те-ха.

— Эсе кам пулатӑн-ха?
— Пулӑҫӑ.
— Ху пулӑҫӑ, хӑвӑн киммӳ те шӑтӑк.
— Пирӗн шывра пулли те питех ҫук.
— Кайса чӳпӗк туп та киммӳ шӑтӑкӗсене питӗр. (Тургеневӑнни тӑрӑх).
154. — Сана мӗн кирлӗ, ачам? Эсӗ ҫӗтсе кайрӑн-им?
— Мана начальник кирлӗ.
— Сана мӗн тума начальник? Эпӗ хам начальник.
— Сирӗн пата мана атте ячӗ. Пирӗн яла фашистсем килчӗҫ, вӗсен гранатӑсем, автоматсем, пулемётсем. Аттене вӑрманпа ҫул кӑтартма илсе каясшӑн.
— Малалла мӗн вара?
— Атте мана вӑрттӑн сире ҫакӑн ҫинчен пӗлтерме ячӗ.
155. Пӗрре ирхине ачасем шкула пычӗҫ те ҫӳллӗ старик класс чӳречисене хупнине курчӗҫ. Вӑл ним чӗнмесӗр, тутине тӑсса, хӑй ӗҫне тунӑ, ҫиллессӗн туйӑннӑ.
Ачасем ун патне чупса пычӗҫ.
— Эсӗ, мучи, ҫӗнӗ сторож-и?
— Сторож ҫав.
— Эсӗ мӗн ятлӑ?
— Панфилыч.
Старик кантӑк умӗнче, нимӗн чӗнмесӗр, ачасем ҫине пӑхса тӑнӑ. Ачасем те шарламан, вӗсем нимӗн ҫинчен ыйтса пӗлме аптӑранӑ.
— Эсӗ хаяр-и?—тесе ыйтрӗ пӗри, хӑюллӑраххи.
— Курӑр акӑ,—терӗ старик.
— Хаяр пулӗ эсӗ? Ав мӗнле тинкерсе пӑхатӑн пирӗн ҫине!
Пурте кулса ячӗҫ. Старик те йӑл кулчӗ. Халӗ ӗнтӗ вӑл хаяр пек туйӑнмарӗ.
156. 1. Оратор хӑй сӑмахне ҫапла пуҫларӗ: „Паян халӑхӑн аслӑ уявӗ". 2. Командир салтаксене ҫакӑн пек сӑмах каларӗ: „Юлташсем, хамӑр Тӑван ҫӗршывшӑн пӗтӗм вӑя хурса кӗрешӗпӗр",—терӗ. Салтаксем каларӗҫ: „Пуҫсене хурӑпӑр, анчах пӗр утӑм та чакмӑпӑр!" 3. Вӗҫен кайӑк ҫуркунне ҫапла юрлать: „Ҫунана тӑвар та урапа кӳл!" 4. Кӗр калать: „Эпӗ уйсене тултарӑп". Ҫур калать: „Курӑпӑр-ха"—тет. 5. Тилӗ тӑрнапа туслашнӑ та ӑна хӑнана чӗнет: „Атя, тӑванӑм, хӑнана! Эпӗ сан валли пӑтӑ пӗҫертӗм!"—тет. 6. Ачасем пӳрте хашкаса чупса кӗчӗҫ те: „Атте, атте, пирӗн тетеле виле ҫакланнӑ",—терӗҫ.
157. **Патриот паттӑрлӑхӗ**. Ленинград облаҫӗнчи Семёнов старик гитлеровецсене чӑтлӑха ертсе кӗнӗ. Вӗсем хӑратнине хирӗҫ вӑл: „Эсир вырӑс ҫынни Тӑван ҫӗршыва сутать тесе шухӑшланӑччӗ пулӗ? Ҫук, ун пек пулас ҫук",—тенӗ. Семёнов Тӑван ҫӗршывшӑн пуҫне хунӑ.
158. **Паттӑр Санюк**. Пӗрре Санюкпа Серёжа вӑрмана кайнӑ. Ҫул ҫинче Санюк ыйтать: „Серёжа, эсӗ кашкӑртан хӑрамастӑн-и?"—тет. Серёжа мухтанать: „Мӗн хӑрамалла? Эпӗ ӑна пуҫран туяпа шаклаттаратӑп та вӗлеретӗп",—тет. Кайсан-кайсан Санюк юриех: „Кашкӑр! Кашкӑр!"—тесе кӑшкӑрать.—„Пӗтрӗм!"—

тесе çухăрса ярать Серёжа. Санюк ахăлтатса кулать:—„Эх, паттăр Серёжа!“—тет.

159. **Хура кĕр.** Пучахсем пĕр-пĕринпе пăшăлтатнăн туйăнать: „Салху пире кĕрхи çил ашкăннине итлеме, кичем пире çĕре çити пуççапма, кӳпшек пĕрчĕсене тусан ăшĕнче йăвалантарма“.

1. „Тăрнасем вĕçсе иртеççĕ!“—терĕ Петĕр. 2. „Урра! Урра!“—тесе кăшкăраççĕ ачасем. 3. „Кĕрĕрсем кунта!“—тет тарават сасă. 4. „Пушар! пушар!“—тесе кăшкăрнă тĕттĕмре хуралçă. 5. „Эпĕ саппуна хамах çĕлерĕм“,—терĕ Укçине. 6. „Ыран вĕренĕп-ха, паян выляма каятăп“,—тет наян. „Ыран та выльăп, паян вĕренетĕп“,—тет ĕçчен. 7. Трифон кӳршинчен ыйтать: „Эсĕ пĕлетĕн-и манăн миçе алса? Вара măшăрĕпех санăн пулать“. „Иккĕ“,—тет кӳрши. „Кӳршĕ епле пĕлчĕ-ха?“ тесе тĕлĕнет тăмсай.

8. —Сывă-и, кума?—„Пасара кайрăм та“. Хăлху мука-им?—„Автан туянтăм!“ —Сывă пул, кума!—„Аллă пус патăм“.

160. **Нимĕççен склачĕсене аркатни.**

Ванюшка:

— Ĕнер мĕн пулнине пĕлетĕн-и?

Илька:

— Çук, пĕлместĕп.

— Пурăнăçран юлатăн апла. Михайловка станцинчи нимĕç склачĕсене пĕрне те хăварман.

— Кам каларĕ?

— Кĕçĕр кукка килсе кайрĕ.

— Хăçан аркатнă, тет?

— Ĕнер каç. Хамăр самолётсем килсе бомбăсем пăрахнă. Пĕр икĕ сехет хушши вĕçрĕç, тет, вĕсем станци çинче. Складсем çĕрĕпе çуннă, тет.

— Ай-ай, ăшă пулчĕ пулĕ,—кулса илчĕ Илька савăнăçлăн.

— Мĕн калăн... Тăшмана çапла кирлĕ!

## § 25. Пĕтĕмпе аса илмелли ĕççем

161. **Татьяна Борисовна патне кайни.** Ырă вулавçă, мана аллуна пар та, санпа пĕрле кайăпăр. Çанталăкĕ ырă та ырă. Май уйăхĕнчи кăвак пĕлĕт тап-таса. Хурăнăн çамрăк çулçисем çуса тасатнă пек йăлтăртатаççĕ. Сулахайра та, сылтăмра та ешĕл ыраш хуллен хумханать. Ун çине пысăк мар пĕлĕтсем сулхăн ӳкеркелесе илеççĕ. Кĕске хӳреллĕ, тăмаланнă çилхеллĕ ула тиха çинçе урисемпе амăшĕ хыççăн вĕлтлеттерсе пырать. Вăл çинçе сасăпа кĕçенкелет. Эпир хурăнлăха кĕретпĕр. Уçă, ырă шăршă кĕрет сăмсана. Пĕчĕк пĕве хыçĕнче хăма витнĕ çурт курăнать. Кучер карта тăрăх сулахаялла тытать, яр уçă хапхаран кĕрсе каять. Эпир Татьяна Борисовна патĕнче. Ава вăл хăй те форточкăна уçнă та пуçне сулать. Сывă-и, кинемей? (И. С. Тургеневăн н и тăрăх).

162. **Çерçи.** Эпĕ садăн аллейипе сунартан таврăнатăп. Йыта ман умра чупса пырать. Сасартăк вăл чупма чарăнчĕ те йăпшăнса пыра пуçларĕ. Эпĕ аллея тăрăх малалла пăхрăм та çамрăк çерçие куртăм. Вăл йăвинчен тухса ӳкнĕ те, хăйĕн çитĕнсе çи-

теймен çуначĕсене сарса, тапранмасăр ларать. Ман йытă хуллен ун патне çывхарать. Сасартăк хура пĕсехеллĕ ватă çерçи ун умне лаплатса ӳкрĕ. Вăл хăйĕн чеппине çăлма ыткăнчĕ, йытă çулне картласа лартрĕ. Анчах унăн пĕчĕк кĕлетки сăрăлтатса чĕтрет, сасси çĕтнĕ, тискерленнĕ; вăл вилме хатĕр пулнă, хăйне хăй хĕрхенмен. Элес-мелес йытăран вăл тем пекех хăрана, çапах та çӳлте, турат çинче, чăтса ларма пултарайман. Хăйĕн ирĕкĕнчен те вăйлăрах вăй ăна унтан антарнă. Ман Трезор чарăнчĕ те каялла чакрĕ... Вăл та çав вăя туйрĕ курăнать. Эпĕ вăтаннă йытта каялла чĕнсе илтĕм. (И. С. Тургеневăнни тăрăх).

163. **Каçпа уçăлса çӳрени.** Хĕвел анас умĕн эпĕ яланах уçăлса çӳреме тухатăп. Ырă та-çке хĕвĕнсе ӳсекен ыраш хушшипе иртме. Унтан эпĕ çырма патне раща витĕр çул тытатăп. Эпĕ чăтлăха кĕрсе каятăп. Халĕ ĕнтĕ аран-аран малалла шăватăп. Раща хĕррине тухатăп та тин лăш сывласа яратăп. Сан умăнта мĕнле илемлĕх сарăлса выртать. Аялта, ывăç тупанĕ çинчи пек, анлă айлăм сарăлать, унта çырма авкаланса юхса выртать. Шывăн тепĕр енче кӳршĕ ял тата эпĕ юратнă кӳлĕ курăнать. Хĕвел пăхнă чух çакă юмахри пекех туйăнать. Юнашар ыраш пуссинче путене авăтать. Аялтан каçхи сулхăн килсе çапăнать.

Сирĕн канас килет пулсассăн е çутçанталăк ырлăхне туяс тесен, эпĕ калана пек тăвăр: çуллахи лăпкă каç шыв е кӳлĕ хĕррине кайăр та ларăр. Пĕрер сехет хушши те пулин çутçанталăк ырлăхĕпе ырă курăр.

164. **Поезда çăлчĕ.** Ирхине ирех Васильевка шкулĕнче тăваттăмĕш класра вĕренекенсем чугунçул çумĕнчи сукмакпа пынă. Станци патне çывăхарнă ĕнтĕ, чугунçул урлă каçмалла. Ĕç кĕркунне пулса иртнĕ. Таврара нимĕнле сасă-чĕвĕ те илтĕнмен. Сасартăк инçетре Мускавран килекен пассажир поезчĕ кăшкăртрĕ. Ачасем кашни ир тенĕ пекех çак поезд иртнине курнă. Ачасем пуртеваскасах рельсăсем урлă каçрĕç те çерем çине анчĕç. Пĕр Петя Подъĕмов çеç çӳлтен анмарĕ. „Эсĕ мĕн тăватăн унта?"—терĕç ăна юлташĕсем.—„Пĕтрĕмĕр, ачасем, рельссене вырăнтан тапратнă!"—тесе кăшкăрчĕ Петя вĕсене хирĕç. Килекен поезд сасси çывăхарать те çывăхарать. Часрах мĕн те пулин тăвас пулать. Петя мăйĕнчи хĕрлĕ галстукне салтса илет те поезда хирĕç чупать. Машинист паттăр пионертан пилĕк-ултă утăмра çех поезда чарчĕ. Вагонсенчен пассажирсем тухрĕç те Петьăран: „Мĕнле хăрамарăн?"—тесе ыйтаççĕ. „Эпĕ пионер",—тенĕ Петя.

165. **Хĕрлĕ ялав.** 1942-мĕш çулта хĕлле нимĕçсен Зорино ялне пырса кĕнĕренпе темиçе эрне иртрĕ ĕнтĕ. Шкулта вĕренекен Смирнов Гришăпа Петя Белов тăшмана мĕнле те пулин тавăрасшăн пулчĕç. Çĕрле вĕсем нимĕçсен штабĕ вырăнаçнă ялсовет çурчĕ патне шăппăн пычĕç. Петя тĕмсем хушшинче хурал тăма юлчĕ. Гриша пӳрт тăррине хăпарса кайрĕ. Вăл хĕвĕнчен нимĕçсенчен нумай вăхăт пытарса пурăннă хĕрлĕ ялава туртса кăларчĕ. Унăн чĕри питĕ хăвăрт тапать. Вăл шăнса кайнă аллисемпе хĕрлĕ ялава вырнаçтарчĕ. Ялавĕ часах пӳрт çинче вĕлкĕшме тытăнчĕ.

Темиçе минутăранах ачасем килте.

Ирхине нимĕçсем хĕрлĕ ялава пӳрт тăрринчен антарчĕç. Унччен ăна çынсем пурте курса ĕлкĕрчĕç. Колхозниксем ун патĕнчен савăнса иртрĕç. Инçетре артиллери пенĕ сасă илтĕннĕ. Совет Çарĕ çывăхарнăçемĕн çывăхарнă.

**Хитре чăрăш.** Сĕм вăрман варринче хитре уçланкă сарăлса выртать. Уçланкă варринче шĕвĕр тăрăллă çӳллĕ те яштак чăрăш. Унăн турачĕсем пур еннелле те пĕр пек сарăлса ӳснĕ, аялалла хитрен усăнаççĕ. Ку чăрăш çуркунне пит капăр. Унăн сарăрах симĕс хунавĕсем йывăçа илем кӳрсе тăраççĕ. Унăн турачĕсем çинче кайăксем савăнса янăраççĕ. Çулла чăрăш тĕксĕм симĕс тĕслĕ тумтир тăхăнать. Хĕллехи сивĕ кунсенче те чăрăш капăр, унăн турачĕсем çинче юр чăмаккисем пулаççĕ. Йĕпписем çинче пас йăлтăртатать.

166. **Çулла ращара.** Хĕвел хытă хĕртет. Шăрăх. Ращана кĕтĕм. Эпĕ çӳллĕ шĕшкĕ тĕмĕ айне ыткăнтăм. Çавăнтах яштак çамрăк вĕрене хăйĕн çăмăл турачĕсене хитрен кăнтарса ларать. Çулçисем çӳлте ерипен чӳхенеççĕ. Вĕсен симĕсрех сулхăнĕ каллĕ-маллĕ шукалать. Эпĕ месерле выртрăм та чăлханчăк çулçăсем выляни витĕр янкăр пĕлĕт çине пăхса савăнтăм. Ырă та иккен вăрманта çӳлелле пăхса выртма. Тӳпери сарăлса выртакан тĕпсĕр тинĕс çине пăхнăн туйăнать. Эсĕ кăвак пĕлĕт çине пăхса выртнине мансах каятăн. (И. С. Тургеневăнни тăрăх).

167. **Верховнăй Совета суйлани.** Союзлă республикăсен Верховнăй Советне суйламалли кунсем çитеççĕ. Пирĕн Союзăн халăхĕсем депутата чи лайăх çынсене, Тăван çĕршыва юратакан, Ленинпа Сталин ĕçне пĕтĕм чун-чĕререн туса пыракан çынсене суйлаççĕ. Пĕтĕм çĕршывпа пĕрле суйлава ачасем те хатĕрленеççĕ. Хăшĕ суйлав участокĕсене капăрлатĕç, хăшĕсем митингсем хыççăн спектакльсем лартса парĕç. Пионерсемпе шкул ачисем! Эсир те суйлава хатĕрленĕр! Тата лайăхрах, кар тăрса, мăннисене пулăшăр! Пуринчен ытла вĕренӳ çулне „тăваттă" тата „пиллĕк" паллăсемпе вĕренсе пĕтерме тăрăшăр. Ку аслă суйлав кунĕ валли чи паха парне.

168. **Тырă тухăçĕшĕн кĕрешни.** Çурхи акана вăхăтра тунинчен çурхи тырă тухăçĕ килет. Мĕнле ĕçлеççĕ-ха пирĕн колхозсем? Колхозсем çурхи акана тухрĕç. Пур çĕрте те ушкăн ĕçĕ вĕресе кăна тăрать. Пур çĕрте те ĕç пахалăхĕшĕн тăрăшаççĕ. Колхозниксем культурăллă та пуян пурăнăçшăн кĕрешеççĕ. Вĕсем Сталин юлташăн лозунгне—колхозниксене пуян та культурăллă пурăнакан тăвасси çинчен каланине асра тытаççĕ.

169. **Вĕçен кайăксем—пирĕн туссем.** Хĕвел кунтан кун ытларах та ытларах ăшăтать. Йывăçсен папкисем çурăлма тытăнаççĕ. Ашă енчен пирĕн пата çунатлă хăнасем вĕçсе килеççĕ: хура кураксем, шăнкăрчсем, шăпчăксем, тăрисем т. ыт. те.

Вĕçен кайăксем сиенлĕ хурт-кăпшанкăсене питĕ нумай пĕтереççĕ. Вĕсем сиенлĕ хурт-кăпшанкăсенчен йывăçсене, тĕмсене, йăрансене тасатаççĕ. Вĕçен кайăксене тивмелле мар. Вĕçен кайăксене йăвасем туса пама тăрăшмалла. Вĕçен кайăксем вĕсемшĕн тăрăшнине сая ямаççĕ. Шкул ачи, ан ман: вĕçен кайăксем хирсене, пахчасене, садсене сиенлекен хурт-кăпшанкăсемпе

лĕпĕшсене çиеççĕ. Вĕçен кайăксемшĕн ытларах тăрăшатăн— хурт-кăпшанкăсене ытларах пĕтеретĕн.

170. **Комсомолец çырăвĕ.** Эпĕ çирĕм çул тултартăм. Хама Совет Çарне илессине эпĕ тем пекех кĕтетĕп. Эпĕ хамăрăн Тăван çĕршыва юрататăп. Хамăрăн большевиксен аслă партине тата хамăрăн аслă çулпуça—Сталин юлташа юрататăп! Пирĕн çĕршыв хăватлă. Пирĕн çĕршывра çултан çулах çĕнĕ хуласем, заводсем, фабрикăсем, колхозсем ӳссе пыраççĕ. Çĕнĕ, социализмлă общество пулса тăрать. Эпĕ хам пурăнăça, хамăн мĕнпур вăя аслă Тăван çĕршыв телейĕшĕн пама яланах хатĕр. Маттур салтак пулма ĕмĕтленетĕп.

*И. Авдеев* комсомолец.

171. **Микробсем.** Эпир халĕ сикекен чирсем мĕнрен пулнине тата вĕсемпе мĕнле кĕрешмеллине пĕлетпĕр. Сикекен чирсем микробсенчен килнине учĕнăйсем тĕпчесе пĕлнĕ. Микробсем— питĕ вĕтĕ, ахаль куçпа пăхса курăнман чĕрчунсем. Пĕр тумлам шывра çĕр миллион ытла микроб пулать. Микробсем—пирĕн чи хаяр тăшмансем. Сикекен чиртен сыхланас тесен, микробсемпе çине тăрса кĕрешмелле.

172. **Аслати вăхăтĕнче вăрманта.** Эпĕ каçпа сунартан тарантаспа пĕччен таврăнатăп. Аслатиллĕ çумăр çывхарса килчĕ. Вăрман хыçĕнчен тухса, хура пĕлĕт шума тытăнчĕ. Ман тĕлте тата мана хирĕç тăсăк хура пĕлĕтсем ыткăнаççĕ. Шăрăх вырăнне лăмлă сулхăн çапрĕ. Çул çăра шĕшкĕлĕх витĕр явкаланать. Тарантас юмансемпе çăкасен хытă тымарĕсем çинче сиккелесе пырать. Çутă çиçĕм йĕри-таврана çурать. Çиçĕм хыççăн кĕскен те çиллессĕн аслати кĕмсĕртетсе илет. (И. С. Тургеневăнни тăрăх).

173. **Упăтесем.** Тропик вăрманĕн сĕм чăтлăхĕнче çӳлти туратсем хушшинче упăтесен ушкăнĕ кĕшĕлтетет. Вĕсем йывăç çинчен йывăç çине, çӳлти турат çинчен аялти турат çине хăюллăн сиксе ӳкеççĕ. Кунĕ-кунĕпех çуйхашу, кăшкăрашу, çăтăрçатăр, кăшăр-кашăр туни илтĕнет. Хĕвел çунтарать. Упăтесен шыв ĕçес килет. Упăтесем ерипен шыв патне каяççĕ. Сасартăк вĕсене ертсе пыракан ватă упăте çуйхашса, нăйкăшса, çывăхри тĕм ăшне чăмать. Ыттисем те унран юлмаççĕ. Упăтесем ханттар çĕлентен (удавран) хăранă иккен. Вăл тахçанах мĕн те пулин лекессе кĕтнĕ-мĕн. Анчах хальхинче упăтесем улталанмарĕç. Вĕсем хăйсен тăшманĕнчен тарса хăтăлчĕç.

174. **Совхозра электричество.** 1930-мĕш çулта Фрунзе ячĕпе тăракан совхозра электричество çинчен сăмах тапратрĕç. Ноябрĕн çиччĕмĕшĕнче пĕрремĕш хут электричество лампочки çутатрĕ. Ĕçре те электричествăпа усă курма тытăнчĕç. Çуркунне совхоз хирĕнче йывăç кăкламалли электричество машини ĕçлеме тытăнчĕ. Çур минута хушшинче машина мăн тункатасене туртатурта кăларать. Туртса кăларнă тункатасене электричество пăчкисемпе татнă, электричествăпа ĕçлекен пуртăсемпе çурнă. Кăкланă участоксене электричествăпа тикĕсленĕ. Электричествăпах çак участоксене сухаласа акма хатĕрленĕ. Электричествăпах

чирлĕ выльăхсене те эмеллеççĕ. Чирлĕ ĕнесене ятарласа тунă электричество лампочкисемпе ăшăтаççĕ.

175. **Пирĕн паттăр хĕрарăмсем.** 1938-мĕш çулти сентябрĕн 24-мĕшĕнче пирĕн Союзăн чĕринчен—Мускавран—„Родина" ятлă самолёт вĕçсе тухрĕ. Ăна Гризодубова, Осипенко лётчиксем тата Раскова штурман ертсе пычĕç. Вĕсем аслă совет халăхĕ тата Ленинпа Сталин партийĕ пăхса ÿстернĕскерсем. Тĕтресене, тăвăлсене пăхмасăрах, хăюллă хĕрарăм лётчиксем ертсе пынипе „Родина" самолёт, çĕр çине пĕр анса лармасăр, Амур шывĕ хĕррине вĕçсе çитнĕ. 26 сехет те 29 минута хушшинче паттăр лётчиксем сталинла задание пурнăçа кĕртрĕç. Инçетри Хĕвелтухăçа вĕçсе çитрĕç. Хĕрарăмсем самолётпа вĕçес енĕпе вĕсем чи мала тухрĕç. Маршрут тăрăх совет паттăрĕсем 6459 километр, Мускавран пуçласа вĕçсе çитнĕ вырăна тÿрĕрен шутласан, 5947 километр вĕçнĕ пулать.

Гризодубова, Осипенко тата Раскова хăйсен паттăр ĕçне тунă чухне Тăван çĕршыв çинчен шухăшланă. Тăван çĕршыва чапа кăларма ĕмĕтленнĕ.

Самолётпа вĕçсе каяс умĕн совет патриоткисем Сталин юлташ патне çыру çырнă. ,,Пирĕн çĕршывра Тăван çĕршыв интересĕ чи хакли",—тенĕ вĕсем çырура. Çак сăмахсене вĕсем хăйсен ĕçĕпе кăтартса пачĕç.

176. **Иркутскран Мускава йĕлтĕрпе кайни.** 1933-мĕш çулхи ноябрĕн 30-мĕшĕнче пĕр ушкăн салтак Иркутск хулинчен йĕлтĕрсемпе тухнă та Мускава кайнă. Вĕсем çул çинче çĕнĕ заводсем, фабрикăсем, электростанцисем, çĕнĕ колхозсем, çĕнĕ хуласем курнă. Вĕсем канма чарăннă чухне вĕсене колхозниксемпе рабочисем хапăл туса йышăннă. Вĕсем аслă çулпуçне, Сталин юлташа, хĕрÿллĕ салам калама хушнă. 1934-мĕш çулхи февралĕн 21-мĕшĕнче йĕлтĕрçĕ-салтаксем Мускаври Хĕрлĕ площаде çитнĕ. Пилĕк пин те икçĕр километра йĕлтĕрпе тухрĕç. Мускав вĕсене чĕререн савăнса кĕтсе илчĕ.

177. **Мускавпа Атăл каналĕ.** 1937-мĕш çулхи июлĕн 15-мĕшĕнче Мускавпа Атăл каналĕ уçăлчĕ те ĕçлеме тытăнчĕ. Большевиксем çутçанталăка алла илес тĕлĕшпе тепĕр пысăк çĕнтерÿ турĕç. Канал столицăна Атăл шывне парса тăрать. Канал Мускава пысăк порт туса хучĕ. Каналăн тăршшĕ 128 километр. Канал Атăл шывĕ хĕрринчи Кимры хули патĕнчен пуçланать те Мускава çитет. Çак çĕн шыв çулĕпе Мускава Атăл парохочĕсем тата пысăк баржăсем пыраççĕ.

178. **И. В. Мичурин.** Иван Владимирович Мичурин Тăван çĕршывра чечеклĕ сад туса хурасшăн пулнă. Вăл кашни ĕççыннин сĕтелĕ çинче панулми, иçĕмçырли, персиксем, абрикоссем пулчăр тенĕ.

Анчах Российăн вăтам тăрăхĕнче лайăх йышши улмуççисем, грушăсем ÿсмен, е ÿссен те, вĕсен тухăçĕ начар пулнă. Сибирьте тата Çурçĕрте шурçырлипе кедр мăйăрĕсем кăна çитĕннĕ.

Кашни районта, кашни облаçре климата çăмăл чăтма пултаракан тата пысăк тухăçлă сортсем ĕрчетмелле. Пирĕн çĕршывра улма-çырла пулман вырăнсем çук. Мичурин çакна ĕçпе кăтартса

пачĕ. Вăл Союзăн Вăтам тăрăхĕнче пысăк тухăçлă та пит аван сортлă йышши улмуççи, груша, черешня, чие, абрикос, иçĕм-çырли ĕрчетрĕ, кунта унччен антоновкăпа анис кăна туса илме пултарнă.

179. **Н. К. Крупская пионерсем патне янă çыруран.** Хаклă юлташсем! Пионер организацийĕ пуçланни вунă çул тултарать ĕнтĕ. Çак çулсенче пионерсен шучĕ ÿснĕ. Ачасем хăйсен организацинче пĕрле кар тăрса ĕçлеме, обществăллă ĕçсене хутшанма, йĕри-таврана ăнланулла пăхма вĕреннĕ. Нумай вĕренчĕç, çак ĕçре çитĕнчĕç. Эпĕ сире, тăван ачамсем, хĕрÿллĕ салам яратăп. Малалла та килĕштерсе пурăнар, пĕр-пĕрне пулăшар, обществăллă ĕçсем тăвар, пĕлÿсем илессишĕн тăрăшар, тăрăшса, ленинла ĕçлеме вĕренер. Эсир, ачасем, рабочисен ĕçĕшĕн, Ленин ĕçĕшĕн кĕрешме хатĕр-и?

180. **Валерий Павлович Чкалов.** 1938-мĕш çулхи декабрĕн 15-мĕшĕнче пирĕн вăхăтри чи паллă лётчик—Совет Союзĕн Геройĕ Валерий Павлович Чкалов боевой постра вилчĕ. Çак паллă çыннăн çулĕ пит чаплă. Вăл, молотобоецран пуçласа, пĕтĕм тĕнчипе паллă лётчик пулса тăнă. Чкаловăн ăсталăхĕпе хастарлăхне халăхсен çулпуçĕ Сталин юлташ пахаланă. 1936-мĕш çулта çĕр çине анса лармасăр самолётпа инçете вĕçме палăртнă пулнă. Ĕçе ăнăçлă тăвасса шанса, çак ĕçе Чкалова хушнă. Чкалов Сталин хушнине пит те аван пурнăçланă. Вăл 56 сехет те 20 минутăра, çĕр çине анса лармасăр, самолётпа 9374 километр вĕçнĕ. Тепĕр çулĕнче Сталин юлташ Чкалова тата ответлăрах ĕç—СССР-тан Америкăна Çурçĕр полюсĕ урлă вĕçессине шанса парать. Чкалов хальхинче те çулпуçĕ хушнине лайăх пурнăçлать: 63 сехет те 25 минута хушши вăл çĕр çине пĕр лармасăр 12 пин километр таран вĕçнĕ, вĕсенчен 5 900 километрне пăрсемпе океансем урлă вĕçнĕ.

181. **Юр айĕнчи пурнăç.** Хĕлле хире кайăр та ыраш калчи çинчи юра чавса пăхăр. Хир хĕлле те симĕс, юр çиттипе çех витĕннĕ. Юр айĕнче ыраш çывăрать. Унăн çамрăк хунавĕсем вунă сантиметр тăршшĕ пулаççĕ. Мĕнле-ха çак условисенче те пурнăç пĕтсе лармасть? Акă мĕнле, юр ăшша сывлăша тухма памасть. Çавăнпа та çĕр ăшши юр айĕнчен тухмасть. Юр çĕре витсе хунă çитĕ пекех. Çак çитĕ айĕнче ыраш çывăрать те ĕнтĕ. Çуркунне çитет те температура хăпарать, ыраш хунавĕсем вара тÿрех ÿсме тытăнаççĕ.

182. **Тĕве.** Тĕве апата тиркемен выльăх. Вăл ытти выльăхсем çименнине те çиме пултарать. Вăл йĕплĕ курăксене те, тĕмĕн ÿсекен йывăççене те çиме пултарать. Шыв ĕçмесĕр вăл сакăр талăк ытла пурăнма пултарать. Тĕвен курпун мăкăрăлчăкĕнче çу пухăнса тăрать. Тĕве нумай вăхăт апатсăр е шыв ĕçмесĕр пурăнсан, унăн курпунĕ чакать. Тĕве питĕ чăтăмлă. Ун çине икçĕр аллă килограмм таран япаласем çыхса хураççĕ. Çак япаласемпе вăл пĕр канмасăр вуникĕ сехет хушши кайма пултарать. Пушхирсенче, тÿсме çук шăрăх çĕрте, шыв та курăк та çук çĕрте, тĕве этеме питĕ кирлĕ выльăх.

183. **Шурă упа.** Шурă упа çурçĕрте, сивĕ енче пурăнать. Ку пите пысăк та хаяр чĕрчун. Унăн вăйĕ арăслан вăйĕнчен кая мар. Вăл пирĕн упасенчен пысăк тата унăн çăмĕ шурă. Упа сехечĕ-сехечĕпе пăр çинчи шăтăк патĕнче тюлень шывран уçă сывлăшпа сывлама тата хĕвел çинче ăшăнма тухасса кĕтсе выртать. Упа ăна хăйĕн вăрăм та çивĕч чĕрнисемпе ярса илет те пăр çине сĕтĕрсе кăларать. Шурă упана унăн тирĕшĕн, ашĕшĕн тата çăвĕшĕн тытаççĕ.

184. **Уçăлса çӳрени.** Каçхи шуçăм сӳнет. Сывлăша сивĕ сулхăн çапать. Эпĕ киле таврăнма тăтăм. Ман умра ансăр айлăм сарăлса выртать, маларах çăра вăрман пĕлĕтелле кармашать. Эпĕ сăрт çинчен антăм. Айлăмра вăрăм курăк хумханмасть. Ман тĕлте çара çерçисем лăпăстатаççĕ. Эпĕ вăрман витĕр хире тухрăм та килелле утрăм.

185. **Хуралта.** Хĕвел анса ларать. Çĕрле пулать. Тӳпере çăлтăрсем кăна, уйăх тухса çутатмасть. Часовой хуралта тăрать. Йĕри-тавра тусем-сăртсем. Часовой инçете тинкерсе пăхать. Сасартăк темĕн чăштăртатни хăлхана кĕрсе каять. Часовой тинкерсе итлет. Темиçе минутăран татах тавра лăпланать.

186. **Çулçăсем тăкăнни.** Илемлĕ-çке кĕркунне, çумăр çуман вăхăтра! Ăçта пăхнă унта çулçăсем тăкăнаççĕ. Йăмăх хĕрлĕ ăвăс çулçисем сывлăшра явăна-явăна анаççĕ. Пилеш хĕп-хĕрлĕ çуптăмĕсемпе капăрланать. Хырсемпе чăрăшсем кăна, хăйсен тĕксĕм симĕс тăррисене кăнтарса, мăнаçланаççĕ. Туратсем хушшипе шупка сенкер пĕлĕт курăнать. Ни кăмпа татакансем, ни кайăк тытакансем курăнмаççĕ. Кăсиясен юрри хăлхана пырса çапăнать.

187. **Иван Сусанин.** Тĕттĕм тискер каç, çил-тăманлă çанталăкра поляксем Россия чĕрийĕ—Мускав патнелле утнă. Кострома кĕпĕрнинчи хресчен Иван Сусанин поляксен отрядне Мускава çул кăтартса яма пулать. Вăл поляксене чăтлăх вăрмана ертсе кĕрет те калать: „Эсир кунта шăнса вилетĕр, тухмалли çула сире кăтартмастăп!“—тет. Поляксем Сусанина хĕçсемпе тураса тăкаççĕ. Вилес умĕн вăл çак сăмахсене калать: „Руçшăн, Тăван çĕршывшăн вилетĕп!“—тет.

188. **Çуркунне Сталинград патĕнче Атăл çинче.** Пăр кайрĕ те тулли Атăл тата ытларах сарăлчĕ. „Степан Разин“ пароход çинче эпир Сталинградăн чăнкă çыранĕсем патне çывхаратпăр. Вăл вуншар километра Атăлăн анлă тĕкĕрĕ çумĕпе тăсăлать. Ав паттăр хулан каççисем, пристанĕсем—вĕсем пысăк çапăçусене тӳссе курнăскерсем.

Ку шыв хĕрринче халĕ ĕç вĕресе кăна тăрать! Тавар поезчĕн паровозĕсем кумса çӳреççĕ. Пассажир пароходĕ „Громобой“ пристань патĕнче пăс кăларать. Шыва хирĕç „Игарка“ буксир яланах хăй хыççăн пысăк нефть баржине „Светланăна“ сĕтĕрет. Шыва май, Астрахане, „Фультон“ ятлă буксир пушă баржăсене вĕçе-вĕçĕн сĕтĕрет. Килекен пароходсене хирĕç йăр „Узбек“ баркас вирхĕнет. Пристаньсем патне шыври трамвайсем, пулăçăсен лодкисем, моторкăсем пыра-пыра чарăнаççĕ.

189. **Кӳлĕ хĕрринче.** Акă эпир кӳлĕ патĕнче. Кӳлĕри шыв сивĕ, таса. Кӳллĕн юшкăнлă тĕпĕ тата симĕс шывкурăксем

курӑнаҫҫӗ. Ҫулла кӳлӗ патне нумай пулӑҫӑсем пыраҫҫӗ. Ҫӗрле кӳлӗ хӗрринче кӑвайт ҫунать. Кӳлӗ патӗнчех вӑрман. Вӑрманта лӑпкӑ, сухӑр шӑрши кӗрет. Сайра хутра карӑк сасси илтӗнет. Тепӗр ҫӗртен утут сасси килсе ҫапӑнать.

190. **Эпӗ мӗн?** Ҫын аллинче эпӗ темӗн те тӑватӑп. Тырӑ тухӑҫӗ лайӑх пултӑр тесе, эпӗ хирсене ҫемӗҫтеретӗп. Эпӗ машинӑсем, шахтӑсем, ҫулсем, кӗперсем тӑватӑп. Ӗлӗк пушӑ вырӑнсем пулнӑ ҫӗрте халӗ заводсем, рабочи посёлоксем, шкулсем, больницӑсем, культура дворецӗсем, парксем тӑватӑп. Шывсӑр пушхирсенчен эпӗ хирсем, плантацисем тӑватӑп. Эпӗ ҫӗр айӗнчен кӑмрӑк, нефть, руда тупатӑп. Эпӗ ҫынсен шухӑшӗсене пиншер километра илсе каятӑп. Эпӗ тинӗссем, океансем, чикӗсем урлӑ утатӑп.

191. **Акӑш**. Пысӑкӑшӗпе, вӑйӗпе, илемӗпе тата кӗрнекӗпе акӑш ытти шыв ҫинчи кайӑксенчен ирттерет, ҫавӑнпа та акӑша шыври вӗҫен-кайӑксен патши теҫҫӗ. Юр пекех чӑлт шурӑ тӗкӗ, йӑлтӑртатса тӑракан пысӑк мар янкӑр куҫӗсем, хура сӑмсаллӑ тата хура ура лаппиллӗ, вӑрӑм, авӑнчӑк тата илемлӗ мӑйлӑ, тӗттӗм кӑвак та яка шыв ҫийӗпе ешӗл хӑмӑшсем хушшипе лӑпкӑн ишсе пынӑ чух вӑл ытарма ҫук илемлӗ.

192. **Улай.** Мӑклӑ шур тӑрӑх эпир хамӑн ӑслӑ та ватӑ йытӑпа, Улайпа, пыратпӑр. Вӑл е симӗс мӑк тӑрӑх чупса пырать, е хӑйӗн вӑрӑм та шӗвӗр сӑмсипе сывлӑша шӑршлать, е хӑрах хӑлхине чанк тӑратса итлесе пӑхать. Кун пек ӑслӑ йытӑпа сунара ҫӳреме те аван. Вӑл кашкӑра та, ҫӑмламас упана та тытма пӗлет. Мамӑк пек ҫемҫе ҫӑмлӑ пакша-и, хытӑ таракан мулкач-и: пурин шӑршине те пӗлет.

**Фергана каналӗ**. Типсе хӑрнӑ ҫӗршывсене Нарын шывӗпе шӑварма 1939-мӗш ҫулта Фергана колхозникӗсем канал тума шутларӗҫ. 160 пин колхозник хӗрӗх пилӗк кун хушшинче 270 километр тӑршшӗ канал турӗҫ. Каналӑн сарлакӑшӗ 6 метртан пуҫласа 25 метр таран, канал пӗр секунда хушшинче 100 миллион кубометр шыв пама пултарать. Колхозниксем 18 миллион кубометр ҫӗр чавнӑ, 18 типӗ района шӑвармалла тунӑ.

**Хурӑнлӑх.** Эпӗ хурӑнлӑхра ларатӑп. Тӳпе е кӑпшак шурӑ пӗлӗтсемпе хупланать, е пӗлӗтсем таҫталла сирӗлеҫҫӗ. Хурӑн ҫулҫисем пурте тенӗ пекех симӗс-ха. Пер ҫамрӑк хурӑн кӑна ылттӑн пекех сап-сарӑ. Вӑл хӗвел ҫинче йӑлкӑшса тӑрать. Нимӗнле кайӑксем те юрламаҫҫӗ. Сайра-хутра ҫеҫ кӑсия чӑйлаткаласа илет.

**Шкулта.** Ачасем шкула ҫӳреҫҫӗ. Вӗсем унта вӗренеҫҫӗ: ҫыраҫҫӗ, вулаҫҫӗ, задача шутлаҫҫӗ, юрлаҫҫӗ. Учитель вӗсене урок ӑнлантарса парать. Вӗренекенсем тинкерсе картӑ ҫине пӑхаҫҫӗ. Вӗсем ун ҫинче хамӑр аслӑ ҫӗршывӑн хулисене, шывӗсене, тӑвӗсене, тинӗсӗсене кураҫҫӗ. Вӗсем Тӑван ҫӗршыва юратаҫҫӗ.

**Шыв ҫулҫӳревӗ**. Ҫумӑр шывӗ ҫарансене, уй-хирсене уҫӑлтарать те ҫӗре сӑхать. Ҫӗр айӗнче вӑл тумламӑн-тумламӑн сӑрхӑнасӑрхӑна пӗр ҫӗре пуҫтарӑнать. Унтан вӑл ҫӗр айӗнчен тӑрӑ, сивӗ ҫӑлкуҫӗ пулса тухать. Ҫӑл хӑй валли ҫул тӑвать, чулсем ҫинчен шӑнкӑртатса юхать. Тепӗр ҫӑлпа пӗрлешет те, вӗсем шакӑлтатса пӗрле юхаҫҫӗ.

**Парӑнтарнӑ шыв**. Днепр ҫинче ҫынсем хӑрушӑ та паттӑррӑн

кӗрешнине пурте пӗлсе те ҫитеймеҫҫӗ. Шыва пӗвелесе чарасси, турбинӑсем лартса шыва ҫав турбинӑсен урапиcене ҫавӑрттарасси нимӗх те мар пек. Днепр ҫинчи пӗве вӑл—чул стена, унӑн тӑршшӗ километр, ҫӳллӗшӗ темиҫе хутлӑ ҫурт ҫӳллӗш. Ҫак пӗвене типӗ ҫӗрте пӗвеме ҫӑмӑл пулӗччӗ. Ӑна шыв урлӑ пӗвемелле-ҫке. Шыв вырӑнта тӑмасть, шыв сиккисенчен сике-сике анса, тинӗселле вӑркӑнать. Анчах Днепра алхасма паман Шывне уҫласа кӑларнӑ вырӑнсенче ҫынсем хӑйсене хӑйсем хӗрхенмесӗр ӗҫленӗ.

**Вӑрманта пулса иртнисем.** Юр ирӗлме пуҫларӗ. Упа ҫур ҫитнине, шыв тапраннине сисрӗ те шӑтӑкӗнчен тухрӗ. Шӑнкӑрчсем вӗҫсе килчӗҫ. Вӗсем йывӑҫ хӑвӑлӗсенче хӑйсем валли йӑва шыраса тупаҫҫӗ. Хӑвӑлне вӗсем ансӑр хушӑклине е пӗчӗк шӑтӑклине суйлаҫҫӗ. Ҫирӗк тӑрисем, вӑрман кӑвакарчӑнӗсем (улаппасем) тата ытти кайӑксем те вӗҫсе килчӗҫ. Вӑрманта йывӑҫсем ҫине капланса ларнӑ юр ишӗле-ишӗле анать. Пакша йӑвин тӑррине йывӑр юр чӑмакки кӑштах ишсе антармарӗ. Хурӑн турачӗсем ҫинче папкасем кӳпшекленеҫҫӗ.

**Пулас паттӑр.** Инҫетре тӳпере хурҫӑ кайӑксем явӑнаҫҫӗ. Ку паттӑр лётчиксем Совет сывлӑш флочӗн хӑватне кӑтартаҫҫӗ.

Тимӗрҫӗ ывӑлӗ Миша площадьре пӗлӗтелле пӑхса тӑрать. Мишӑн лётчик пулас килет. Вӑл аслӑ Чкалов пек пуласшӑн. Анчах унӑн нумай вӗренес пулать-ха. Ача савӑнса аллисене ывӑткалать те килелле чупать.

Унӑн ыран валли задачӑсем тумалла, уроксенче „отлично“ паллӑсем кӑна илмелле.

**Мускав.** Мускав—Совет Союзӗн столици, унӑн чӗри. Ку хула пирӗн ҫӗршывӑн кашни ӗҫҫыннишӗн хаклӑ. Мускавӑн илемлӗ урамӗсене асфальт сарнӑ. Каллӗ-маллӗ трамвайсем, автобуссем, автомобильсем вирхӗнеҫҫӗ. Ҫӳлте самолётсем явӑнаҫҫӗ. Аялта, ҫӗр айӗнче, метро поезчӗсем кӗрлеҫҫӗ. Мускав шывӗ хӗррипе пур ҫӗрте те гранит сарса тухнӑ. Мускав—ӗҫҫыннисемшӗн чи юратнӑ тӑван хула. Мускавра тӗнчипе паллӑ аслӑ шкулсем, наука учрежденийӗсем пур. Мускавра Советӑн аслӑ органӗсем ӗҫлеҫҫӗ. Кунта Ленинпа Сталин партийӗн, пӗтӗм Союзри коммунистсен партийӗн Тӗп Комитечӗ ӗҫлет. Кунта пурӑнать, кунта ӗҫлет Совет ӗҫхалӑхӗн ҫулпуҫӗ аслӑ Сталин.

**Сӗм вӑрмансем.** Эпир Атӑл тӑрӑхӗнче пурӑнатпӑр. Пирӗн умра анлӑ та инҫене сӗм вӑрмансем тӑсӑлаҫҫӗ. Ҫурҫӗрте ку вӑрмансем Архангельск облаҫӗнчи мӑклӑ шурсем патнех ҫитеҫҫӗ. Инҫетре-инҫетре, хӗвелтухӑҫӗнче, ҫак вӑрмансем Урал тӑвӗсем ҫинелле каяҫҫӗ, вӗсем хыҫӗнче вара Сибирь сарӑлса выртать. Вӑрмансенче пур еннелле те шывсем юхаҫҫӗ. Анлӑ та тулӑх Печора тата ҫурҫӗр Двина кӑнтӑртан ҫурҫӗрелле юхаҫҫӗ. Кӑнтӑр еннелле Вятка, Кама тата Атӑлӑн ытти юппиcем васкамасӑр юхаҫҫӗ.

**Ҫуркунне тундрӑра.** Ҫуркунне ҫитсенех тундрӑри хаяр ҫутҫанталӑк улшӑнать. Часах вырӑнӗ-вырӑнӗпе юр ирӗлет. Шывсем шӑнкӑртатса юхаҫҫӗ. Пур ҫӗрте те кӳленчӗксем, кӳлӗсем, шурсем йӑлтӑртатаҫҫӗ. Хурт-кӑпшанкӑсем вӗркеме тытӑнаҫҫӗ. Унтан

кăнтăртан карти-картипе вĕçен кайăксем: хурсем, акăшсем, кăвакалсем тата ытти кайăксем те вĕçсе килеççĕ. Тўремлĕхе мăк, имшеркке курăк, морошка тĕмĕсем витеççĕ. Пушă тундрăра пурăнăç тапранать, вĕрет. Ненецсем хăйсен пăланĕсемпе килеççĕ. Кунта вĕсем пăлан кĕтĕвĕсене кĕтеççĕ, пулăсем тытаççĕ, сунара çўреççĕ. Хĕвелĕ кунĕпе-кунĕпе вĕри пайăркисене айлăмсем, сăртсем çине сапалать. Тундрăра та пурăнăç вĕресе тăрать.

**Зоопаркра.** Мускав зоопаркĕн пĕвинче Гренланди тюленĕсем пурăнаççĕ. Ку пĕве пит тарăнах мар, анчах чылай анлă. Тюленьсем сехечĕ-сехечĕпе шывра выляççĕ, ишеççĕ. Вĕсем пĕвере явăнаççĕ, унталла-кунталла ишсе çавăрăнаççĕ. Хĕлле тюлень шывран сайра тухать: шывра ăшă, тулта сивĕ. Çуркунне тюлень хĕвелте ăшăнса выртма юратать. Тюленьсем, пĕве хĕррине тухатуха, чылай вăхăт выртаççĕ.

**Типĕ çанталăк.** Хĕвел хытă пĕçертнипе çĕр хавшаса çитет. Шывсем типеççĕ. Йывăçсем хăйсен турачĕсене салхун усаççĕ. Курăк ĕнсе сарăхать. Чечексем шанаççĕ, вĕсен шăрши çухалать. Хуртсем, лĕпĕшсем, чечекрен чечеке вĕçсе ларса çимĕç шыраççĕ. Вĕçен кайăксем сывлăшра явăнаççĕ. Пулăсем шыв тĕпнелле тарса аннă. Кăнтăрла чĕрчунсем нумайăшĕ пĕçертекен хĕвелтен тарса пытанаççĕ.

**Тинĕс хĕрринче.** Пулăçсен ялĕ хыçĕнче чăнкă çырансем. Ачасем тинĕс хĕрринче тĕрлĕ тĕслĕ чулсем, шапа хуранĕсем пуçтараççĕ. Вĕсен умĕнче кăвак тинĕс выртать. Хумсем çырана пыра-пыра çапăнаççĕ. Инçетре пулăçсен пысăк кимми тĕксĕммĕн курăнать. Унта старик хăйĕн Ванюк ятлă ывăлĕпе ларать. Вĕсем паян тинĕсре пулă тытаççĕ.

**Хуларан яла.** Çуркунне. Эпĕ хуларан яла таврăнтăм. Яка сукмакпа утма çăмăл. Хĕвел анайман-ха. Тўпере тăри юрлать. Манран сылтăмалла колхоз хирĕ сарăлса выртать. Тырă акаççĕ. Пур çĕрте те тракторсемпе сеялкăсем курăнаççĕ. Çултан сулахайра, çырма хĕррине çитиччене, çарансем сарăлса выртаççĕ. Çырма леш енче, вар патне çитиччене вăрман. Вăрман тĕлĕнче пĕчĕк касă пур. Шыв урлă каçсан, хамăр яла, Михайловкăна пырса кĕретĕп.

**Пионер лагерĕ.** Илемлĕ çутă кўлĕ хĕрринчи кăшт тĕмескеллĕ вырăнта пионер лагерĕ вырнаçнă. Аялта—склад тата лазарет; çўлерех—чатăрсем, кашнинче пĕрер звено, тата çўлерех—столовăйпа кухня. Лагерь варринче аслă площадкăпа мачта. Пионерсен хĕрлĕ ялавĕ вĕлкĕшет. Сăрт хĕрринче, вăрман уçланкинче Ленин бюсчĕ, ун тавра—чечек клумбисем.

Питĕ савăк, питĕ йĕркеллĕ пионер лагерĕнчи пурăнăç. Кунта вăйăсем пулаççĕ. Ачасем кунта канаççĕ, сывлăхĕсене тĕреклетеççĕ, çĕнĕ вĕренў çулне хатĕрленеççĕ.

## § 26. Ирĕклĕ диктант валли материал.

**Тăван çĕршывшăн.** Фашистсем ыйтса тĕпченĕ чух вăл хăйне Таня тенĕ. Унăн чăн-чăн ячĕ (ку каярах палăрнă) Зоя Космодемьянская пулнă. Зоя Мускавра çуралса ўснĕ. Вăл тăххăрмĕш

класра вёренне, комсомолка пулнă. Хаяр вăрçă вăхăтěнче вăл, тăшмана хирěç пěтěм вăя хурса кěрешес тесе, партизансен отрядне кайса кěрет. Зоя, çине тăрса, паттăррăн та хăюллă ěçлет. Вăл нимěçсем йышăннă ялсене пыра-пыра кěрет, вěсен çыхăну линийěсене татать, вěсем пурăнакан çуртсене, хěçпăшал склачěсене вут тěрте-тěрте çунтарать.

Анчах Зоя нимěçсен аллине лекет. Нимěçсем ăна темěн тěрлě асап кăтартаççě, ыйтса тěпчеççě. Зоя хăйěн юлташěсем, партизансем çинчен пěр сăмах та каламан.

Темěн тěрлě мăшкăлласа асаплантарнă хыççăн фашистсем Зойăна мăйкăч патне çавăтса пыраççě. Хăйне нимěç мăйкăчě пăвса вěлерес умěн Зоя, совет çыннисене чěнсе, çапла каланă: „Юлташсем! хăюллăрах пулăр! кěрешěр, тăшмана вěлерěр, çунтарăр! Эпě вилěмрен хăрамастăп: хамăр халăхшăн вилетěп".

**Муму.** Каç енне сулăннă. Карачăм шыв хěррипе шывалла пăхса пынă. Сасартăк шыв хěрринчи юшкăн çинче темěн мěкěлтетнине курать. Вăл пěшкěнет те пěчěк йытă çурине курах каять. Йытă çурийě шурă, пăч-пач хура тěлсем пур. Вăл шывран тухма тăрмашнă, çапкалашнă, каялла шăва-шăва аннă, шывран ниепле те тухайман, ырханскер йěпенсе шăнса çитнипе чěтренě. Карачăм мěскěн йытă çурине шывран туртса кăларчě, хěвне чикрě те килелле ярăнтарчě.

Хăй пÿлěмне çитсен, вăл вилěмрен хăтарнă йытă çурине хăйěн кровачě çине хучě, ăна сăхманпа витрě, унтан витерен улăм илсе килчě, кухньăран пěр чашăк сěт тупса килчě. Хуллен сăхманне сирчě, улăмне йытă çури айне сарчě, сěтне вăл кроватьçине лартрě. Мěскěн йытă çури виçě эрнере кăна, унăн куçěсем тин уçăлнă-ха; хăрах куçě тепринчен пысăкрах пек те туйăннă, вăл чашăкран ěçме те пěлмест, чěтрет, куçěсене хěскелет. Карачăм ăна икě пÿрнипе пуçěнчен ачашшăн тытнă та сěт çинелле пěкнě. Йытă çури сасартăк тăрана пěлми ěçме тытăннă, сирпěтнě, чěтренě, чыхăннă. Карачăм çěрěпех унпа чăрманнă, ăна вырттарнă, шăлса тасатнă, юлашкинчен, ун патěнчех, темěнле савăнса, лăпкăн çывăрса кайнă.

Вăл йытă çурине чěререн пăхма тытăннă. Малтанах йытă çури ырхан, илемсěр пулнă, анчах пěчěккěн-пěчěккěнех вăл вăй илнě, çитěннě. Сакăр уйăхран Карачăм тăрăшнипе вăл чипер йытах пулса тăнă. Лăпсăркка хăлхаллă, çăмламас хÿреллě, ăслă та мăн куçлă ытарма çук йытă. Вăл Карачăма çав тери юратать, унран хăпмасть те ун хыççăн хÿрине суллакаласах çÿрет. Карачăм ăна Муму тесе ят парать.

**Каçалапа.** Каçалапа ачасем сада выляма тухрěç. Сасартăк тěмсем хушшинче темěн чăштăртатрě, кăштăртатрě. Микулай чăтлăхалла тинкерсе пăхрě. Мěтри макăрма тытăнчě, чарăнчě те пăхать.

Тěмсем хушшинче темěн йăшăлтатать, йывăç тěмěсене темěн кускатать. Ачасем, сехěрленсе çитсе, куçěсене чарса пăрахрěç. Пěр самантлăха сасă-чěвě чарăнчě, шăпах пулчě, хурлăхан хушшинче шăрчăксем чăрăлтатни кăна илтěнет, унтан татах тěмсем хушшинче темěн чăштăртатни илтěне пуçларě.

— Эй, кам унта?—Тух!—тесе хыттăн кăшкăрчĕ Микулай.— Кам унта? Эй—тесе вăл, аллинчи пушшипе сулкаласа, малалла пĕр утăм ярса пусрĕ.

Вара ыттисем те хăйса çитрĕç.—Кам унта? Эй!—тесе кăшкăрчĕ Мĕтри те.—Эпĕ сана!—терĕ Микулай.

Тĕмсем хушшинче çывăхрах каллех темĕн чăштăртатрĕ. Ачасем шăпах пулчĕç, каялла чакрĕç. Хурлăхан турачĕсем хумханчĕç те, тĕмсем хушшинчен йытă сиксе тухрĕ.

— Хураçка! Хураçка!—тесе, харăссăн кăшкăрса ячĕç ачасем. Йытă ачасем патне хўрине вĕлтĕртеттерсе пычĕ.

**Ноябрьте**. Ĕнер çех вĕтĕ çумăр пĕрĕхетчĕ. Çил, çиллессĕн уласа, йывăççем çинчи юлашки çулçăсене тата-тата антарчĕ. Нўрлĕ, тĕттĕм, салху. Сасартăк пĕр каçра пĕтĕмпех улшăнчĕ.

Мамăк пек кăпăшка, йăлтăркка юр пирĕн килкартине, хўмене, Хураçка йăвине, сарай çине хулăммăн витсе лартрĕ. Çара çуна кўлнĕ кăвак лаша хапха умĕнче тăрать, кушак кухньăран чупса килет те ури çинчи юра силлет.

**Хăла лаша**. Якур хуларан тухнă чухне тĕттĕм пулнăччĕ. Хăла лаша çăмăллăн юртса пычĕ, çара çуни юр çинче шуни сисĕнмест те. Якур, çуна çинче выртса, чĕлĕм паклаттарса пырать. Яла çитесси пĕр виçĕ километр кăна юлнăччĕ.

Сасартăк хăла лаша хăлхисене чанк тăратрĕ, хартлатрĕ те ĕрĕхе пачĕ: вăл кашкăрсене туйнă иккен. Вĕсем уланине Якур та часах илтрĕ. Вăл чĕркуççи çине ларчĕ, тилхепине çавăрса тытрĕ те: „Чупсам хытăрах, лашам!“ — тесе пăшăлтатса пырать.

Акă кашкăрсем курăнчĕç, çитсе-çитсе, çывăхарса пыраççĕ... Вара Якур, аптăраса çитсе, пĕр тулли михĕ пăрахса хăварать. Кашкăрĕсем пĕр самантлăха чарăнчĕç, михĕ çине ыткăнчĕç те ăна таткалама тытăнчĕç, унта çимелли пулĕ терĕç имĕш, унтан татах çуна хыççăн чупрĕç. Çуна çинчен Якур тепĕр миххине те пăрахрĕ. Кашкăрсем каллех кăшт тăхтарĕç те татах хăвалама тытăнчĕç. Халĕ çуна çинчен нимĕн пăрахмалли те юлмарĕ ĕнтĕ.

Акă ял та çывăхра. Йытăсем вĕрни илтĕнет. Йытăсем вĕрни çывăхарнăçемĕн çывăхарса пырать. Акă укăлча та курăнать. Йытăсем сиксе тухрĕç, çынсем чупкалаççĕ. Хăла лашана кашкăрсем пыртан çаклатса илме ĕлкĕриччен çара çуна укăлчана вĕçтерсе кĕрсе кайрĕ. Хăла лаша хăй те çăлăнчĕ, Якура та кашкăрсем туртса çурасран çăлчĕ.

**Выçă кашкăрсем**. Хĕллехи сивĕ çĕр. Юр калпак тăхăннă чăрăшсемпе хырсем тĕлĕреççĕ, йĕри-тавра шăп. Нимĕнле сасчĕвĕ те илтĕнмест.

Мĕн-ха ку тата? Таçта инçетре салхун та вăраммăн улани илтĕнет. Акă тепри çавăн пекех сасă парать. Тата ыттисем те улама тапратрĕç.

Тĕм айне йăпшăннă мулкачсен чĕри сиксе тухать. Çывăхри ялта йытăсем çўçенчĕклĕн вĕреççĕ. Лашасем шиклĕн тулхăраççĕ. Кам юрри иккенне пĕлеççĕ вĕсем. Ку кăвак çăткăнсем—кашкăрсем апат шырама тухнă иккен. Вĕсем вăрман хĕррипе шăвăнаççĕ, хăлхисене чанк тăратса итлеççĕ, сăмсисемпе нăшлаттарса шăрш-

лаççĕ, хăйсем хушшинче пăшăлтатаççĕ. „Пăру çисе пăхсан аван пулĕччĕ!“ — тет çамрăк кашкăр, шăлне шатăртаттарса.

Кашкăрĕсем, шиклене-шиклене, çавăрăнса пăха-пăха, суллан-са пыраççĕ. Акă вĕсем ял патне йăпшăнса çитрĕç, сывлăша шăршласа пăхрĕç. Аван та аван шăршă кĕрет. Картана кĕрсе кайса ырă курасчĕ.

**Çуркунне вăрманта.** Хĕл вăрăма пычĕ, юр нумай пулчĕ, сивĕ тăчĕ. Халĕ ĕнтĕ хĕл ăсанчĕ те, çур çитрĕ. Вăл тӳрех сасартăк мар, майĕпе килчĕ.

Малтан ăшă хĕвел пĕчĕккĕн ачашлама тытăнчĕ, пĕлĕт сен-керленчĕ, хĕвел ăшшинче юр ирĕлме пуçларĕ. Кăшт тăрсан, урамсенче шыв шăнкăртатса юхма тытăнать.

Кунран-кун хĕвел ырми-канми ĕçлет. Акă ĕнтĕ тĕллĕн-тĕллĕн юр кайса пĕтрĕ, çĕр тухрĕ. Ак кунта çĕр çине симĕс курăк та тапса тухать.

Вăрманта хĕвеле ĕç çитет-ха: унта юр кĕрчĕсем тапранманпа пĕрех, вĕсене хĕвелтен яштак хырсем тата лапсака чăрăшсем хӳтĕлеççĕ. Анчах хĕвел сывăрмасть, пĕрмаях хăй ĕçне тăвать, хăй пайăркисене таçта та сапалать.

**Ир.** Эпĕ ирпе ирех вăрантăм. Хĕвел тин тухнă. Тӳпере пĕр пĕлĕт татăкĕ те çук. Йĕри-тавра ялтăртатса çеç тăрать. Эпĕ пысăк мар сада уçăлма тухрăм.

Ырă та иккен тулта! Кăвак тӳпере тăрисем юрлаççĕ. Эпĕ пуçри çĕлĕке хыврăм, савăнса кăкăр туллин сывласа тăтăм.

**Пăр кайни.** Эпĕ çуркунне сăртсем çинчен пăтранчăк шывсем вăркăннине пăхса питĕ киленеттĕм. Тата эпĕ вăл шывсене туяпа уçса яма юрататтăм. Пирĕн патăмăртан Белая шывĕ курăнатчĕ. Эпĕ пăр каясса тем пекех кĕтеттĕм. Юлашкинчен, эпĕ ĕмĕтленнĕ кун, кĕтнĕ сехет çитрĕ.

Эпĕ крыльца çинче, куç илмесĕр, талккăшпе пăр кайнине пăхса тăратăп. Пăр урлă каçакан çул та чылай анаталла юхса анчĕ ĕнтĕ. Акă пăр çинче такамăн ула ĕни чупкалать. Шыв çу-лĕ çыран хыçнелле пăрăнчĕ. Анлă пăр та ун çинче чупакан ула ĕне те курăнми пулчĕç.

Сасартăк юхса пыракан пăр çинче икĕ йытă курăнчĕç. Анчах вĕсем ванакан пăрсем тăрăх сике-сике çӳренинчен çынсем кул-чĕç кăна, никам та йытăсене хĕрхенекен пулмарĕ. Никам та йытăсем путĕç тесе шухăшламан та. Чăнах та, вĕсем часах типĕ çĕрелле тухрĕç.

**Тăрнасем килеççĕ.** Хăватлă, янăравлă, ылмашлă сасă пирĕн пуç тĕлĕнче илтĕнчĕ, кăшт тăрсан, çав сасă маларахра илтĕнчĕ. Шултăра вĕçен кайăксем (пурĕ вĕсем вунвиççĕнччĕ) виçкĕтес-ленсе, мăкăрăлчăк çунаттисене сайран çатлаттарса, вĕçсе пыраççĕ.

Мăйĕсемпе çунаттисене ярт тăсса, пĕсехисене мăкăртса, вĕсем тытса чарма çук вирхĕнеççĕ. Сывлăша хумхатса пыраççĕ. Çав таранччен çӳлте, чĕрчун пурăнман çĕрте, çавăн пекех хĕрӳ, вăйлă пурăнăç, нимене пăхăнман ирĕк пурри мана тĕлĕнтерчĕ.

Сывлăша çĕнтерӳллĕн çурса, тăрнасем малта ертсе пыракан юлташĕпе сайра-хутра сăмах хушкаласа илеççĕ, темĕнле мăнаç-

ląх, иксёлми шанчăк, пахалăх сисёнсе пычё тўпери пёлётсем патёнчи калаçура.

**Пушарта.** Пёр самантра çурта вут хыпса илчё. Урайсем шатăртатаççё, хёмсем сирпёнеççё, çунакан пёренесем ишёле-ишёле анаççё. Хёрлё çулăм пўрт тăрринче явăнать. Çынсем урама чупа-чупа тухрёç. Хёрарăмсем, çухăрашса, ăпăр-тапăрсем кăларма хыпаланчёç. Хёмсем варкăшса кăна тăраççё, ытти çуртсене вут хыпса илчё.

Пурте çакна курах кайрёç: çулăм хыпнă сарай тăрринче кушак чупкалать, ниçталла сиксе анма пёлмест. Кушака пур енчен те çулăм çавăрса илнё. Кушак, пулăшу ыйтса, хурланчăклăн макăрать.

Ачасем кушак ним тума аптăранинчен ахăлтатсах кулаççё. „Мёнрен кулатăр, шăпăрлансем!"—терё тимёрçё. Вăл çулăм хыпса илнё сарай çумне пусма лартрё те кушака çăлма хăпарса кайрё.

Кушак ун шухăшне ăнланчё те, васкаварлă тав тунă пек пулса, ун çаннинчен чёрнисемпе çатăрласа илчё.

Вут тата пăртак алхасрё те тамалчё. Кăмрăк куписем çёрлехи тёттёмре çулăмсăр ялкăшаççё; вёсем патёнче нимёнсёр тăрса юлнă çынсем çўреççё.

**Паттăрăн ёмёрне манми ёçё.** Нимёçсем яла йышăнса тустарнă та Мусса ятлă черкеса юнашар яла тусем хушшипе ăсатса яма хушнă. Мусса тăшмана тавăрма шут тытнă та килёшнё пек пулнă.

Ăна нимёçсем колонна умне тăратаççё те уттараççё. Ун хыççăн лашасем тупăсене, пулемётсене тата ытти хатёрёсене тиенё урапасене туртса, кёмсёртеттерсе пыраççё, симёс тумтир тăхăннă салтаксем йăшăлтатаççё. Мусса тусем хушшинчи кашни сукмаках, кашни тёпсёр çырманах витёр пёлсе тăнă.

Вăл пёр сăмах хушмасăр, каялла çавăрăнса пăхмасăр, малалла утса пынă. Пысăк симёс çёлен пек авкаланса пыракан колоннăран вăл йёрённё. Пёрре çех, колонна чуллă чăнкă ту çинелле улăхнă чух, юлашки хут хăйсен ялё çине çаврăнса пăхнă, унтан айлăм çинелле пăхнă та мăкăрланакан тăван ялёпе сывпуллашнă. Офицер ăна кăкăрёнчен таклаттарса, чышса илнё, пенсне кантăкёсене çиллессён чалкăштарса:

— Малалла!—тесе кăшкăрнă.

Урисене аран илсе пусса, Мусса каллех колонна умёпе утать. Анчах та вăл хăйён вăйё колоннăна тёпсёр çырма патне илсе çитермелёх çеç юлнине сисет. Унта мён пулё те мён килё, вăл пёр чарăнмасăр утать.

„Кёпер ишёлсе анса, тăшман тёпсёр çырмана сирпёнмесен те, çапах та ку шуйттансем пуçёсене çиеççех, вёсем партизансем аллине лекеççё",—тесе шухăшлать Мусса.

Салтаксем тепёр чăнкă çыран çине катмакланса хапарчёç, аялта тёпсёр çырма тата ун тёлёнче эрешмен карти евёрлё кёпере курчёç. Мусса офицера кёпере кăтартрё те васкаса аялалла утрё. Ун хыççăн кёмсёртетсе колонна тапранчё.

Тёпсёр çырма хёррине анса çитре те ватă горец, пёр чарăнса тăмасăр, кёпер çине кёрсе кайрё. Ун хыççăн офицер каптăр-

татса пырать. Хыҫалта тупă, лашасем, салтаксем сĕтĕрĕнеççе. Кĕпер айĕнче тĕпсĕр ҫырма, ун тĕпĕнче шыв палкаса юхать. Кĕпер, нимĕҫсем кĕрсе кайсан, кисренме пуҫларĕ, анчах тӳрех сирпĕнсе анмарĕ-ха. Мусса, колоннăран юлнă салтаксем кĕпер ҫине кĕрсе кайччăр тесе, тăхтарах утрĕ. Нимĕҫсем кĕпер урлă хăвăртрах каҫасшăн... Сасартăк темĕн сывлăша ҫурса шатăртатрĕ. Ҫĕрнĕ кĕпер тĕшĕрĕлсе анчĕ, тупă, салтаксем, пулемётсем, лашасем тĕпсĕр ҫырмана сирпĕнчĕҫ.

Кĕпер ванчăкĕсем, нимĕҫсем, вĕсен тупписем, лашисем, пурте кăпăкланса юхакан шыва чăмрĕҫ. Мусса та пуҫне хучĕ. Укнĕ чухне вăл пĕтĕм вăйпа кăшкăрса ячĕ, анчах ку хăранипе кăшкăрни мар, таврăма чĕнни пулчĕ.

**„Георгий Седов“ пăрҫĕмĕрен.** 1937-мĕш ҫулта „Георгий Седов“ пăрҫĕмĕрен инҫетри полярла ишеве тухса кайрĕ, анчах та инкек пулса тăчĕ: ăна пăрсем хĕстерсе лартрĕҫ. Темĕн пысăкăш пăрсем, парохода хĕстерсе унăн хӳрине аркатрĕҫ. „Седов“ тăван ҫĕршыва таврăнма пултараймарĕ, ун ҫывăхне урăх пăрҫĕмĕренсем те пыма пултарайман. Вара Арктикăна самолётсем вĕҫсе кайрĕҫ. Вĕсем „Седовăн“ пĕтĕм командине илсе тухрĕҫ, анчах та вуннилĕк паттăр моряк тата учĕнăй пăрҫĕмĕрен ҫинчен каясшăн пулмарĕҫ. Вĕсем „Седов“ ҫинчех юлчĕҫ.

Арктикăра карапа ҫӳреме ҫăмăл мар: унта хаяр шартлама сивĕсем тăраççĕ, ҫур ҫул хушши ҫĕр тăсăлать. Анчах та паттăр седовецсем нимĕнрен те хăраман. Вĕсем, ăшă тумтирсем тăхăнса, кулленех пăр ҫине тухнă. Тинĕс тарăнăшне, ҫил тата юхăм хăвăртлăхне, сывлăш тата шыв температурине виҫнĕ. Вĕсем нумай ĕҫленĕ, ĕҫрен пушаннă вăхăтра пăр ҫинче волейболла та вылянă, кĕнеке вуланă, юрланă, гитара та каланă.

Ҫапла „Седов“ карапа пăрсем икĕ ҫул ытларах юхтарса ҫӳренĕ. Акă, юлашкинчен, ăна юхăм Гренланди тинĕсне илсе тухать. Кунта пăрсем сахалтарах пулнă. Часах пирĕн правительство „Седов“ патне „Иосиф Сталин“ ятлă чи пысăк пăрҫĕмĕрене ярать. Ҫирĕп пăрсем пăрҫĕмĕрене малалла кайма чăрмантарнă, вăл ҫапах та „Седов“ патне ҫитнĕ. Ку пит савăнăҫлă тĕлпулу пулнă.

Темиҫе кунтан пăрҫĕмĕрен „Седова“ Мурманска илсе ҫитернĕ. Унтан седовецсем поездпа Мускава кайнă. Мускава ҫитсессĕн, седовецсем Кремльте хăнара пулнă, Сталин юлташпа калаҫнă.

**Перекопа илни.** 1920-мĕш ҫулхи кĕр. Крыма кĕнĕ ҫĕрте ансăр перешейкăра, авалхи ҫӳллĕ Тĕрĕк валĕ*) хыҫĕнче, Врангель баронăн шурă ҫар юлашкийĕсем окопсене кĕрсе ҫирĕпленсе ларнă. Шурă гвардеецсем вала темиҫе хут йĕплĕ пралукпа карказаса пĕтернĕ, пулемётсем лартса тухнă, хăватлă тупăсем лартнă. Хĕвеланăҫĕнчен ку вырăна залив хӳтĕлесе тăнă, хĕвелтухăҫĕнче Сиваш е ăшăк Ҫĕрĕк тинĕс выртнă.

Шурă гвардеецсем ҫирĕплетнĕ вырăна хирĕҫ Хĕрлĕ Ҫар полкĕсем тăнă. Вĕсем атака пуҫлама приказ кĕтнĕ.

Сивĕ те ҫумăрлă ҫĕр. Сиваш хĕрринчи окопсем патне темиҫе

*) Туроксем купаласа тунă укрепленисем.

юланут пырса чарӑнать. Салтаксем:—„Командующи кунта! Фрунзе юлташ килчӗ!"—тесе савӑнӑҫлӑн кӑшкӑраҫҫӗ.

Орудисем кӗмсӗртетме тытӑнаҫҫӗ. Шуррисем ҫӗре, шыва, пӗлӗте прожекторсемпе хыпашлаҫҫӗ. Акӑ пулемӗт такӑртатса илет те, пӗр саманта тавра шӑпах пулать.

— Хӗрлӗ салтаксем! Сире аслӑ Октябрь уявӗ виҫӗ ҫул тултарнӑ ятпа салам!—илтӗнет шӑплӑхра Михаил Васильевич Фрунзе сасси.

Хӗрлӗ салтаксем хастарлӑн „Урра!" кӑшкӑраҫҫӗ.

Ҫил тинӗселле вӗрнӗ. Вӑл Сивашри шыва хӑваланӑ. Ку шуррисем ҫирӗплетнӗ вырӑна тухма чи майлӑ ҫул пулнӑ. Фрунзе ку саманта пайтахчен кӗтнӗ. Вӑл кӗске шинелӗн аркисене чӗн пиҫиххи айне ҫавӑрса хӗстерет. Унтан хӑйпе юнашар тӑракан салтакӑн винтовкине илет те Сиваш патнелле чупса каять. Ҫакӑ атака пуҫламӗшӗ пулать.

Салтаксем хӑйсен командирӗ хыҫҫӑн Сиваша вирхӗнсе кӗрсе каяҫҫӗ. Артиллери орудийӗсем пылчӑк ӑшне кӗре-кӗре лараҫҫӗ, лашасем пӗтӗм вӑйпа туртсан та кӑлараймаҫҫӗ, паттӑр салтаксем ҫапах малалла шӑваҫҫӗ, орудисене те, лашасене те турта-турта кӑлараҫҫӗ. Винтовкине пуҫран ҫӳлелле тытса, Фрунзе ӑшӑх Сиваш тӑрӑх малалла утать.

Пин-пин салтак ҫӗрле Сиваш урлӑ пысӑк тертпе утать. Тӑхӑр километр хушшине—Сивашӑн тепӗр ҫыранне ҫитет. Шуррисем хӗрлисене мӗн тухнине персе тӑнӑ, анчах хӗрлисем малалла кӗнеҫемӗн кӗрсе пыраҫҫӗ. Ҫумӑр ҫунӑ пекех пуля тӑкӑнать. Атакӑна кӗнисем йӗплӗ пралука пуртӑсемпе, хачӑсемпе тата алӑсемпех те тата-тата пыраҫҫӗ.

Тӑшмана аркатаҫҫӗ. Хӗрлӗ Ҫар часах шуррисен Крымри юлашки позицийӗсене ҫӗмӗрсе тӑкать.

**Элекҫей „минисем".** Совет ҫарӗ Ворошиловград облаҫӗнчи Александрово ялне нимӗҫсенчен хӑтарнӑ. Нумай хуйхӑ-суйхӑ курнӑ фашистсенчен ял ҫыннисем. Вӗсем шкул ачи Элекҫей Иванов нимӗҫсене мӗнле сехӗрлентерни ҫинчен каласа параҫҫӗ.

Элекҫей нимӗҫ офицерӗсем иртнӗ ҫура куллен ҫырмана шыва кӗме ҫӳренине курнӑ. Ачасем шыва кӗме ҫӳреме тытӑнсан, нимӗҫ офицерӗсем вӗсене часах пӑшалпа пеме тытӑннӑ.

Элекҫей икӗ патефон пластинки тупать, вӗсенчен пралук кӑкарса ярать те сукмакӑн икӗ аяккине ҫаран ҫинчи курӑк ӑшне хурать. Сукмак ҫинче часах нимӗҫ офицерӗсем курӑнаҫҫӗ. Сасартӑк вӗсенчен пӗри кӑшкӑрса ярать: „Минӑсем! Минӑсем хунӑ!"—тет.

Сехӗрленсе ҫитнӗ нимӗҫсем каялла ыткӑнаҫҫӗ. Ялта сапӗрсем пулман, нимӗҫсем „минӑсене" пулемӗтсемпе те, автоматсемпе те ӑшалантараҫҫӗ кӑна, пластинкӑсем ҫурӑлмаҫҫӗ, ҫаплипех выртаҫҫӗ.

Нимӗҫсем ҫӗрле пуличченех пеме чарӑнман. Ҫӗрле Элекҫей хӑйӗн „минисене" пуҫтарса илет.

**Упа тытма.** Аслӑ та мӑклӑ шур ҫийӗпе сунарҫӑ йӗлтӗрпе пынӑ. Февраль вӗҫӗ, пур ҫӗрте те юр кӗрчӗсем. Шур ҫинче вырӑнӑн-вырӑнӑн вӑрман ӳсет. Сунарҫӑ йытти вӑрмана кӗрсе каять те йывӑҫсем хушшинче ҫухалать. Сасартӑк унта вӑл

ҫиллессӗн, хаяррӑн вӗре пуҫлать. Сунарҫӑ йытӑ упана тӗл пулнине тӳрех ӑнланса илет.

Сунарҫӑ аллинче пилӗк зарядлӑ винтовка пулнӑ, вӑл йытӑ вӗрнӗ ҫӗрелле чупать. Йытти юрпа витӗннӗ ҫатӑрка купи ҫине тарӑхса вӗрнӗ.

Сунарҫӑ шанчӑклӑ вырӑн йышӑнать те, йӗлтӗрсене уринчен хывса, хӑй таврашӗнчи юра таптаса такӑрлатать, пеме хатӗрленсе тӑрать. Нумаях кӗтсе тӑмӑ тивмест,—юр айӗнчен хура та сарлака ҫамкаллӑ пуҫ курӑнать, тӗксӗм симӗс куҫ йӑлтӑртатать, упа, тытакансем калашле, тискер кайӑкпа „паллашать".

Тӑшман ҫине пӑхса илнӗ хыҫҫӑн упа каялла кӗрсе пытанассине сунарҫӑ пӗлнӗ. Шӑтӑкӗнче пӑртак тӑнӑ хыҫҫӑн, упа сасартӑк сиксе тухать. Упа пуҫне каялла пытарса ӗлкӗриччен сунарҫӑ персе ярать. Васкаварлӑ тӗллени вырӑнлӑ пулайман: пульӑсем упан питҫӑмартине кӑна шӑйӑрса кайнӑ. Упа сиксе тухать те сунарҫӑ ҫине ыткӑнать. Упа ҫывӑхарсан, сунарҫӑ тепӗр хут персе ярать те, упи тӳнсе каять. Йытӑ упа вилли ҫине утланса ларать. Хӑй ҫине упа ыткӑннӑ хушӑра сунарҫӑ хӑрама, шикленме те „ӗлкӗреймен". Анчах та, хӑрушлӑх иртсе кайсан, ҫак ҫирӗп ҫын лӗпсӗрех ҫемӗҫсе кайнӑ. Унӑн куҫӗ-пуҫӗ хуралнӑ. Акӑ вӑл сивӗ сывлӑша кӑкӑр туллин лӑш сывласа илчӗ те йывӑр шухӑшсене сирсе ячӗ. Вӑл халӗ тин пысӑк хӑрушлӑх иртсе кайнине туйса илчӗ.

Пысӑк ҫӑткӑн тискер кайӑкпа тӗл пулса, хӑрана хыҫҫӑн пӗр шикленмен ҫыннӑн та ҫавӑн пек пулса иртет.

**Упа ҫури**. Энтри пӗчӗкҫӗ упа ҫури тытса килнӗ. Вӑл алса тулӗ пек кӑна пулнӑ. Ҫак чунлӑ алса тулӗ ытла та айванла ҫӳренӗ, хӑйӗн савӑк кӑвак куҫӗсемпе айванла пӑхнӑ.

Пӳлӗме лексен, упа ҫури пӗрре те именсе тӑман, вӑл хӑйне килти пекех тыткаланӑ. Вӑл васкамасӑр йӑлтах пӑхса ҫаврӑннӑ, мӗн килчӗ ӑна шӑршланӑ, хӑшне-пӗрне хӑйӗн хура урисемпе тӗккелесе пӑхнӑ, нимӗн те тӗлӗнмелли тупман.

Пӳлӗме манӑн сунарҫӑ-йытӑ йӑпӑшт кӗчӗ. Йытӑ часах халиччен курман тискер кайӑка туйрӗ, мӑйне тӑсрӗ, шӑртне тӑратрӗ, упа ҫури ҫине сиксе ларма тӑчӗ. Лешӗ кӗтессе шурӗ, кайри ури ҫине ларчӗ те хуллен ҫывӑхаракан йытӑ ҫине куҫӗсемпе ҫилӗллӗн пӑхрӗ.

Упа ҫури патне ҫитме пӗр ҫур аршӑн пек кӑна юлнӑччӗ, анчах йытӑ тапӑнма иккӗленсе тӑчӗ. Вӑл тата ытларах мӑйне тӑсрӗ, шӑршласа пӑхрӗ. Йытӑ йӑлипе, вӑл тӑшманне малтан шӑршласа пӗлесшӗн пулчӗ.

Ҫак самантра пӗчӗк хӑна сылтӑм урине ҫӗклет те йытта пӗрех ҫупса ярать. Самаях лекрӗ пулмалла, мӗншӗн тесен йытӑ нӑйкӑша-нӑйкӑша ывтӑнса кайрӗ. Намӑс курнӑ йытӑ хуллен кухньӑналла шурӗ.

**Вӑрмана шыв илни**. Аслӑ шыв варринчи пӗчӗк утрав ҫинче мулкач пурӑннӑ. Утрав таврашӗнчи пӑртан ҫырма шӑтӑртатса тасалнӑ.

Вăл кун мулкач тĕм кутĕнче лăпкăн çывăрнă. Хĕвел ăна ачашланă, çавăнпа вăл çырмана шыв тулнине туйман та. Тирĕ йĕпенсен тин вăраннă мулкач.

Сиксе тăрать—йĕри-тавра шыв. Шыв тулнăçемĕн тулса пырать. Мулкач утравваррине тарчĕ: унта шыв çитмен-ха.

Анчах шыв хăвăрт хутшăнса пынă. Утрав пĕчĕкленнĕçемĕн пĕчĕкленнĕ. Мулкач утравăн пĕр вĕçĕнчен тепĕр вĕçне сике-сике ўкнĕ. Çапла пĕр кун та пĕр çĕр иртнĕ. Тепĕр кунне утравăн пĕр кĕтессине кăна шыв çитеймен. Унта хăрма пуçланă туратлă йывăç ларнă. Мулкач ун йĕри-тавра чупкалать.

Виççĕмĕш кунне шыв йывăç патнех хăпарса çитрĕ. Мулкач аялти пысăк турат çине сиксе ларчĕ те шыв чакасса кĕтме пуçларĕ. Виçĕ кунтан шыв чакрĕ. Мулкач турат çинчен сиксе анчĕ.

# СОДЕРЖАНИ


Стр.

Учительсене . . . . . . . . . . . . . . . . . . . . 3

**Пĕрремĕш класс**

§ 1. Букварь тапхăрĕнче диктант çыртармалли материал . . . . . . . . 8
§ 2. Пысăк саспалли . . . . . . . . . . . . . . . . . . . —
§ 3. Сăмах вĕçĕнче „ь“ çырасси . . . . . . . . . . . . 10
§ 4. Вырăс чĕлхинчен кĕнĕ саспаллисене çырасси . . . . . . —
§ 5. Хупă сасăсем тата саспаллисем . . . . . . . . . . 11
§ 6. Пĕтĕмĕшпе аса илмелли ĕçсем . . . . . . . . . . . 13

**Иккĕмĕш класс**

§ 1. Аса илмелли ĕçсем . . . . . . . . . . . . . . . . 14
§ 2. Ыйтуллă тата кăшкăруллă предложенисем . . . . . . . 15
§ 3. Япаласене, вĕсен ĕçне тата паллисене пĕлтерекен сăмахсем . . . . . —
§ 4. Пайăр ятсене пысăк саспаллипе çырасси . . . . . . . 17
§ 5. Сăмах тĕпĕ тата аффиксĕсем . . . . . . . . . . . . 18
§ 6. Хытă сăмахсем, çемçе сăмахсем тата хутăш сăмахсем . . . . . —
§ 7. Çемçетекен палла „ь“ сăмах вĕçĕнче тата сăмах варринче çырасси . 19
§ 8. Хытă сăмахра „ç, ч“ саспаллисем умĕн „л, н“ сасăсем çемçе илтĕнеççĕ пулсан та вăл саспаллисем хыççăн „ь“ лартмасăр çырасси . . . 20
§ 9. Э, ю, я, е саспаллисене çырасси . . . . . . . . . . . —
§ 10. Ç, ч саспаллисем хыççăн хытă сăмахсенче „и“ илтĕнет пулсан та, ы çырасси . . . . . . . . . . . . . . . . . . . 21
§ 11. Уйăракан ъ, ь паллăсене çырасси . . . . . . . . . . —
§ 12. Ялан янăракан хупă сасăсем тата янăраман хупă сасăсем . . . . . 22
§ 13. Вăрăммăн илтĕнекен хупă сасăллă сăмахсем . . . . . . —
§ 14. Б, г, л, ж, з, о, ф, ц, щ саспаллисене çырасси . . . . . . 23
§ 15. Пĕтĕмпе аса илмелли ĕçсем . . . . . . . . . . . . —

**Виççĕмĕш класс**

§ 1. Аса илмелли ĕçсем . . . . . . . . . . . . . . . . 25
§ 2. Сăмах составĕ: ялан тĕп пулакан сăмахсенчен тĕпне тата аффиксне уйăрасси . . . . . . . . . . . . . . . . . . 26
§ 3. Пĕр тĕпрен пулнă сăмахсене çырасси . . . . . . . . . 27
§ 4. Хутлă сăмахсем . . . . . . . . . . . . . . . . . —
§ 5. Мăшăр сăмахсем . . . . . . . . . . . . . . . . . —
§ 6. Япала ячĕсем . . . . . . . . . . . . . . . . . . 28
§ 7. Япала ячĕсем вĕçленни . . . . . . . . . . . . . . —
§ 8. Аса илмелли ĕçсем . . . . . . . . . . . . . . . . 31
§ 9. „С“ сасă „ш“ сасă хыççăн тăнă чухне „ш“ сасă пек илтĕнни, „ç“ сасă хыççăн тăнă чухне „ç“ сасă пек илтĕнчи, ăна тĕрĕс çырасси . . . —
§ 10. „Лă“, „лĕ“ аффикслă паллă ячĕсене çырасси . . . . . . . 32
§ 11. Вĕреннине аса илмелли ĕçсем . . . . . . . . . . . . 33
§ 12. Пайăр ятсем . . . . . . . . . . . . . . . . . . . —

**Глагол**

§ 13. Хальхи вăхăтри виççĕмĕш сăпатри пĕррелле хисепри глаголсен -ать, -ет аффиксĕсем . . . . . . . . . . . . . . . . . 34

§ 14. Хальхи вăхăтри виççĕмĕш сăпатри нумайлă хисепри глаголсен -аççĕ,-еççĕ аффиксĕсем . . . . . . . . . . . . . . . . . . 36
§ 15. Хальхи вăхăтри иккĕмĕш сăпатри нумайлă хисепри глаголсене çырасси —
§ 16. Хальхи вăхăтри пĕреллĕ хисепри виççĕмĕш сăпатри пулманнине пĕлтерекен-масть,-мест аффикссем . . . . . . . . . . . . . . 37
§ 17. Иртнĕ вăхăтри глаголсенче икĕ „н" çырасси . . . . . . . . . . . 38
§ 18. Аса илмелли ĕçсем . . . . . . . . . . . . . . . . . . . . —
§ 19. Пĕрйышши членлă предложенисем . . . . . . . . . . . . . 40
§ 20. Ирĕклĕ диктант валли статьясем . . . . . . . . . . . . . . 42

## Тăваттăмĕш класс

§ 1. Япала ячĕсем камăнлăх аффиксĕсене йышăнни . . . . . . . . . . 47
§ 2. Аффикссем хушса япала ячĕсем тăвасси . . . . . . . . . . . . 49
§ 3. Паллă ячĕсем . . . . . . . . . . . . . . . . . . . . . . —
§ 4. Аса илмелли ĕçсем . . . . . . . . . . . . . . . . . . . . 51

## Местоимени

§ 5. Сăпатлă местоименисене тĕрĕс çырасси . . . . . . . . . . . . 53

## Глагол

§ 6. Аса илмелли ĕçсем . . . . . . . . . . . . . . . . . . . . 54
§ 7 Хальхи вăхăтри пĕреллĕ хисепри виççĕмĕш сăпатри глаголсене çырасси 55
§ 8. Хальхи вăхăтри нумайлă хисепри виççĕмĕш сăпатри глаголсем . . . 56
§ 9 Хальхи вăхăтри нумайлă хисепри пĕрремĕш сăпатри глаголсем . . . 58
§ 10. Хальхи вăхăтри виççĕмĕш сăпатри пĕреллĕ хисепри ĕç пулманнине пĕлтерекен глаголсем . . . . . . . . . . . . . . . . . . 59
§ 11. Хальхи вăхăтри нумайлă хисепри иккĕмĕш сăпатри глаголсем . . . —
§ 12. Иртнĕ вăхăтри глаголсем . . . . . . . . . . . . . . . . . 60
§ 13 Глагола аса илмелли ĕçсем . . . . . . . . . . . . . . . . 62
§ 14. Хисеп ячĕсем . . . . . . . . . . . . . . . . . . . . . . 63
§ 15. Наречисем . . . . . . . . . . . . . . . . . . . . . . . 64
§ 16. Хыççăмахсем . . . . . . . . . . . . . . . . . . . . . . 66
§ 17. Союзсем . . . . . . . . . . . . . . . . . . . . . . . . —
§ 18. Татăксем . . . . . . . . . . . . . . . . . . . . . . . . 67
§ 19. Пĕрйышши членлă предложенисем . . . . . . . . . . . . . 68
§ 20 Пĕтĕмлетӳ сăмахĕллĕ пĕрйышши членлă предложенисем . . . . 70
§ 21. Обращени . . . . . . . . . . . . . . . . . . . . . . . . 71
§ 22 Хутлă предложени . . . . . . . . . . . . . . . . . . . . 73
§ 23. Хутлă предложенисенче запятой лартасси . . . . . . . . . . 74
§ 24. Урăх çын сăмахлă предложенисенче чарăну паллисем лартасси . . . 75
§ 25. Пĕтĕмĕшпе аса илмелли ĕçсем . . . . . . . . . . . . . . . 77
§ 26. Ирĕклĕ диктант валли материал . . . . . . . . . . . . . . 86

КНИЖНАЯ ПАЛАТА
Чувашской АССР

Редактор *Н. Васянка.* Техн. редактор *Н. Степанов.*

НТ 00236. Объем 6,0 п. л. Заказ № 131. Тираж 5.000 экз.
Сдано в производство 17/I-1949 г. Подписано к печати 4/III-1949 г.

Типография № 1. Управления Полиграфпромышленности
при Совете Министров Чуваш. АССР.
*гор. Чебоксары, ул. Володарского.*

Цена 3 р. 70 коп.

СБОРНИК ДИКТАНТОВ

ПОСОБИЕ ДЛЯ УЧИТЕЛЕЙ
НАЧАЛЬНОЙ ШКОЛЫ

на чувашском языке

ЧУВАШГОСИЗДАТ
Чебоксары — 1949